К84.09(=Чув)
Л93
4-45859

ПИКЕ
БИБЛИОТЕКИ



*Альбина Любимова-Юрату*

# ЭПĔ САНА ЮРАТАТĂП

Сăвăсем,
новеллăсем,
калавсем

Национальная библиотека ЧР
4-045859

К84.09(=Чув)
Л93

«Пике» библиотеки
Вуннӑмӗш кӑларӑм

*Альбина Любимова-Юрату*

# Эпӗ сана юрататӑп

Сӑвӑсем, новеллӑсем, калавсем

84(2Рос=Чув)6-445-5
84.09(=Чув)6-4-5

Альбина Васильевна Любимова-Юрату Патăрьел районĕнчи Нăрваш-Шăхаль ялĕнче 1959 çулта çуралнă. 1982-мĕш çулта М. Ломоносов ячĕпе хисепленекен МГУри журналистика факультетне пĕтернĕ. Чăваш республикинчи Елчĕк районĕнчи «Колхоз ялавĕ» хаçатра корреспондентра ĕçленĕ, халĕ ЧР Экологи тата çут çанталăк ресурсĕсен Министерствинче аслă специалист пулса ĕçлет. 1992-мĕш çултанпа писательсен союзĕн членĕ. 1992-мĕш çулта «Вучах» хаçат библиотекинче «Каях, сыв пул» ятпа сăвă кĕнеки пичетлесе кăларнă.

«Эпĕ сана юрататăп»— А. Любимова-Юратун çĕнĕ сăввисемпе калавĕсен пуххи. Автор сăввисенче — Аслă Юрату: Çут çанталăка, Этеме чи таса та çутă туйăмпа сăнарлани.

КĔНЕКЕ СПОНСОРĔСЕМ:

Атнер Петрович Хусанкай — Чăваш Наци Конгресĕн президенчĕ.

Вячеслав Александрович Тимофеев — Тухăç кĕрешӳ мелĕсен Чăваш республикинчи ассоциацийĕн президенчĕ, Тĕрĕк халăхĕсен Ассамблейин президенчĕ.

Владимир Афанасьевич Никитин — «Амарат» пĕчĕк предприяти директорĕ.

Аркадий Павлович Айдак — Етĕрне районĕнчи (ЧР) «Ленинская искра» колхоз председателĕ.

**Сăввăмсене кун çути курма пулăшнăшăн спонсорсене пĕтĕм чун-чĕререн тав тăватăп. Кĕнекене спонсорсене халаллатăп. Автор.**

Проверено 9 СЕН 2017

Библиотека «Пике» № 4

**Альбина Васильевна Любимова-Юрату**

**Я ТЕБЯ ЛЮБЛЮ**

Стихи, новеллы, рассказы

На чувашском языке

Редактор **Р. В. САРБИ**
Художественный редактор **В. М. МИХАЙЛОВ**
Корректор **Р. В. БОРОДКИНА**

Сдано в набор 8.08.1993 г. Подписано к печати 24.01.1994. Формат 60×84¹/₁₆. Объем 4,2 уч. издат. лист. Заказ № 1701. Тираж 1000 экз. Цена подписки — 5 руб., в розницу — договорная. Индекс 78768

Типография № 1 Госкоминформпечати Чувашской Республики. 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

Ч-45859
Национальная библиотека Чувашской Республики

# Юрату — чун чирӗ

* * *

Вӗҫӗ-хӗррисӗр ырату...
Ырату ман тавра,
Ырату ман ăшра.
Ҫил-тăвăл пек
Килсе ҫапать.
Хумлă-хумлă хаяр тинӗс пек
Ҫавăрттарать,
Авăр пек
Тӗпсӗрлӗхе туртса
Анса каять.
Чуна тăрмалать,
Чуна ҫурать.
Чуна пушатать.
Ырату.
Ыратăва манас, тетӗп.
Ыратăва тăпăлтарса
Кăларас, тетӗп.
Пултараймастăп.
Манаймастăп.
Ҫивчӗ ҫӗҫӗ вӗҫӗпе
Суранăма пӗр вӗҫӗм чакалатăп.
Ыратăва канлӗх памастăп.
Лăплантармастăп.
Ырату тата та ытларах
Ыраттăр, тетӗп.
Вӗҫӗ-хӗррисӗр хăрушă ыратура
Юратăва шыратăп.
Ырату урлă тасалса
Ҫӗнӗрен ҫап-ҫут чунлă
Ҫуралма хăтланатăп.
Пултарайăп-ши?

* * *

Сан ятупа кун вӗҫӗнче
Хӗвеле канма ăсататăп.
Сан ятупа ҫӗр варринче

Ҫăлтăрсене саламлатăп.
Сан ятупа ир-ирех
Шуҫăма хăнана йыхăратăп.
Сан ятупа кунран-кун
Пурнăҫа кĕл тăватăп.
Илтетĕн-и?
Сан яту чунăмра чан ҫапать.
Туятăн-и?
Сан яту чĕремре йăва ҫавăрать.
Сисетĕн-и?
Сан яту ăшăмра кĕвĕ кĕвĕлет.
Пĕлетĕн-и?
Сан яту ман ятпа килĕшет...

* * *

Эпĕ телей сенкер тӳпе тĕслĕ тесеччĕ —
Йăнăшнă иккен.
Эпĕ телей ҫĕрпе сывпуллашан хĕвел тĕслĕ тесеччĕ —
Пĕлмен иккен.
Эпĕ телей ҫырмара ӳсекен йăмра тĕслĕ тесеччĕ —
Ăнланман иккен.
Эпĕ телей шăплăхпа киленекен роза тĕслĕ тесеччĕ —
Чухламан иккен.
Телей сан сăнлă иккенне
Сана курсан тин пĕлтĕм.

* * *

Эсĕ — юрă, юрă, юрă...
Пурнăҫăмри чи ҫепĕҫ,
чи асамлă,
чи илемлĕ
юрă!!!
Юррăма юрланăҫем
Хăпартланса юрлас килет.
Асамлăх тĕнчинче
Ĕмĕр-ĕмĕр пурнас килет.
Юррăм, тĕлĕнтермĕш
Юрату юрриҫĕм,
Ан сӳн эс нихҫан чунра!!!
Янра эс вăйлăн манра!!!

* * *

Эх, тепре анчах юратса курасчĕ.
Шур акăшăн тӳпере ярăнса вĕҫесчĕ.
Сĕтлĕ кӳлĕре хуркайăкăн чăмасчĕ.
Савнине ҫын ҫинче вăтанмасăр шырасчĕ,
Ун патне хăрамасăр утса пырасчĕ.
Улах вырăнта тĕл пулма чĕнесчĕ.

Кусӗнчен пӑхса йӑл-йӑл куласчӗ.
Пӗр ӑна савнине пытармасӑр каласчӗ.
Юрату симпылне савнипе ӗҫесчӗ.
Тӑн ҫухатиччен ӳсӗрӗлтересчӗ.
Ыранхи кун ҫинчен манса,
Вӑхӑта чарса лартса,
Юрату асамне тӑсасчӗ.

Эх, тепре анчах юратса курасчӗ!!!
Ним юлмиччен хӗмленсе ҫунасчӗ.
Телее ӑс-тӑнпа туйса юласчӗ.
Пушӑ чунпа кун кунличчен,
Юрату ырлӑхне туйса илесчӗ.

* * *

Эсӗ, эпӗ —
Ик сӑмах.
Эсӗ, эпӗ —
Тӗнче пуҫламӑшӗ.
Эсӗ, эпӗ —
Тӗнче тытӑмӗ.
Эсӗ, эпӗ
Тӗнче вӗҫӗ.
Эсӗ, эпӗ —
Ик сӑмах.

* * *

Чармарӑм сана, куҫҫулӗм, чармарӑм.
Калайман сӑмахсем ҫут ахах пулса юхчӑр, терӗм.
Чармарӑм сана, куҫҫулӗм, чармарӑм.
Хытма пуҫланӑ чӗрем ҫемҫелтӗр, терӗм.
Чармарӑм сана, куҫҫулӗм, чармарӑм.
Кӳтсе ҫитнӗ чунӑм ҫӑмӑллантӑр, терӗм.
Тӗрӗс турӑм, куҫҫулӗм, сана чармасӑр, тӗрӗс турӑм.
Тӑраниччен макӑртӑм та,
Канлӗн выртса ҫывӑртӑм.

* * *

Куҫҫулӗм, ик куҫӑмран шӑпӑртатса ан юх,
Савни ҫавах манӑн пулас ҫук.
Сассӑм, кӑкӑрӑмран чӗтренсе ан тух,
Савни мана ҫавах савас ҫук.
Чунӑм, ан ӗсӗкле савни килмен чух,
Савни нихҫан манӑн пулас ҫук.

* * *

Астăватăн-и? Хĕллеччĕ! Сивĕччĕ! Хĕвелччĕ!
Сив чĕпписем пит-куçа чĕпĕтетчĕç.
Янкăр кăн-кăвак тӳпере шурă хĕвелччĕ!
Пысăк куçлăскер, тулли сар питлĕскер!
Еплерех! Еплерех! вăл йăл-йăл çиçетчĕ!
Пĕр пирĕн çине савăнăçлăн тинкеретчĕ.
Астăватăн-и? Мĕн тери пире лайăхчĕ!
Çынсем таçта васкатчĕç пире тĕке-тĕке,
Иксĕмĕр, иксĕмĕр çеçчĕ çынсем хушшинче.
Хĕвел çап-çут шевлисемпе çăватчĕ,
Çут шевлесем питсене сĕртĕнетчĕç.
Аллăмсем сан çирĕп аллусентеччĕ,
Вĕрсе ăшăтаттăн шăннă пӳрнесене.
Юр пике пек тăраттăм эп именсе.
Иксĕмĕр, иксĕмĕр çеçчĕ çак çут тĕнчере!
Иксĕлми çепĕçлĕхчĕ ăшă куçусенче.
Хураскерсенче хĕвел шевли вăй вылятчĕ.
Астăватăн-и? Хĕвелччĕ! Сивĕччĕ! Хĕллеччĕ!
Астăватăн-и? Мĕн тери эпир телейлĕччĕ.

* * *

Сана кĕтме мĕн чухлĕ кирлĕ чăтăмлăх.
Пĕлместĕн эс çакна, анчах ку чăнлăх.
Сана кĕтсе вăхăта туйми пулатăп.
Вăхăт шелсĕр çухалать тĕпсĕрлĕхре.
Кашни самант пĕр пĕчĕк йĕрĕн
Юлать куç вĕçĕнче ман пит çинче.
Сĕм кантăк умĕнче сана кĕтме пит йывăр.
Чун сассăр ĕсĕклет, ăна ӳтре пит тăвăр.

Сана миçемĕш хут паян тӳрре эп кăларатăп,
Хам умăмра, хăв умăнта.
Тем пулчĕ пуль тесе эп шутлатăп.
Кулянатăп, кулянатăп, кулянатăп...
Чăтăмлăхăн та пур чикки,
Эп кантăк умĕнчен пăрнатăп.

* * *

Эс çук та,
Аллăмсем тунсăхлаççĕ,
Сана ыталама пултарайманран.
Эс çук та,
Тутам тунсăхлать,
Сана чуптума пултарайманран.
Эс çук та,
Куçăмсем тунсăхлаççĕ,

Сана пӗр вӗҫӗм курма пултарайманран.
Эс ҫук та,
Чӗлхем тунсăхлать,
Санпа калаҫма пултарайманран.
Эс ҫук та,
Чӗрем тунсăхлать,
Канăҫсăрланать,
Сан чӗрӳпе пӗрле тапма пултарайманран.

* * *

Шурă-шурă уй варринчи
Шурă хурăн пулăттăм.
Шур юр ларнă вуллăмсемпе
Хăлаҫланса илӗттӗм,
Сив ҫил килсе ҫапмассерен,
Ай-яй-яй, ай турах,
Тен, ун чух чунăм ҫăмăлланӗччӗ.
Шурă-шурă уй варринчи
Шурă хурăн пулаяс ҫук.
Ҫын пулса ҫуралнă та,
Хуйхи-суйхине чăтасах пулать.
Темле чунăм ыратсан та.

Шурă-шурă уй варринчи
Шурă йытă пулăттăм,
Сап-сар уйăх ҫине пăхса
Пӗр чарăнми ӳлӗттӗм.
Тӗттӗм пӗлӗт уйăха хупличчен.
Ай-яй-яй, ай турах,
Тен, ун чух чӗрем чикме чарăнӗччӗ.
Шурă-шурă уй варринчи
Шурă йытă пулаяс ҫук.
Ҫын пулса ҫуралнă та,
Хуйхи-суйхине чăтасах пулать,
Темле кăшкăрса йӗрес килсен те.

Шурă-шурă уй варринчи,
Шурă чечек пулăттăм.
Качча каяс пике пек
Капăрланса ларăттăм
Савни килсе татиччен.
Ай-яй-яй, ай турах,
Тен, ун чух ӗмӗтӗм пурнăҫланăччӗ.
Шурă-шурă уй варринчи
Шурă чечек пулаяс ҫук.
Ҫын пулса ҫуралнă та,
Туйăмсене сăнчăрлас пулать,
Темле юратас килсен те.

* * *

Каятăп, терĕм те,
Каях, темерĕн, сăмах чĕнмерĕн,
Куçна хупрăн.
Курса çеç юлайрăм
Шанчăк сÿннине.
Манатăп, терĕм те,
Манах, темерĕн, сăмах чĕнмерĕн,
Пуçна усрăн.
Туйса çеç илейрĕм
Тунсăх пуснине.
Тухса каясшăнччĕ,
Çитмерĕ халăм.
Манса каясшăнччĕ,
Пултараймарăм.
Юнашар пырса лартăм,
Сăмах чĕнмерĕм.

* * *

Юрату тĕнчине тарас килет.
Çак усал та хăруш тĕнчерен.
Юрату тĕнчинче пурнас килет,
Манса мĕн пур усаллăх çинчен.

* * *

Пуçăма кăкру çине хурам-и?
Куçăма хупса хама тăнлам-и?
Шăппăн тăр эс юнашар.
Туйăмпа киленме ан чар...

* * *

Ан шутла пĕр сана савать тесе,
Ан шутла пĕр саншăн çунать тесе.

Эп саватăп теприне,
Пĕр мана курас тесе,
Пĕтĕм ĕçне пăрахса,
Йывăр çулран хăрамасăр,
Пин-пин çухрăмран килекеннине.

Эп саватăп теприне,
Пĕр ман сасса илтес тесе,

Пин-пин çухрăмлă инçетрен,
Ниме пăхмасăр,
Никамран пытанмасăр,
Ман пата шăнкăравлаканнине.

Эп саватăп теприне,
Пĕр мана савăнтарас тесе,
Çĕклемĕ-çĕклемĕпе
Хĕрлĕ, сарă, кăвак, шурă
Чечексем парнелекеннине.

Эп саватăп теприне,
Пĕр манпа пулас тесе,
Çĕр çумĕнчен мана
Тĕк пек çăмăллăн йăтса илсе,
Пурнăç çулĕпе ӳркенмесĕр йăтаканнине.

Пурнах эс юнашар
Кăтартмăп чуна саншăн шар,
Ĕçле, ĕçле, тар юхтар,
Тен, кĕтсе илĕн эс тав
Мăнтарăн чăваш халăхĕнчен
Хăçан та пулсан,
Анчах пĕр эпĕ
Нихăçан та пулмăп сан...

* * *

Куçăм, епле эс чăтатăн
Ăна курмасăр?
Эпĕ сана ăнланмастăп.
Аллăм, епле эс тӳсетĕн
Ăна ачашламасăр?
Эпĕ сана ăнланмастăп.
Чĕрем, епле эс тапма
Хăятăн вăл аякра чухне?
Эпĕ сана ăнланмастăп.
Чунăм, епле эс чăтма
Пултаратăн вăл инçетре чухне?
Эпĕ сана ăнланмастăп.
Куçăм, пăрах та мана
Уттар ăна курма.
Аллăм, уйрăл та манран
Чуптар ăна ачашлама.
Чĕрем, сывпуллаш та манпа
Вĕç ун патне юнашар тапма.
Чунăм, уйрăл та ăссăр ӳтĕмрен
Кай ун патне пĕрле пулма.
...Ун чух тин сире ăнланăп,
Ăнланăп та, каçарăп.

* * *

Ӗнер анчах сан сассуна самантлӑха илтессишӗн
Эпӗ чӗрӗк ӗмӗре пама хатӗрччӗ.
Паян вара сан сассуна илтсессӗн,
Чунӑн пӗр хӗлӗхӗ те янрамарӗ.

Ӗнер анчах сана самантлӑха куç хӳрипе курассишӗн
Эпӗ çур ӗмӗре пама хатӗрччӗ.
Паян вара сана çывӑхранах курсассӑн,
Ӑшӑмра нимӗн те хускалмарӗ.

Ӗнер анчах санпа самантлӑха пулассишӗн
Эпӗ пӗтӗм ӗмӗре пама хатӗрччӗ.
Паян вара эсӗ манпа пулма килӗшсессӗн,
Кӑмӑлӑм пачах çаврӑнмарӗ.

* * *

Уйрӑлу,
Йывӑр-çке эс.
Уйрӑлу,
Йӳçӗ-çке эс.
Уйрӑлу,
Шелсӗр-çке эс.
Уйрӑлу,
Куççуль юхтаран эс.
Чуна пушатан эс.
Уйрӑлу,
Эс таврӑнми çухату.

* * *

Пурин валли те пур сан вӑхӑт.
Пурин валли тупан эс ӑш сӑмах.
Пӗр ман валли çук нихӑçан сан вӑхӑт.
Пӗр ман валли çук санӑн ӑш сӑмах.

Эс ялан таçта васкан.
Эс каллех такама шыран.
Пӗринпе тӗл пулан,
Тепринпе тӗл пулан.
Ӗçсем чи малтан ялан.
Ӑна тумалла, кӑна.
Ӑна курмалла, кӑна.
Ӗçсем, ӗçсем, ӗçсем.
Сана хупӑрлаç вӗсем.
Ӗçсем, ӗçсем, ӗçсем,
Вӗçӗ-хӗррисӗр вӗсем.
Ӗçсем, ӗçсем, ӗçсем,
Нихӑçан та вӗçленмӗç, пӗлсем.

Телефон трубкинче сан сассу:
— Ах, каҫар, пушă мар, ан ҫилен
Ман патра халь ҫынсем.
Систерсем хăв ҫинчен
Тепĕр ҫур сехетрен.
Ытла та нумай-ҫке паян ĕҫсем.

Тусусем валли йăлтăр куллу,
Тусусем валли ыр кăмăлу.
Пĕр манпа эс салху
Чунунта тарăху.

Эп каллех пĕччен,
Ҫывраймастăп ирччен.
Шухăшсем, шухăшсем сан ҫинчен.
Чунăма тăрмалать ырату,
Кирлĕ мар кун пек юрату.
Манасчĕ сана пĕрех хут,
Хăвăн ҫулупа эсĕ ут.

Пĕр эрне иртет, тепре.
Ак лăпланчĕ тинех чĕре.
Эп манатăп сана хуллен
Сăнару ирĕлет куҫ умĕнчен.

Умра ларан телефон ҫине
Эп пăхмастăп текех ҫиленсе.
Ăнланатăп: эс пушă мар,
Тĕлпулу шырама кирлĕ мар.

Ак тамаша! Хăв шăнкăравлатăн.
Сассу хумхануллă сан.
— Эс ăҫта ҫухалтăн?
Сана тахҫанах курман...

Тĕлĕнтермĕш ҫын эс, чăнах!
Сана та кирлĕ иккен ăш сăмах.
Манпа та час-час пулаймастăн.
Мансăр та пултараймастăн.

Чунăм, епле-ха эс ăнланмастăн,
Ĕҫсем вĕҫленмĕҫ нихҫан,
Чунăм, сиссе те юлаймăн
Мансăр тăрса эс юлан...

* * *

Ҫул варринче, шурă йăрăм ҫинче
Курак чĕппи ларать тăр-пĕччен.
Ăна паян амăшĕ хыт кӳрентернĕ.
Вăл кăштах ашкăннă, уншăн хĕненĕ.

### ХУШСА ЮРЛАМАЛЛИ:

Пӗчӗкҫӗ курак чӗппи,
Айван курак чӗппи,
Вӗҫсем хӑвӑртрах эс килне.
Пӗчӗкҫӗ курак чӗппи,
Айван курак чӗппи,
Аннў ӑнланнӑ хӑй йӑнӑшне,
Сана вӑл шырать хӗрхенсе.

Курак чӗппи чарса-чарса куҫне
Тӗлӗнсе сӑнать ҫут тӗнчене.
Ҫиллессӗн тӑратнӑ хӑй тӗкне.
Салху сассипе чӗнет амӑшне.

### ХУШСА ЮРЛАМАЛЛИ:

Чӗпӗ ҫумӗпех машинӑсем чупаҫҫӗ,
Курак чӗппине вӗсем курмаҫҫӗ.
Кустӑрмисем пысӑк та хӑрушӑ-ҫке.
Пӗчӗкскере ак! часах таптаҫҫӗ.

### ХУШСА ЮРЛАМАЛЛИ:

Ку пысӑк тӗнче ытла та шелсӗр,
Шелсӗр тӗнче калама ҫук нӗрсӗр.
Вӑйлисене пуҫ таять аванса.
Вӑйсӑррисене таптать тӗп туса.

### ХУШСА ЮРЛАМАЛЛИ:

Ӑнлансам, курак чӗппи,
Итлесем, курак чӗппи.
Ӑнсӑртран лекесрен кустӑрма айне,
Вӗҫсем хӑвӑртрах эс килне.
Пӗчӗкҫӗ курак чӗппи,
Айван курак чӗппи.
Аннў ывӑннӑ сана шыраса.
Йӑвара йӗрет татӑлса.

* * *

Астумастӑп, хӑҫан-ши эп санран сивӗнтӗм?
Кирлех-ши халь аса илме хӑҫан сивӗннине?
Пӗр кӗнӗ юханшыва тепӗр хут кӗреймӗн,
Пӗр ҫунса кӗлленнӗ кӑвайта текех чӗртеймӗн.

Пӗлместӗп, хӑш самантра санран эп писрӗм?
Кирлех-ши халь пӗлме хӑш самантра ютшӑннине?
Мӗн пулни-иртнине каялла тавӑраймӑн,
Кулянсан та, макӑрсан та нимӗн те тӑваймӑн.

Пĕлместĕп, хăш вăхăтра юрату çунатне хуçрĕ.
Ĕмĕт тĕнчинчен çылăхлă çĕр çине ӳкрĕ?
Çуначĕпе хупланса асаплăн йынăшрĕ?
Кирлех-ши халь аманнă çунатне сиплеме?
Ĕмĕт тӳпине тепĕр хут вĕçтерме?

Астумастăп, хăш вăхăтра юрату куçне хупрĕ?
Пирĕн чĕресенче ĕмĕрлĕхех вилчĕ.
Пирĕн чĕресенчен тупăк турĕ.
Кирлех-ши халь вилнĕскерне чĕртме?
Пĕр-пĕрне çĕнĕрен асап кӳме?

Пĕлместĕп, кам айăплă юрату вилнишĕн?
Эсĕ-и, эпĕ-и, е тепри?
Кирлех-ши халь айăплине шырама?
Пĕтĕм айăпа ун çине йăвантарма?

Чĕремĕрсенче çутă туйăм çавах чĕрĕлеймĕ.

* * *

Сана юратмастăп тесе,
Хама миçемĕш хут ĕнентеретĕп-ши?

Çавах ăна эп манăп тесе,
Хама миçемĕш хут эп хистеместĕп-ши?

Анчах хама хам улталанипе
Телейлĕрех пулатăп тетĕп-ши?

Хама хам суйнипе
Веçех хăй вырăнне лартатăп тетĕп-ши?

Сана юратмастăп тесе,
Хама улталатăп пулсан та,
Пĕр эсĕ çеç ман ĕмĕтре.

Сана манатăп тесе,
Хама суятăп пулсан та,
Пĕр эсĕ çеç ман чĕрере.

Апла пулсан кирлех-ши
Хама улталама?
Кирлех-ши çине-çинех
Хама суйма?

* * *

Эс аякра манран,
Ытла та аякра.
Çичĕ тинĕс леш енче,

Çичĕ утрав леш енче,
Çичĕ ту леш енче.
Эс аякра пулсан та,
Нихçанхинчен те çывăх халь мана.
Юратăвăм хĕрӳ кăвайчĕ сӳнес вырăнне
Хĕм саптарса çунать чунра.

* * *

Ăçта анчах эп пулмарăм,
Ăçта анчах эп çитмерĕм!
Çĕршер хула витĕр тухрăм.
Пиншер ялта йĕр хăвартăм.

Анчах хăть ăçта пулсан та,
Анчах хăть ăçта çитсен те,
Асран пĕр хула тухмарĕ.
Умра пĕр сăн ялтăрарĕ.

Туссем хаваспах йышăнсан та,
Ют çынсем тăван пек пулсан та,
Шухăшра эсĕ çеç, Шупашкар,
Ĕмĕтре эсĕ çеç, эс савни.

Чун савни пурнать Шупашкарта.
Чун савни кĕтет Шупашкарта.
Шупашкар, сан сăнлă чун савни.
Чун савни, сан сăнлă Шупашкар.

Шупашкарăм, савнă Шупашкар,
Манăн пурнăçăм эс, Шупашкар.
Ман юратăвăм эс, чун савни.
Çут телейĕм эсĕ, чун савни.

* * *

АЛЕКСАНДР МИНГАЛЕВА

Юлашки тĕл пулу, юлашки калаçу.
Юлашки калайман сăмахсем.
Юлашки йăл куллу, юлашки илĕртӳ
Манăçран тухас çук, эс пĕлсем.

Ан кала, ан кала сăмахсем.
Чĕрене çунтараççĕ вĕсем.
Сăмахсем — сăнăсем, сăмахсем — çĕçĕсем
Шанчăка вĕлелереççĕ, пĕлсем.

Юлашки чуп тăву, юлашки уйрăлу.
Юлашки ăнланман сăмахсем.
Юлашки хут сана эп калатăп, илтсем.
Эсĕ ман юлашки юрату.

Эс калан, эс калан сăмахсем.
Эп итлеп, эп итлеп вĕсене.
Сăмахсем — вулăсем, сăмахсем — туратсем,
Çакланма тăрăшан вĕсенчен.

Юлашки хут сана эпĕ килтĕм курма.
Сăнарна асăмра хăварма.
Юлашки йышăнман чи таса сăмахсем.
Илсе кайăп сире эп пĕрле.

Ан кала, ан кала сăмахсем.
Чĕрене çунтараççĕ вĕсем.
Сăмахсем — сăнăсем, сăмахсем — çĕçĕсем.
Шанчăка вĕлереççĕ, илтсем.

Чи таса юрату, чи хитре юрату.
Пурнăçра эс пулатăн пĕрре.
Чи таса юрату, чи хитре юрату.
Ĕмĕрле кун-çулна чĕрере.

Ан кала, ан кала сăмахсем.
Ан вĕлер, ан вĕлер шанчăка.
Шанчăкпа, шанчăкпа, шанчăкпа,
Пурăнма çăмăлрах, эс пĕлсем.

* * *

Ман сана пĕрре те курас килмест.
Сассуна пачах та итлес килмест.
Ах, ан итле мана,
Ах, ан ĕнен.
Юрату мар чĕлхемпе,
Кӳренӳ калаçать.

Ман санпа пачах калаçас килмест.
Ман санпа юнашар та тăрас килмест.
Ах, ан итле мана,
Ах, ан ĕнен.
Юрату мар чĕлхемпе,
Кӳренӳ калаçать.

Куçăмсене айккинелле тартатăп,
Чĕлхеме шăлăмсемпе çыртатăп.
Ах, ан çилен мана,
Ах, ан кӳрен.
Юрату мар чĕремре,
Кӳренӳ хуçаланать.

* * *

Сана куратăп та, чул пек хытса ларатăп.
Чул-шим эпĕ?
Сана аса илетĕп те, кусăмран çут куççуль шăпăртатса юхать.
Çумăр-шим эпĕ?
Санпа юнашар пырса тăратăп та, чунăм хумлăн-хумлăн хумханать.
Тинĕс-шим эпĕ?

* * *

Эп сана çыру çыратăп.
Пĕрремĕш хут хамах хăйса.
Сана пĕлтерме васкатăп.
Пурнăç шăвать малалла.
Кашни йĕркере эс вула:
«Эпĕ сана юрататăп».
Йĕрке хушшинче эс вула:
«Эп саншăн тунсăхлатăп».
Манăн сан пата çырас килет:
«Мана кирлĕ сан çепĕçлĕхӳ».
Аллăм тăрăшсах йĕрлет:
«Мĕнлерех сан ĕçӳ-хĕлӳ?»
Кашни йĕркере эс вула:
«Эпĕ сана кăмăллатăп».
Йĕрке хушшинче эс вула:
«Эп сансăр тунсăхлатăп».
Çырăва уçсан эсĕ вулăн
Ниме пĕлтермен сăмахсем:
«Уйăх паян карталаннă,
Çил ачипе выляç пĕлĕтсем».
Кашни йĕркере эс вула:
«Эпĕ сана саватăп».
Йĕрке хушшинче эс вула:
«Эп саншăн тунсăхлатăп».
Уççăн çырма вăтанатăп:
«Чунтан кăмăллатăп сана».
Эс ăнланасса шанатăп.
Хĕр чĕри çунать çулăмпа.
Кашни йĕркере эс вула:
«Эпĕ сана юрататăп».
Йĕрке хушшинче эс вула:
«Сансăр пачах пурнаймастăп».

* * *

Сан чĕрӳ таппине эп итлерĕм,
Пуçăма кăкăру çумне тытса,
Чĕрӳпе сăмахсăрах пуплерĕм,
Эс чĕнмесĕр тăрах шутласа.

Сан чӗрӳ мана пӗлтерчӗ
Хӑвӑрттӑн кӑкӑрунта тапса,
Сан чӗрӳ мана систерчӗ
Эс те маншӑн ҫунатӑн хыпса.

Сан чӗрӳ манпа калаҫрӗ
Пӗр эп ҫеҫ ӑнланан чӗлхепе.
Кӑкӑрунта тӑк-тӑк! вӑл тапрӗ
— Эп сана юрататӑп, тесе.

Чӗрӳ таппине эп итлерӗм
Хумханса, савӑнса, именсе,
Вӑл мана-ҫке, мана пӗлтерчӗ
— Пӗр сана юрататӑп, тесе.

Сӑмахпа калама вӑтанатӑн
Пӗр мана юратни ҫинчен.
Сӑмахна айкине эс пӑратӑн
Калаҫу куҫсан юрату ҫине.

Чӗрӳне пӗрех улталаймӑн
Юратас мар тесен те!
Чӗрене нихҫан та суяймӑн!
Чӗре те чӗрӗ-ҫке!

* * *

Хӗвел анать.
Тӳпере пин-пин кӗрен чечек ҫуралать.
Анӑҫ именсе хӗрлӗ тутӑрпа питне хуплать.

Хӗвел анать.
Тусан йӑсӑрлантарса кӗтӳ ял еннелле васкать.
Хыҫалтан кӗтӳҫӗ пушшине шарт! ҫапать.

Хӗвел анать.
Савнине кӗтме сар хӗр ял хӗрне чупать.
Хумханнипе чӗри кӑлт! кӑлт! тапать.

Хӗвел анать.
Тусан ҫинче ик йӗр юнашар юлать.
Пӗр-пӗрне итлесе ик чӗре савӑнса тапать.

* * *

Эпӗ саншӑн мӗнле тунсӑхланине
Хӗллехи шур уйӑхлӑ каҫ пӗлет...
Ан тунсӑхла, ан тунсӑхла,
Вӑл та сана юрататать.
Ура айӗнчи шур юр
Кӑчӑрт! кӑчӑрт! манпа калаҫать.

И-46869
Национальная библиотека
Чувашской Республики

Эпĕ саншăн мĕнле тунсăхланине
Пуç айĕнчи тĕк минтер пĕлет...
Ан кулян, ан кулян,
Вăл та саншăн тунсăхлать.
Шур кăмака хыçĕнчен
Чĕк-чĕрик! чĕк-чĕрик!
Шăрчăк сассине парать.

Сана чăтма çук курас килнине
Шăнкăрти юханшыв ăнланать.
Хумăн-хумăн çырана çапăнса,
Лăплансам, лăплансам! тет.
Тунсăхăма сирме тăрăшать.

Сана чăтма çук курас килнине
Хăвалăхри пĕр пĕчĕк шăпчăк ăнланать.
Чи хитре юррине юрласа
Канăçсăр чĕрене пусарать.

* * *

Çынсем çинче пĕр-пĕрне юттăн тытатпăр.
Пĕр-пĕрне кăмăлланине кăтартма вăтанатпăр.
Çынсем çинче пĕр-пĕрне юратнине пытаратпăр
Ниме пĕлтермен сăмахсемпе калаçатпăр
Кашни тĕл пулу юратуллă.
Кашни хускану юратуллă.
Кашни калаçу юратуллă.
Хамăр сисмесĕрех куçсем пĕр-пĕрне
Ăшшăн-ăшшăн сăнаççĕ.
Хамăр сисмесĕрех куçсем пĕр-пĕрне
Ачашшăн тыткăнлаççĕ.
Хамăр сисмесĕрех туйăмăрсем пире сутаççĕ.
Çынсене ухмах, тетпĕр-ши?
Çынсене куççăр, тетпĕр-ши?
Çынсене туйăмсăр, тетпĕр-ши?
Хамăра хамăр улталама тăрăшнишĕн,
Çынсене те улталатпăр тетпĕр-ши?!
Çынсем эпир пĕр-пĕрне
Савнине уççăн кураççĕ.
Кураççĕ те, шарламаççĕ.
Çынсем эпир пĕр-пĕрин патне туртăннине сисеççĕ.
Сисеççĕ те, сăмах чĕнмеççĕ.
Ирсерен тин çуралакан янкăр кун евĕр тап-таса пирĕн юратăвăмăр.
Хĕвел тухнă вăхăтра çурăлакан шур чечек евĕр чеп-черчен пирĕн юратăвăмăр.
Уйăхлă каçсенче пĕр-пĕрне ăшшăн-ăшшăн сăнакан çăлтăрсем евĕр çап-çутă пирĕн юратăвăмăр.
...Пĕтĕмпех ăнланса, каçарса, çынсем сăваплăн таяççĕ пуçĕсене
Илемлĕ юратăвăмăр умĕнче...

* * *

Мана йывăр чухне,
Хура шухăшсем,
Кăра шухăшсем,
Чунăмра тăвăл евĕр
Кĕрленĕ чухне,
Тем çинчен шутласа
Шурăмпуç киличчен
Асапланнă чухне,
Чунăма сиплеме,
Хурлăха пусарма
Эпĕ чĕнтĕм сана.
        Çук, илтмерĕн.
        Çук, килмерĕн.

Чĕреме чĕрĕ çиçĕм
Пайăн-пайăн пайланă чухне,
Куçăмран куççуль мар,
Юн тумлана чухне.
Чĕреме сиплеме,
Сăмахпа йăпатма
Эпĕ чĕнтĕм сана.
Кил умне тухса,
Сывлама хăраса,
Эпĕ кĕтрĕм сана.
        Çук, илтмерĕн.
        Çук, килмерĕн.

Тăвăла çĕнтерсен,
Чĕреме сиплесен.
Куççуле типĕтсен,
Кĕтнĕ телейĕм çитсен,
Телее çурмалла пайлама
Эпĕ чĕнтĕм сана.
Сукмак çине шур пир сарса,
Пĕтĕм ĕçе пăрахса,
Эпĕ кĕтрĕм сана.

        Темле чĕнсен те,
        Темле кĕтсен те,
        Эс илтмерĕн ман сассăма,
        Эс килмерĕн ман патăма.

Лăпкă пурăнас килет.
Юратăвăм, ан кӳрен мана,
Ман кăштах кăна сансăр,
Хам пурнăçпа пурăнас килет.

* * *

Юлашки хут ларар пĕрле кĕрекене,
Юлашки хут ĕçер пĕрле çул куркине,
Пĕр туйăмсăр кала мана эс:
«Тав сана»,
Пĕр туйăмсăр хуравлăп эп:
«Савсам мана».
(Ах, тур, çак сăмахсем халь те хумхантараç чуна).
Ним юлмиччен ĕçер тулли черккесене,
Унтан ӳпĕнтерсе лартар сĕтел çине.
Ан хăварсам черкке тĕпне эс çиллӳне,
Хăвпа пĕрле илсе кайсам теприн патне.
...Çул куркине часрах, часрах алла тытар,
Теприн патне часрах, часрах тухса эс кай.

* * *

ОЛЕГ МУСТАЕВА

Купăсçă, кăвайт леш енче эс ларатăн.
Ман çинчен куç илмесĕр купăсна эс калатăн.
Кăвак куçусем мана хумхатаççĕ,
Чĕремрен канăçа шелсĕр вăрлаççĕ.
Купăсçă, кĕртместĕп сана чĕреме, кĕртместĕп.
Купăсçă, кăвак куçусен хĕмĕнчен именетĕп.
Хĕлхем ачисем çӳлелле вĕлкĕшеççĕ.
Вилĕм ташшине сиксе ташлаççĕ.
Туратсене хĕрӳллĕн чуптăваççĕ.
Кĕл пуличчен вĕсене ытамлаççĕ.
Купăсçă, салху куçу мана тыткăнлать.
Купăсçă, çепĕç кĕввӳ чунăма çупăрлать,
Куçусен хĕмне тĕтĕм витĕр куратăп,
Куçусен тунсăхне чĕремпе эп туятăп.
Купăсна ан кала ман валли, ан кала,
Кĕввӳне евчĕ евĕр ан яр ман пата.
Купăсçă, кĕртместĕп сана чĕреме, кĕртместĕп,
Купăсçă, санран именсе эп пуçа пĕкетĕп.
Санран чĕреме çăрапа питĕретĕп,
Уççине çунакан кăвайта ывăтатăп.
Юрату вутĕнче эп хама куратăп,
Чĕремрен кĕл купи юласран хăратăп.
Купăсçă, кĕртместĕп сана чĕреме, кĕртместĕп,
Купăсçă, юрату ташши шелсĕрне эп пĕлетĕп.

* * *

Хăвала мана хăв çумăнтан, хăвала.
Хăваламасан,
Санран уйрăлса кайма вăйăм çук.
Кураймасăр тинкер куçăмран, тинкер.
Тинкермесен,
Куçăмсене айккинелле пăрма халăм çук.
Кӳрентер мана сив сăмахпа, кӳрентер.
Кӳрентермесен,
Сана савма пăрахаяссăм çук.

* * *

Сана куриччен
Пĕреххут курам мар,
Кăмăлăм çеç хуçăлать,
Сассуна илтиччен
Пĕреххут илтем мар,
Пĕтĕм ăс-тăн пăтранать.
Тĕлпулу шыриччен
Пĕреххут шырам мар,
Сăлтав шутласа пуç çаврăнать.

* * *

Эпĕ пĕчĕк айван лĕпĕшле
Пĕр вĕçĕмсĕр сан паталла вĕçетĕп.
Эсĕ шелсĕр, ним юлмиччен
Çунтарса яракан кăвайт иккенне курсах
Сан паталла вĕçетĕп.
Сана çак пурнăçра
Кирлĕ маррине пĕлсех
Пĕтĕм чунпа, чĕрепе
Сан паталла эп туртăнатăп.
Курса тăрсах курмăш пулатăп,
Пĕлсе тăрсах пĕлмĕш пулатăп.
Сасартăк хыпса илсе,
Хĕмленсе çуннă саманта
Туйса курассишĕн,
Ним юлмиччен çунса каясран хăрамасăр,
Эпĕ пĕчĕк вăйлă лĕпĕшле
Пĕр чарăнми, ниме пăхмасăр
Сан паталлах вĕçетĕп...

* * *

Эсĕ — ырату, ырату, ырату,
Чунăмри лăпланма пĕлмен юрату.
Вăхăт шелсĕр тытать уххине аллине,
Хыттăн туртăнтарать хирлӳне.

Çĕмрен-асаилӳ тĕллет ман енне.
Çулсем, кунсем витĕр вĕçет çĕмрен,
Йăнăшмасăр тупать хăй тĕлне.
Шелсĕр пырса тăрăнать чĕрене.
Ах, тур.
Чĕрем тин çеç синленĕччĕ суранне,
Ак каллех пуçларĕ йĕме куççульпе.
Эсĕ — ырату, ырату, ырату,
Чунăмри çеçке çурайман юрату.

* * *

Сарă хĕвел пулăттăм,
Ту хыçĕнчен тӳпене шуса тухăттăм
Тĕнчене сан валли сар тĕспе сăрлама.
Çут тĕнчере мансăр та сар хĕвел пур,
Ирсерен йăл çиççе тӳпене хăпарать,
Санăн чунра çеçке вăл çурать.

Сарă уйăх пулăттăм,
Сĕм çĕрле тӳпене шуса тухăттăм
Эс утан сукмака çутатма.
Çут тĕнчере мансăр та сар уйăх пур,
Тĕттĕм пĕлĕт хыçĕнчен шуса тухать,
Çитес çулна мансăрах çутатать.

Савнă мăшăру пулăттăм,
Сана ĕçрен кĕтсе илĕттĕм,
Юнашар пырса ларăттăм
Чунна çăмăллатса калаçма.
Савнă мăшăру мансăрах пур,
Сана чăтăмсăррăн вăл килте кĕтет,
Сана курсан, пыл-çу пек ирĕлет.

* * *

Эпĕ вăрă, вăрă, вăрă...
Ах, епле çавăрнать чĕлхем
Çапла калама хам çинчен.
Çавах пĕлĕр, пĕлĕр пурте —
Эпĕ вăрă, вăрă, вăрă...
Анчах эп ахаль вăрă мар,
Эп сăваплă вăрă.
Эп çынсен мулне вăрламастăп,
Эп шăпамран-хуçамран
Телей саманчĕсем вăрлатăп.
Вăл курман вăхăтра
Унăн кĕмĕл çӳпçинчен
Мерчен шăрçасем-телейсем шăхăртатăп.
Вĕсенчен васкаса мăй çыххи пухатăп.

Пĕр хăрамасăр ăна мăй çине çакатăп.
Мăнаçлăн, пуçа каçăртса, утатăп.
Ах, пĕлĕр, пĕлĕр, пĕлĕр!
Ах, курăр, курăр, курăр!
Эп вăрă иккенне пурте пĕлĕр,
Эп вăрă иккенне пурте курăр!
Пĕр именмесĕр, мана пӳрнепе
Тĕллесе вăрă теме ан хăрăр!
Эп вăрă, вăрă, вăрă!
Анчах эп ахаль вăрă мар,
Эп сăваплă вăрă,
Çавăнпа та мана, тархасшăн, ăнланăр,
Çавăнпа та мана, тархасшăн, каçарăр!

* * *

Ах, епле эп хăятăп,
Ĕмĕтленме сан çинчен!
Эс урăххин, урăххин, урăххин.
Ĕмĕтсене вутра çунтарăттăм,
Шывра путарăттăм,
Çакса вĕлерĕттĕм,
Шăтăк чавса пытарăттăм,
Шел, ӳчĕ те, чунĕ те çук вĕсен.
Эп айван, айван, айван.
Анчах юратас килет-çке,
Пылак туйăма астивес килет-çке!
Çавăнпа эп хăятăп
Ĕмĕтленме сан çинчен,
Пулин эс урăххин, урăххин, урăххин.

* * *

Хĕлле. Ирех паян çăвать шур юр.
Шур чĕнтĕрпе витет вăл çĕр питне.
Лапка-лапка вĕçет вăл, кур,
Тытсам юр пĕрчине шур лĕпĕш вырăнне.

Сана валли çăвать шур юр,
Мана валли ӳкет-çке хура юр.
Пĕр эпĕ çеç куратăп юр хуралнине.
Пĕр эпĕ çеç пĕлетĕп мĕншĕн иккенне.

Пурăнаттăмăр санпа тату.
Куçăмсенче çиçетчĕ юрату.
Хушăмăрта халь хура ту,
Чунра хуçа халь ырату.

Эп кураймастăп çак хура хĕле.
Эп ылханатăп çак хура çĕре.
Эпваскататăп çак хура хĕле:

«Хура куççулӳпе йӗре-йӗре
Кайсам часрах юхса тӗнче хӗрне».
...Эп паянтан кӗтеп çуркуннене...

* * *

Юрату пур! текенсене ӗненместӗм,
Хулпуççисене çеç хуллен сиктереттӗм.
«Мӗн тери пылак туйăм вăл!»,—
текенсенчен тӗлӗнеттӗм!
Кăшт кударах кусӗсене тинкереттӗм!
Юрату итлерӗ, итлерӗ те сăмахăмсене,
Шутларӗ пуль ӗнентерес-ха кăна тесе.
Юрату нумай кӗттермерӗ,
Сан сăнлă пулса чӗреме килсе шаккарӗ.
Чӗрем алăкӗ сассăр уçăлса,
Йышăнчӗ юратăва хапăл туса.
Юрату чӗреме хăвăрттăн таптарчӗ,
Юнăма вӗрилентерсе чуптарчӗ,
Юрату кунпа çеç çырлахмарӗ,
Асамлама пуçларӗ;
Юрату аллăмсене сӗртӗнчӗ,
Аллăмсем тӳрех çунатланчӗç,
Çӳл тӳпене вӗçсе хăпартăм,
Çӗрӗме çунатăмсемпе киленсе çупăрларăм.
Мӗн тери илемлӗ иккен тӗнче!
Юрату куçăмсене сӗртӗнчӗ,
Çав самантрах тӗнче улшăнчӗ.
Шап-шурă тӗспе сăрланчӗ!
Юрату урамсене сӗртӗнчӗ,
Урамсене пин хут вăйлăлатрӗ.
Утса мар халь, чупса çӳретӗп,
Чупса мар халь, вӗçсе çӳретӗп.
Эх, лайăх та иккен çӗр çинче пурăнма...
Тавах сана, юрату, ман пата килнӗшӗн.
Тавах сана, хăв пуррине ӗнентернӗшӗн.

* * *

Ыйтас пулсан манран:
«Мӗн чи илемли çак çӗр çинче?»
Тӳрех, тӳрех эпӗ калăп:
Юрату!!!

Ыйтсан манран:
Мӗн чи пылакки çак тӗнчере?
Пӗр пытармасăр хуравлăп:
Юрату!!!

Тархасшăн, ыйтсамăр манран:
«Мӗн чи вăйли тӗнче уçлăхӗнче?»
Нумай шутламасăр эп калăп:
Юрату!!!

Юратуран илемли нимĕн те çук çак çĕр çинче...
Юратуран пылакки нимĕн те çук çак тĕнчере...
Юратуран вăйли нимĕн те çук тĕнче уçлăхĕнче...
Эп хам юратма пĕлнишĕн савăнатăп.
Эп хам туйăмран хăрамастăп.
Эп хам туйăмпа мухтанатăп.
Тĕнче илтмелле пĕлтерме вăтанмастăп:
Пĕлччĕр, пĕлччĕр, пĕлччĕр пурте!!!
Эп сана юрататăп...»

* * *

«Эпĕ сана юрататăп».
«Эсĕ мана питĕ кирлĕ».
«Сансăр пачах пурнаймастăп».
Çак асамлă сăмахсене
Санран илтес тесе,
Çапса çăвакан çумăр витĕр,
Ишсе тухайми пылчăка çăрса,
Пиншер çухрăм сан пата эп хатĕр утма.
Вĕçĕ-хĕррисĕр Сахара пушхирĕпе
Эп пултарăп талпăнма сан пата.
Чăтма çук шăрăха чăтса,
Çунтарса хĕртекен хĕвелпе тавлашса,
Илмесĕр пĕр шыв тумламĕ ăша.
«Эсĕ кирлĕ, питĕ кирлĕ мана»,
Тесе çеç кала, пĕтĕм ĕçе пăрахса,
Шартлама сивĕрен хăрамасăр,
Урараи çапса ӳкерекен çил-тăвăлпа ăмăртса
Утăп тухса Антарктидăна.
«Тĕнче уçлăхĕн чиккинче тĕл пуласчĕ сапа»,
Тесен эс мана, никам вăл ăçтине
Пĕлмест пулсан та,
Тĕпсĕр уçлăхăн чиккине
Эп тупăп сан валли шыраса.
Тархасшăн, чĕнсем мана:
«Эс мана кирлĕ, питĕ кирлĕ»,
«Пурăнаймастăп сансăр пĕр самант та».
Сывлăш пек,
                  апат пек,
                              пурнăç пек,
Кирлĕ сан сăмахусем мана...

* * *

Эсĕ тинĕс леш енче,
Эпĕ тинĕс ку енче.
Хура тинĕс пире уйăрать.
Куç хупса илмеллĕх
Ман сана курасчĕ.

Ачаш çилĕн сĕртĕнесчĕ тутуна.
Мĕн тери курас килет сана!

Çырана çапăнаççĕ хумсем.
Чĕрене ытамлаç туйăмсем.
Тинĕс евĕр чунăм хумханать.
Куç хупса илмеллĕх
Ман сана курасчĕ.
Шыв пĕрчийĕн сĕртĕнесчĕ тутуна.
Мĕн тери курас килет сана!

Сансăр питĕ тунсăх.
Сансăр питĕ япăх.
Чăтаймастăп урăх эп уйрăлăва.
Куç хупса илмеллĕх
Ман сана курасчĕ.
Кусçуль тумламĕн сĕртĕнесчĕ тутуна,
Мĕн тери курас килет сана!

Пĕр самант та пурнаймастăп сансăр.
Тинĕс те, хĕвел те кирлĕ мар мана.
Ман пуласчĕ пĕр санпа кăна.
Куç илмесĕр куçна тинкересчĕ,
Хăвăртрах лекесчĕ çирĕп ытамна.
Юнашар пуласчĕ ĕмĕр санпала!

* * *

Эх, мĕншĕн асамçă мар-ши эпĕ?
Сан ятна çăлтăрсенчен çырăттăм,
Çӳл тӳпене çакса хурăттăм,
Курччăр çынсем эп сана епле савнине
Ăх, мĕншĕн арăмçă мар-ши эпĕ?
Сан ятна тинĕс хумĕсенчен çырăттăм,
Тинĕсе шăнтса лартăттăм,
Куртăр пӳлĕхçĕ эп сана епле савнине.
Ăх, мĕншĕн асамçă мар-ши эпĕ?
Сан ятна măн тусенчен çырăттăм,
Çĕр варрине вырнаçтарса хурăттăм,
Кур эс эп сана епле савнине.

Çын çеç эп, çавах тупăп мелне,
Сана еплерех савнине пĕлтерме çынсене.
Алла кĕсле тытса кĕслеçĕ пулăп,
Хуларан хулана, ялран яла чарăнми утăп.
Сан ятна мухтаса юрăсем юрлăп.

Çын çеç эп, çавах тупăп мелне,
Сана еплерех савнине пĕлтерме пӳлĕхçе,
Сан ятна шур пир çине тĕрлĕп,
Тăрăшсах чăваш кĕпи çĕлĕп,

Пӳлĕхçе хам пата хăнана чĕнĕп,
Пуç тайсах кĕпене парнелĕп.
Пĕр сана именĕп пĕлтерме савнине,
Куççене эп тартăп тĕл пулсан айккине.

* * *

Сан сăнару ялан куç умĕнче.
Сăнарна хăвалатăп: кай, кай, тетĕп.
Тĕнче йĕлемпе курма ан чăрмантар киленсе.
Мĕн чухлĕ ăна нумайрах хăвалатăп,
Çавăн чухлĕ вăл куç умне тухса тăрать.

Санăн яту ялан чĕлхе çинче.
Чĕлхеме вăрçатăп: ан кала, ан кала ятне, тетĕп.
Пурнăç çинчен калаçма ан чăрмантар туссемпе.
Мĕн чухлĕ нумайрах ăна вăрçатăп,
Çавăн чухлĕ вăл сан ятна калать.

Шухăшăмсем ялан пĕр сан çинчен.
Пуçăма тархаслатăп: ман ăна, ман, тетĕп.
Пурнăç иртнине те сиссе юлаймăп.
Мĕн чухлĕ ытларах пуçăма тархаслатăп,
Çавăн чухлĕ вăл пĕр сан çинчен шухăшлать.

* * *

Епле-ха эс мана çӳл тӳпере асăрхăн,
Енчен те эс хĕмленсе çунакан кăвайт пулсан,
Эпĕ вара сан мĕлкӳ пулма та тивĕçлĕ мар пулсан.

Манăн та сан пекех çут çăлтăр пулас килет,
Çӳл тӳпере ĕмĕр-ĕмĕр санпа юнашар йăлтăртатма...

Епле-ха эс мана çĕр çинче асăрхăн,
Енчен те эс хĕмленсе çунакан кăвайт пулсан,
Эпĕ вара сан хĕлхемӳ те пулма тивĕçлĕ мар пулсан.

Манăн та сан пекех хĕмленсе çунакан кăвайт
пулас килет,
Çĕр çинче санпа юнашар ĕмĕр-ĕмĕр пĕрле
хĕмленсе çунма...

* * *

Манăн пĕр вăхăтрах
Санăн хуçу тата тарçу пулас килет.
Хуçу пулса,
Санăн канăçна
Эсĕ тутлă тĕлĕксем курнă вăхăтра

Çĕр сывăрми,
Ыйхă мĕнне манса,
Сан çумăнта сыхлас килет!
Тарçу пулса,
Санăн ырлăхушăн
Кунĕн-çĕрĕн,
Халтан кайни çинчен манса,
Урaран ура иртми пуличчен,
Тар юхтарса ĕçлес килет.
Пĕр вăхăтрах
Санăн тарçу тата хуçу пулни
Мĕн тери пысăк телей пуль вăл!

* * *

Шурă-шурă хут илсе,
Çутă-çутă шухăша
Çырса хутăм хут çине.
Шурă-шурă пĕлĕтсем,
Шур кайăксем пулсамăр!
Çут ĕмĕтлĕ хут таткине
Савни патне çитерĕр!
Çутă-çутă туйăмăм,
Шурă-шурă сукмак пулса,
Тухса вырт савни умне.
Шурă-шурă сукмакпа
Савни çиттĕр кил умне.
Шур чĕнтĕрлĕ кĕрекери
Шур тĕрĕллĕ сĕтел панче
Шурă-шурă куркари
Шур кăпăклă сăрапа
Кĕтсе илĕп эп ăна.

* * *

МНЕ НРАВИТСЯ, ЧТО ВЫ БОЛЬНЫ НЕ МНОЮ.
МНЕ НРАВИТСЯ, ЧТО Я БОЛЬНА НЕ ВАМИ.
МАРИНА ЦВЕТАЕВА.

Эп чирлĕ санпа.
Сана курсан, чĕтреве эп еретĕп.
Куç-пуç хĕрелет, эп пуçа пĕкетĕп.
Сана курсан, санран именетĕп.
Санпа юнашар чĕтрет куç харши,
Чĕтреççĕ куçсем, чĕтреç пӳрнесем.
Ура айĕнче чĕтрет хура çĕр.
Санпа тĕл пуласчĕ кĕçĕр.
Анчах чĕтреç сăмахсем, сӳнет калаçу.
Ах, намăс-çке, хĕрпуçăн шырап тĕлпулу.
Эп чирлĕ санпа.
Çавах çак чир килĕшет мана.

Пылак-пылак туйăм вылянать чунра.
Пĕтĕм тĕнче çаврăнать ман тавра.
Эп чирлĕ санпа.
Кунĕн-çĕрĕн сан çинчен шутласа
Пуç çаврăнать! Апат анмасть!
Ăшăмра вара киленӳ хуçаланать.
Куçăмран куççуль юхтарать.
Эп чирлĕ, чирлĕ санпа.
Çак чиртен пачах чĕрĕлес килмест.
Манăн санпа ĕмĕр-ĕмĕр чирлес килет...

* * *

Эпир санпа пурăнакан
Пĕр пĕчĕк пӳлĕмри
Шап-шур çамкаллă кăмакара
Çунать хĕрӳленсе вут-шанкă.
Пăчă...
Тар пĕрчисем йăлтăртатаç
Куç харшисем çинче.
Çавах çак пĕчĕк пӳлĕмре
Иксĕмĕре ытла та сивĕ.
Хĕрсе çунан вут-çулăм
Пире ăшăтаймасть,
Çак пĕчĕк пӳлĕмре
Халь ютшăну хуçаланать...

* * *

Эс ытла та чăрсăр!
Эс ытла та сĕмсĕр!
Эс калама çук намăссăр!!!
Камран камран,
Санран кĕтменччĕ
Çак сив сăмахсене.
Пĕр сан валли
Эп хатĕрленĕччĕ
Чи ăш сăмахсене.
Сана юратнăшăн
Тĕнче мана каçармасса пĕлсе
Пĕр сан пата эп ăнтăлаттăмччĕ
Сарса тин ӳснĕ çунатăмсене.
Кала, кала сив сăмахна,
Эп хатĕр итлеме сана.
Илтме тем тĕрлĕ
Сăмахсем эп хăнăхнă...
Вĕлер, вĕлер пĕр шелсĕр
Вăй илеймен юратăва,
Кайран, вăхăт иртсен

Çӗр хут, пин хут
Йывӑр пулӗ ӑна куçне хупма.
...Мӗн тӑвас тейӗн?
Юрату пулать йӳçек тутӑллӑ та.

* * *

ЛЕНЯ ИВАНОВА,
Хазанкино ялӗ каччине.

Шӑнкӑр кӑна шӑнкӑр
Шыв юххи пек
Сассуна илтесчӗ.
Пурнӑç çинчен шӑкӑлтатса
Калаçса юнашар лараясчӗ.
Чунна çиен хурлӑхна пусарасчӗ.

Шӑнкӑр кӑна шӑнкӑр
Шыв юххи пек
Сассуна тек илтеймӗп,
Пурнӑç çинчен шӑкӑлтатса
Калаçса юнашар тек лараймӑп.
Чунна çиен хурлӑхна пусараймӑп.

Çамрӑках та çамрӑк пуçна
Хутӑн çамрӑкла,
Арӑмупа пӗчӗк хӗрне
Кайрӑн пӑрахса леш тӗнчене.
Леш тӗнчере лайӑхрах пулӗ терӗн-ши?
Леш тӗнчере çӑмӑллӑх шырарӑн-ши?
Леш тӗнчере канӑç тупӑп терӗн-ши?
Çывӑр, тусӑм, çывӑр
Тутлӑ тӗлӗксем курса,
Йывӑр тӑпру виттӗр
Çемçе мамӑк пек сана.

Такӑрлатнӑ сукмакпа
Сан пата çӑвана
Хӑнана пырса кайӑпӑр,
Асӑмӑрта сан сӑнарна
Ӗмӗр-ӗмӗр усрӑпӑр.
Сана тантӑш ура вӗçне
Шап-шур хурӑн лартӑпӑр.

Çывӑр, тусӑм, çывӑр,
Тутлӑ тӗлӗксем курса.
Сыхлӗ тутлӑ ыйхуна
Хурӑн пуç тайса.

* * *

Хытман-ха халь ман чун, хытман,
Хаярланман, усалланман.
Пĕчĕк ачалла кĕрен кантăк витĕр
Çут тĕнче çине тĕлĕнсе пăхма пĕлетĕп.
Хама чике тăршшĕ лартнине сиссех
Пĕчĕк ачалла суякана ĕненме пĕлетĕп.
Хама усал тунине манса
Хирĕç ырăпа тавăрма пĕлетĕп.
Ниме тăман япалашăн савăнса,
Ик аллăмпа шап-шап! çапса,
Каçса кайса кулма пĕлетĕп.
Хытман-ха халь ман чун, хытман,
Темĕн те куртăм пулсан та,
Темĕн те туйрăм пулсан та,
Темĕн пĕлетĕп пулсан та,
Пурнăçăм тимĕр аллисемпе
Питĕмрен пĕрре çеç мар
Çутăлтарчĕ пулсан та,
Пĕр чĕптĕм те чунăм чулланман.

* * *

Юх, юррăм, юх.
Тĕнче çийĕн çунаттусене
Çăмăллăн сарса,
Чунăмран шăранса,
Чĕремрен туптанса.
Юх, юррăм, юх...
Пĕр юрлама пуçланă юррăма
Вĕçне çитиччен юрласа пĕтермесĕр чарăнмăп...

* * *

Шутлатăп та,
Кăвак куçăмран куççуль юхать:
Пĕр ирхине
Ыйхăран вăранса куçа уçаяс çуккишĕн
Сар кун çутине урăх нихăçан та
Кураяс çуккишĕн,
Кăкăр туллин çăмăллăн
Çĕн кун килнишĕн
Савăнса сывлаяс çуккишĕн...

Шутлатăп та,
Чунăм ĕсĕклесе йĕрсе ярать:
Пĕр кунхине,
Симĕс курăк çине çар уран тăрса

Сар хĕвел енне аллăмсене тăсса
«Эпĕ пур» тесе çĕн куна саламлама
Пултараяс çуккишĕн,
Айлăмри çăл патне анса
Сипетлĕ тăп-тăрă шыва тăраниччен
Ĕçеес çуккишĕн...

Шутлатăп та,
Кус-пус хуралса каять:
Пĕр касхине
Тӳпере çут çăлтăрсем вăй вылянă чухне
Сар уйăх çуттипе киленсе,
Тăван кил енне
Васкамасăр ĕçрен
Пурнăç çинчен шутласа
Утаяс çуккишĕн,
Тивĕçĕме пурнăçланă хыççăн,
Çак çĕр çинче пурришĕн савăнса
Тăвар сапнă хура çăкăр чĕллине
Тăраниччен çиеес çуккишĕн...

Шутлатăп та,
Çан-çурăм сӳлетсе каять:
Пĕр кунхине
Юратнă ачамсене кăкрăм çумне пăчăртаса
Вĕсен телейпе тулнă куçĕсене тинкерсе
Пуçĕсене ачашласа
Шăлаяс çуккишĕн,
Чун суйласа илнĕ çыннăмпа
Шăкăл-шăкăл юнашар калаçса
Лараяс çуккишĕн...

Шутлатăп та,
Шутлам мар пĕрех хут ним çинчен те
Пурăнам паянхи сар куншăн хĕпĕртесе.

* * *

Шурă юр çăвать.
Шурă юрă хывать.

Симĕс çулçă çурăлать.
Ешĕл юрă çуралать.

Çутă тумла тумлать.
Çутă юрă янăрать.

Шăнкăр-шăнкăр шыв чупать.
Сенкер юрă юхать.

Сарă çулçă тăкăнать.
Сарă юрă ян каять.

* * *

Усал,
Эсӗ паян ҫӗнтерӳҫӗ!
Кул, кул, манран кул!
Ахӑлтатса,
Варна тытса кул!
Кӑҫусене хаяррӑн ҫиҫтерсе,
Хӑв ҫӗнтерӳҫине туйса тӑрса
Аслатиллӗ сассупа янрат таврана.
Эпӗ вара,
Ыран та хӗвел тухасса шанса,
Хӑрамасӑр тинкерӗп куҫна,
Чӗтремесӗр итлӗп куллуна.

* * *

Синкер, сана хӑвалаҫҫӗ.
Сана кураймаҫҫӗ.
Синкер, сана хурлаҫҫӗ.
Сана вӑрҫаҫҫӗ.
Синкер, сана тарӑхаҫҫӗ.
Сана ылханаҫҫӗ.
Ҫавах
Тавах сана, синкер,
Эс ҫак тӗнчере пурришӗн.
Сансӑр
Ҫынсем нихҫан та
Чӑн-чӑп телей
Мӗн иккенне
Пӗлеймен пулӗччӗҫ...

* * *

Чунӑм — пӗве.
Тумламӑн, тумламӑн
Тулать пӗве туйӑмпа.
Ҫутти, хури,
Пылакки, йӳҫҫи,
Хуранри сиксе вӗрекен шыв евӗр,
Пӑтранаҫҫӗ чунӑмра-пӗвемре.

Тумламӑн, тумламӑн,
Тулнӑ пӗве
Часах кайӗ татӑлса,
Хӑй ҫулӗ ҫинче веҫех аркатса
Туйӑмсен сикки юхӗ малалла.
Ан тӑр умӑмра,
Пулӑн аяла...

* * *

Хăрушă-çке!
Ах, мĕн тери хăрушă!
Кĕтмен-туман самантра
Тĕнче кайрĕ пайланса çурмалла:
Хыçалта тĕттĕмлĕх,
Малта тĕтреллĕх.
Ик тĕнче чикки çеç
Çивĕч çĕçĕ вĕçĕ евĕр
Тăрать çуталса.
Куçа йăмăхтарса,
Шартарса.
Эп тăратăп иртнипе
Малашлăх чиккинче аптраса.
Хăратăп, хăратăп утăм тума.

Ик тĕнче чиккинче çухатрăм хама.
Пĕлместĕп, мĕнле халь пурăнмалла.

* * *

Мĕн чи хакли çак çĕр çинче?
Çын пурнăçĕ чи хакли çак çĕр çинче...
Мĕн чи йӳнни çак шелсĕр тĕнчере?
Çын пурнăçĕ чи йӳнни çак шелсĕр тĕнчере...

* * *

«ЫР СĂМАХ КАЛАМА АН ӲРКЕНĔР...»
РАИСА САРПИ

Ыр сăмах каласси —
Суха тăвасси мар.
Ыр сăмах каласси —
Тырă акасси мар.
Ыр сăмах каласси —
Çăкăр пĕçересси мар.

Ан вăтанăр ыр сăмах калама.
Ан хăрăр ыр сăмах калама.
Ан ӳркенĕр ыр сăмах калама.
Васкасамăр ыр сăмах калама.

Ыр сăмах ӳксе çухалмĕ çĕр ăшне.
Шевлен-шевлен çăвăнĕ çын чунне.
Ылтăн чăмаккин ӳкĕ ал тупанĕ çине.
Саркайăкăн шăрантарĕ çепĕç юррине.
Çут çăлтăрăн ялтăрĕ сĕм каçхине.
Ыр сăмах ӳксен те çĕр ăшне.
Тухĕ тӳрех сар чечекĕн шăтса.
Ларĕ таврана ыр шăршă сарса.
Пĕчĕк хĕвелĕн ăшăтĕ сан чунна.
Ыр сăмах калани —
Çын кăмăлне хăпартни.

Ыр сăмах калани —
Çынра шанчăк çуратни.
Ыр сăмах калани —
Çынна савăнăç кӳни.
Ыр сăмах калани —
Çынна телейлĕ туни —

Çынна ырă туни,
Çынна телейлĕ туни,
Çынна телейлĕ туни,
Хăв та телейлĕ пулни.

**Людмила Пигаваевăна, ачалăхри тусăма.**

* * *

Ыр сăмахсем каласа йăпат.
Сан патран тухса утам
Çăмăлланнă чунпа.
Хурланмасăр пурăнам
Тепре кӳрентериччен сив сăмахпа.

Йăпат мана, тусăм, йăпат.
Ним çукран, ăнсăртран,
Ал айне пулнăран,
Сив сăмахпа кӳрентерчĕç мана паян.
Хуçрĕç кăмăла çурмалла.

Йăпат мана, тусăм, йăпат.
Пуçăма кăкру çине хурам,
Ик аллăмпа питĕме хуплам.
Хĕрхеннĕ евĕр пĕчĕк хĕрачана
Йăпат пуçăма аллупа шăлса.
Хуллен пăчăрта хăв çумна,
Хулпуççи çине васкамасăр хур аллуна.

Сиксе чĕтрекен хулпуççисем
Чарăнччăр чĕтреме.
Сассăр ĕсĕклен чунăм
Чарăнтăр йĕме.

Ик аллупа тыт та питĕме
Йӳçĕ куççуль тумламĕсене
Чуп ту типĕте-типĕте.

Йăпат мана, тусăм, йăпат.
Кам-ха мана йăпатĕ,
Эсĕ те йăпатмасан?
Кам-ха мана ăнланĕ,
Эсĕ те ăнланмасан?

Йăпат мана, тусăм, йăпат.
Çепĕç сăмахсем каласа йăпат.

* * *

Чуна итлесе пăхас тесеттĕм,
Чун кĕвĕ мар иккен.
Чуна тытса курас тесеттĕм,
Чун ылтăн мар иккен.
Чуна куçпа курас тесеттĕм,
Чун хĕвел мар иккен.
Чун чĕлхесĕр,
Чун ӳтсĕр,
Чун тĕссĕр.
Чун чĕлхесĕр пулсан та,
Калаçма пĕлет.
Чун ӳтсĕр пулсан та,
Ыратма пĕлет.
Чун тĕссĕр пулсан та,
Çуталма пĕлет.
Чун туйăмлă!
Чун сисĕмлĕ!
Чун кăмăллă!
Чун халаллă!
Чун вăл чун...

# Мана никам, нихçан сан пек чуп туса курман...

## ПРОЗĂЛЛА СĂВĂСЕМ

Мана никам, нихăçан сан пек чуп туса курман. Туту тутана çепĕç-çĕн ĕлкĕрчĕ çеç перĕнсе, пĕтĕм ӳтпе илтĕм тутлăн çӳçенсе. Чунăм пут-рĕ туйăм тинĕсне, ишрĕ пылак хумсем çийĕн киленсе.

Аллусем мана ыталаççĕ, аллăмсем сана ыталаççĕ. Эс ман ытамра, эпĕ — сан ытамунта. Пĕтĕм тĕнче халь ман ытамра. Эп халь хам та Турă сан çумăнта.

Тăнлавăмсенче икĕ пĕчĕк чĕре тапаççĕ тухса тарасла ирĕке. Тута-сен сассăр калаçăвĕнче эп илтрĕм вăрттăн сăмахусене — мĕн таран эс мана савнине.

Эс мана чуп турăн васкамасăр, вăраххăн, пылакăн-пылакăн, ачаш-шăн-ачашшăн, илемлĕн-илемлĕн, пĕрименсе, пĕр хĕрӳлленсе. Никам нихăçан чуп туманла, никам нихăçан чуп тума пултарайманла. Эс мана чуп тунă самантра асамлăх тĕнчинче чунăмăрсем çӳрерĕç вĕçсе, юрату тĕнчинче калама çук лайăх пулчĕ вĕсене. Ĕненмесĕр телей асамне, ик пĕчĕк лĕпĕшĕн вĕл-вĕл вĕçрĕç вĕсем сар чечек çинчен сар чечек çине. Ик пĕчĕк юр пĕрчи пĕр-пĕрне хăвалаласа ӳкрĕç тӳперен çĕр çине, çак-ланса шур хурăн тăррипчен, ик пĕчĕк кăпăшка пĕлĕтĕн чу-чу! ярăнчĕç ларса турат çине, унтан ик пĕчĕк çут тумламăн çулçă çинчен çулçă çине сиксе çухалчĕç ешĕл курăк ăшĕнче...

Чăнах, мана никам, нихăçан сан пек чуп туса курман...
...Сан тутун ачаш сĕртĕнĕвне эп халь аса илсе пурнатăп.

* * *

Парнеле мана хăв тĕлĕкне, эп сана парнелĕп хамăнне.
Паянхи тĕлĕке нихçанхинчен те вăйлăрах парнелес килет-çке чун савнине. Паянхи пек тутлă та шутсăр лайăх тĕлĕк тĕлленмен эп ĕмĕрне. Пурнăçра пулма пултарайманнине куртăм эп тĕлĕкре.
Тĕлĕкре эп сана ачашларăм вăтанмасăр пĕр чĕптĕм те.
Тĕлĕкре эп сана чуп турăм манса сăпайлăх пурри çинчен: санăн ӳтне, хура куç харшисене, вăрăм пӳрнӳсене, çĕмĕрт куçусене... Санăн ӳтӳ хĕреслене-хĕреслене калаçрĕ ман ӳтĕмпе. Пылак хумсем чупрĕç хумлăн-хумлăн çӳçентерсе пĕтĕм ӳт-пĕвĕме.
Тĕлĕкре эп пултăм санăн, эсĕ — манăн.
Парнелерĕм сана ним юлмиччен хама, эпир пултăмăр пĕр чăмакка.
Эс парнелерĕн мана тĕнче уçлăхне, çут хĕвеле, çăлтăрсенчен пухнă чечек çыххине, чи ăшă та чи çепĕç сăмахусене. Киленӳ çупăрларĕ пире, ирĕлтĕмĕр пылаккăн пĕр-пĕрин ăшĕнче.
Парнеле мана хăв тĕлĕкне, эп сана парнелĕп хамăнне.
Тĕлĕкӳнте те пулсан туйтарса кăтартас килет ман сана эпĕ мĕн туйнине...

* * *

Сана валли чи çепĕç сăмахсем пухма пĕр илемлĕ ир, тул çутăлнă çутăлман, тĕнчене тухса кайрăм. Ялтан тухсан, уй варрине çитсен, пĕтĕм тĕнчене сывлăх сунса пуç тайрăм, пулăшу ыйтрăм. Тин çеç вăрман хыçĕнчен шуса тухнă хĕвел, тулли кăмăлпа, шевлисемпе çĕр питне ăшшăн чуптуса илсе, йăл-йăл кулса, сана ман ылтăн хĕвелĕм теме сĕнчĕ. Таçта çӳл тӳпере вĕçекен тăри те сассине пачĕ: ман тăриçĕм те, терĕ. Сип-симĕс тум тăхăннă вăрман хĕрринче ӳсекен шап-шур çеçкене ларнă çĕмĕрт сана ман çĕмĕртĕм теме сĕнчĕ. Уçланкăра ăшă çил ытамĕнче савăнса чӳхенекен кăн-кăвак куçлă çеçпĕлсем сана çеçпĕлĕм теме ан ман, терĕç. Шухă çил ачиййĕ вăшт! çеç вĕçсе пырса, хăлхамран пăшăлтатрĕ: ман çурхи çилĕм теех савнине. Турат çинче кăпăшка хӳрине сулкаласа вылякан пакша йăпăр-япăр! йывăç вулли тăрăх чупса анчĕ, хулпуççи çине сиксе ларчĕ те, пакшаçăм, ман пĕчĕкçĕ пакшаçăм теме хушрĕ сана.
Симĕс çулçăм, ешĕл курăкăм, çамрăк хунавăм, инçет çăлтăрăм, шăпчăк чĕппиçĕм, çинçе туратăм, шăнкăр-шăнкăр юханшывăм, шурă-шурă мамăк пĕлĕтĕм, кăвак тӳпеçĕм, мăнаçлă юманăм — илтĕнчĕ йĕри-тавраран. Пĕтĕм тĕнче тăрăшсах сан валли чи лайăх та чи хитре сăмахсем пухма пулăшрĕ мана. Пĕтĕм тĕнче, ача куççӳлĕ пек, тап-таса та, паккаран тин çурăлса тухнă çулçă пек, черчен юратăвăм умĕнче пуçне тайрĕ, телей пиллерĕ.
Кун каç енне сулăнсан, пĕр çĕклем чи ачаш та чи çепĕç сăмахсем йăтса таврăнтăм сан пата...

* * *

Çĕмĕрт куçунта тунсăх.
Туту хĕрринче хурлăх.
Чĕрӳнте салхуллăх.

Сан çĕмĕрт куçунта савăнăç çутине чĕртес тесе мĕн тăвас-ши манăн?

Телейĕмпе çиçекен куçăмсем тунсăхна сиреееççĕ пулсан, илсем куçăмсене...

Сан туту йăл кулăпа ирĕлтĕр тесе мĕн тăвас-ши манăн?

Тутам хĕрринче пытаннă телейĕм хурлăхна пĕтереет пулсан, ил тутама...

Хурланнă чĕрӳ хаваслăхпа тулса вăйлăн таптăр тесе мĕн тăвас-ши манăн?

Телейĕмпе тулса ларнă чĕрем салхуллăхна пусăрăнтараять пулсан, ил чĕреме...

* * *

Чул, темле чуллă чĕреллĕ пулсан та, вăл та чăтаймасть тумла юратăвĕ умĕнче — парăнать.

Çут тумла тумлать, тумлать те чул чĕри çине, çурать ăна çурмалла.

Санăн чĕрӳ епле хытă пулсан та, эсĕ те чăтаймăн ман юратăвăм умĕнче — парăнăн.

Юратăвăм ачаш сăмахсем калĕ, калĕ те сана, çемçетĕ сан чĕрӳне.

* * *

Ах, ан ĕçтерĕр мана эрех, эп ахаль те ӳсĕр. Юрату симпылĕ ӳсĕртрĕ мана.

Ах, ан сĕнĕр мана ылтăн-ахах, эп ахаль те пуян. Юрату пуянлатрĕ мана.

* * *

Пуринчен ытла пурнăçа юрататтăм эпĕ çак çĕр çинче çак таранччен.

Тĕл пултăм та сана, пуринчен ытла халь сана юрататăп çак çĕр çинче.

Анчах çыншăн пурнăçран хакли нимĕн те çук, çитменнине пулма та пултараймасть.

Пĕл: эсĕ манăн пĕртен-пĕр пурнăç.

* * *

Эпĕ паян телейлĕ. Савăнăç çутипе çуталса ларатăп. Тусăм, кил, лар манпа юнашар. Савăнăçăмăн çутти ӳктĕр сан çине. Хурлăхлă сăн-питӳ телейпе çиçтĕр. Телейĕм çуттипе ларар иксĕмĕр юнашар çуталса.

* * *

Пирĕн çулсем хăçан та пулсан çав çавах хĕресленессе пĕлсе, пурнăçăн тумхахлă çулĕпе пуçа усмасăр, урасем аманнине туймасăр, хĕп-

хěрлě юн тумламăн-тумламăн суранăмран сăрхăннине асăрхамасăр утрăм сана хирěç. Çулăмăрсем хěресленнě çěрте, шăп та лăп чи варринче кěтсе илтěн эсě мана.

Çирěп аллусемпе çăмăллăн йатса илтěн те мана çěр çумěнчен, хăв çумна пăчăртаса, пěр хăрамасăр йатса утрăн умра çуталса выртакан пěртен-пěр çулпа...

* * *

Никам валли те çук паян эпир. Çак пўлěмре иксěмěр çеç эпир. Шăнкăравлаччăр тусусем пěлтерме юлашки хыпарсем. Эс ан пыр телефон патне, чыхăнтăр хăй шăнкăравěпе. Шутлаччăр тусусем: эс çук ěçре, эс урăх çěрте çўретěн тесе. Мансам самантлăха тусусем çинчен. Эс паян ытала мана ачашшăн пăчăртаса хăв çумна. Çемçен сěртěн тутуна тутана, çут тěнче çинчен манса чупту мана. Тутлă туйăм вылянтăр чунра. Хуллен тытса чăмăрта аллупа аллăма, çўçентерсе ўт-пěве чупчăр чěтрев чěпписем. Пěр саншăн пулас килет паян, пěр саншăн. Пěр сана ыталас килет паян, пěр сана. Пěр сана чуп тăвас килет паян, пěр сана. Чўречерен карăнса тинкерен сар уйăх, курса эпир пěр-пěрне ачашланине, вăтанса пытантăр пěлěтсем хыçне. Ассăн сывлатăр пěчченнишěн кулянса, сар куççульне юхтартăр пире ăмсанса.

Никам валли те çук эпир паян.

Паян эсě манăн, паян эпě сан.

* * *

Телейěм-кайăкăм, пěтěм ěçе пăрахса сан валли ятарласа йăва турăм. Пурăнма лайăх пултăр тесе чи çемçе тěк-мамăксем пухрăм, суйласуйла пěр-пěрин çумне хутăм, ăшă та çеп-çемçе йăва ăсталарăм.

Телейěм-кайăкăм, ывăнтăн пуль ют çěрте вěçсе. Манран инçетре тунсăхлă пуль сана. Таврăнсам ман пата, шăрантарсам йăвамра çепěç юррусене.

Телейěм-кайăкăм, асамат кěперě тěслě çунаттусемпе çатлаттарса саркаланса юрла юррусене.

Телейěм-кайăкăм, манăн та телейлě пулас килет.

* * *

Эсě — манăн иккěмěш эпě. Эс юнашар çук чухне эпě санпа яланах ăшăмра калаçатăп, санран сěнў ыйтатăп.

Манăн ку е тепěр хăтланăвăма еплерех хакланă пулăттăн-ши тесе шутлатăп. Веçех тěплěн виçнě хыççăн тин пěр-пěр ěçе пикенетěп. Эсě мана малтанах ырлассине, манпа килěшессине ăнланнă хыççăн тин тěплěн тунă ěç яланах ăнăçлă пулать, йěркеллě вěçленет.

Эсě — манăн иккěмěш эпě. Эс юнашар чухне, санпа сăмахланă вă-

хătра, эсĕ эпĕ мĕн каласса малтанах пĕлнĕ евĕр, шухăшăвăма каласа пĕтерме çеç ĕлкĕретĕп, эсĕ ăна çăмăллăн малалла тăсатăн.

Нумай чухне эсĕ эпĕ каласа пĕтерейменнине, ăнланса çитейменнине, мана ăнланма пулăшатăн.

Санпа юнашар питĕ çăмăл чуна. Пĕр хум та вылянмасть чунăмăн лăпкă кӳлли çийĕн эс юнашар чухне.

Эсĕ — манăн иккĕмĕш эпĕ. Эсĕ тата эпĕ пĕр ăнлав. Эсĕ мансăр, эпĕ сансăр пурăнма пултараймастпăр. Эпĕ сансăр никам та мар, эсĕ те мансăр никам та мар.

Эс çук чух эпĕ тĕнче уçлăхĕнче çухалнă пĕчĕкçĕ хăйăр пĕрчи, пĕччен мĕлтлетсе-мĕлтлетсе çунакан çурта...

* * *

Сан ятна ман умра кам та пулсан ăнсăртран каласа ярсанах эпĕ ăшăмра тӳрех хыпса çунма пуçлатăп. Никам та асăрхамасть эпĕ еплерех хумханнине. Сан яту ăшăмра çил-тăвăла хускатать, айĕн-çийĕн çавăрттарать.

Пĕр ăнсăртран персе янă яту çеç манпа темĕн те тума пултарать. Куç-пуçа хĕретет, ал-урана чĕтретет.

Мĕн тери асамлă вăйпа тулса ларнă сан яту.

* * *

Сана мĕншĕн юрататăп-ши тесе хамран хам, эпĕ пĕрре мар ыйтрăм, тупсăмне тупрăм тупрăмах.

Сана эпĕ эсĕ çак çĕр çинче пурришĕн юрататăп. Çавăн пек чуна ирĕлтерсе ямалла йăл кулнишĕн, пĕр хускалмасăр тарăн шухăша путса ларнишĕн, мана вăрттăн, эп курман, сисмен вăхăтра юратса сăнанишĕн, мана ачашшăн чуптунишĕн, мана сăмахсăрах ăнланнишĕн.

* * *

Пĕр самант хушши сан аллусем ман аллăмсене сĕртĕнчĕç, куçăмсем куçусемпе тĕл пулчĕç. Пĕр самант чĕптĕм те хускалмасăр эпĕ куçусене тинкерсе-тинкерсе пăхрăм. Пĕр самант хушшинче санăн куçусенче ĕмĕрлĕх куртăм: хĕллехи уйăхлă каçа, çӳл тӳпере йăлтăртатакан пинпин çăлтăра, лапка-лапка ӳкекен шурă юра, çинçе турат çинче юрласа ларакан шăпчăка, тухăçран хĕрелсе тухакан хĕвеле, шур юрпа витĕннĕ мăн ту тăррисене, шап-шур чечеклĕ улăха, йăмраллă тарăн çырмана, шап-шур вулăллă хурăнсене, шăнкăртатса юхакан çăл шывне.

Пĕр самант хушшинче эпĕ хам та ĕмĕрлĕх патне çывхартăм, ĕмĕрлĕхпе пĕр пултăм, ĕмĕрлĕх ăшĕнче ирĕлтĕм.

Çав ĕмĕрлĕхе туйса илме эсĕ пулăшрăн.

Тавах сана уншăн!

* * *

Сан тӳлек ыйхуна сыхласа эп паян çĕрĕпе куç хупмарăм. Куç илмесĕр сана эп сăнарăм. Ĕненмесĕр телей çумрине ăнтăхса эп пăхрăм сан çине.

Эп паян çĕрĕпех куç хупмарăм. Эп хăрарăм, куçа хупсанах, çывăрса кайсанах, ир енне ăшăтсан сар хĕвел тӳпене, сĕртĕнсен шевлипе çĕр питне, ирĕлĕ телейĕм шур тĕтрен, юлăп эп каллех пĕр-пĕччен.

* * *

Эс парнеленĕ сехет аллăмра шаккать те шаккать васкатса вăхăта: çеккунтсем, минутсем чупăр, ăнтăлăр малалла, пĕр-пĕриншĕн çунан ик чуна пулăшăр часрах тĕл пулма.

Эс парнеленĕ сехет манпа сăмахлать: тик-так, тикки-так, тик-так, кĕт, килет, кĕт, килет, кĕт, килет.

Пĕлетĕп: килетĕн.

Ĕненетĕп: çитетĕн.

Пин-пин çухрăм пире уйăрсан та пулма пултараймасть урăхла. Çыхас умĕн сехете аллăма, шăппăн каларăн мана чуп туса: тинкермессерен парне çине ас ил мана, пĕр мана...

Кун-каçа вуншар хут сехет çине пăхатăп: унта каймалла, кунта. Куç умне лекет çеç сехет, сан сăну тухса тăрать ман умма. Йăл куллу ăшăтать чуна, çĕмĕрт куçу тăрать çуталса.

Эс парнеленĕ сехет аллăмра шав шаккать васкатса вăхăта.

Сехет сассипе пĕр тан чĕрем тапать: юратать, юратать, юратать. Тикки-так, тăк-тăк, тикки-так, ĕçлес калаçса сехетпе чĕре, васкасах тăрăшаççĕ мана пĕлтерме: кĕт, килет, пĕр сан çинчен кунĕн-çĕрĕн ĕмĕтленет, кĕт, килет, пĕр сана курма ăнтăлать, тикки-так, пĕр сан çинчен шутлать, тикки-так, пĕр сана савать.

* * *

Юрату! Сан валли чуна йăпатакан, тыткăнлакан, витерекен, çĕклентерекен, çемçетекен, тивекен, хускатакан, куçа илĕртекен асамлă асамат кĕперĕ тĕслĕ чĕр чечексенчен эрешлесе пьедестал ăсталарăм. Вăл тата та илемлĕрех курăнтăр тесе тăрна куççулĕ евĕр тап-таса сывлăм пĕрчисемпе пĕрĕхрĕм. Ăна пурте курмалла чи чаплă вырăна вырнаçтартăм: йĕри-тавра ем-ешĕл çулçăллă курăксем, пăхсан, тĕпĕ курăнакан кӳлĕсем, янкăр кăн-кăвак тӳпе, шăпчăксем чи çепĕç юррисене шăрантараççĕ.

Юрату! Эс тивĕçлĕ çав пьедестала. Сан валли хĕвел шевлисенчен, çăлтăр çутисенчен, уйăх пайăркисенчен пуçкăшăлĕ ăсталарăм. Вăл çапçуттăн, ореол пек, çуталса тăтăр пуçу çийĕнче. Таврана çутатса, хĕмлентерсе пин-пин пайăркан салантăр çĕр пичĕ çийĕн çав çутă. Кашни çын чĕрине витертĕр.

Юрату! Эпĕ сан умăнта пуç таятăп: сăваплăн, тараватлăн, этеплĕн, хисеплĕн. Ĕмĕр-ĕмĕр, мĕн юлашки сывлăш çаврăнăшĕ кăкăрăмран тухиччен сана, пĕр сана, юрату, мухтаса, сан ятна тата та çӳллĕ çĕклесе утăп тумхахлă пурнăç сукмакĕпе...

* * *

Эпĕ, çунаттисене амантнă пĕчĕкçĕ сар кайăк, аслă çул хĕрринчи тусанлă курăк çинче, вилес патне çитнĕскер, пач хускалаймасăр выртатăп. Ман çумранах çынсем ирте-ирте каяççĕ: каялла-малалла, малалла-каялла мĕлтлетеççĕ урасем. Кашни çын хăй ĕçĕпе васкать, кашниĕ тĕллевне-шухăшне пурнăçласшăн.

Хĕртсе хĕвел пăхать. Куç умĕнче хĕрӳ сывлăш йăсăрланать, тĕрлĕтĕслĕн йăлтăртатать. Чăтма çук шăрăх. Пĕр шыв тумламĕччĕ çунакан ăшăма сӳнтерме. Пĕр шыв тумламĕ тата хӳтлĕх!

Каялла-малалла утаççĕ урасем, васкаса утаççĕ урасем, васкамасăр утаççĕ... Урасем мана курмаççĕ, шел, урасем суккăр!

Манăн, халтан кайнăскерĕн, çăлăнăç кĕтсе ывăннăскерĕн, ерипен куçăмсем хупăнаççĕ. Пулин мĕн пулать, шăпамран иртеймĕн...

Такам, хуçăлнă çунатăмсене ыраттарасран хăраса, мана, пĕчĕкçĕ сар кайăка асăрханса хыткан аллисене илет, тути патне илсе пырса хуллен, кăкăрĕнчен тухакан уçă сывлăшпа вĕрсе уçăлтарать, çап-çат çыпăçăнса ларнă çăвара сивĕ шыв тумламĕсем ярать. Тумламсене чыхăнса çăтатăп. Ăш хыппи тинех лăпланать. Пылак шерпет евĕр шыв тумламĕсем маншăн. Çăмăллăн тулли кăкăрпа сывласа ярatăп, вара тин куç хупаххисене уçма аран-аран хал çитеретĕп. Тĕтрелĕх сирĕлсен, сан чуна калама çук илĕртекен чипер сăнна уçăмлăн çывăхра-çывăхра куратăп.

Эсĕ мана асăрхаса хăв кăкру çумне хӳтлĕхе пытаратăн, васкамасăр малалла, инçет çутлăха йăтса утатăн... Мĕн тери савăк-çке пурнăç!

* * *

Эсĕ питĕме асăрханса икĕ аллупа тытатăн. Чылайччен, хура куç шăрçисене сиктермесĕр, куçăмран тинкерсе-тинкерсе пăхатăн. Сана васкатмастăп эпĕ, мĕншĕн тесен питĕ лайăх ăнланатăп: арçыннăн та, хĕрарăмăнни пекех, пурнăçра тĕп самант пулать. Вăл хăй килĕштерекен хĕрарăма юратни çинчен пĕлтерет. Анчах, хĕр-упраçпа танлаштарсан, саватăп тейиччен, арçын нумай шухăшлать, веçех виçет: çемье йăвине çавăрасси çăмăл ĕç мар. Ĕмĕрлĕх вĕт! Вара тин, хĕрелсе пиççе çитнĕ çырлана татма васканăн, хĕрарăма «сана саватăп», тет, пурнăç çулĕпе юнашар утма чĕнет.

Эпĕ сана васкатмастăп... Калас сăмахна калăн-ха. Чăтăмлăхăм çителĕклĕ, ахальтен-и çак çĕр çине хĕрарăм пулса килнĕ.

Эпĕ те куçусене тинкеретĕп. Çăтмаха путатăп. Ĕмĕр-ĕмĕр пĕр сăмах чĕнмесĕр санпа юнашар тăма хатĕр.

Эсĕ асамлă шăплăха татса, пĕр эпĕ çеç илтмелле тута хĕррипе хуллен пăшăлтататăн: «Эсĕ манăн пĕчĕк хĕрача». Куçусен хĕмĕ çак самантра çинçе хăйă çутти евĕр. Эпĕ, пачах урăх сăмахсем илтме хатĕрленнĕскер, ним калама та пĕлместĕп. Сан сăмахусене ăшăмра умлăн-хыçлăн кала-кала виçетĕп: «Эсĕ манăн пĕчĕк хĕрача», «Эпĕ санăн пĕчĕк хĕрачу». Çук, çук, çамрăках мар ĕнтĕ халь тин пĕчĕк хĕрача пулма. Пурнăç тути-масине астивсе куртăм. Ытла та йӳçĕ-çке, тӳрех урăлтарчĕ, ача-пăчалла шухăшлаттарма пăрахтарчĕ. Хура çӳç пĕрчисем те самаях кĕмĕлленчĕç.

«Эсӗ манӑн пӗчӗк хӗрача», терӗн. Пӗлетӗн-и? Манӑн чӑнах та ҫак самантрах пӗчӗк хӗрача пулас килсе кайрӗ. Ҫак шелсӗр тӗнче ҫине симӗс куҫӑмсене чарса ӗненсе-ӗненсе пӑхас килчӗ. Урӑм-сурӑм, асарписер ҫилрен кӗрнеклӗ, ҫирӗп юман хыҫне пытаннӑн, сан сарлака арҫын хулпуҫҫи хыҫне пурнӑҫ ҫилӗнчен, пӗтӗм инкек-синкекрен пытанса тӗршӗнес ҫут туйӑм чунӑмра вӑйланнӑҫемӗн вӑйланчӗ.

Сан ҫумӑнта эпӗ яланах пӗчӗкҫӗ шим-шим сарӑ чӗпӗ пулма хатӗр. Эсӗ ӑмӑрт кайӑкла ҫирӗп ҫунаттусемпе хӳтӗле мана ҫак пурнӑҫра ҫапса ҫӑвакан ҫумӑртан, шелсӗр пӗҫертекен хӗвел шевлисенчен, вӗттӗн-вӗттӗн чӗтрентерекен сивӗ ҫилтен. Тархасшӑн, хупла, шелле, сыхла, перекетле мана.

Манӑн сан ҫумӑнта яланах эсӗ чӑн-чӑн арҫын иккенне туйса тӑрса, вӑйсӑр хӗрарӑм пулас килет.

Эпӗ ӗмӗр тӑршшӗпех санӑн пӗчӗк хӗрачу пулма килӗшетӗп. Сана вилсе каймалла пуҫ тӳпинчен пуҫласа ура тӗпне ҫитиччен кӑмӑллатӑп.

Санӑн ӗмӗтӳсем, тӗллевӳсем, ӑнӑҫӑвусем, ҫитменлӗхӳсем, шухӑшусем манӑн ӗмӗтсем, тӗллевсем, ӑнӑҫусем, ҫитменлӗхсем, шухӑшсем.

Эсӗ — арҫын. Эпӗ — хӗрарӑм. Манӑн хама сан ҫумӑнта хӗрарӑм иккенне пӗр вӗҫӗмсӗр туйса, пӗлсе, ӗненсе тӑрас килет.

Хӗрарӑм хӑйӗн ачашлӑхӗпе, вӑйсӑрлӑхӗпе, тараватлӑхӗпе, ӑшпиллӗхӗпе, ҫепӗҫлӗхӗпе, сипечӗпе арҫын ҫумӗнче илемлӗ те.

* * *

Эпӗ телефон трубкине чылайччен ҫепӗҫҫӗн-ҫепӗҫҫӗн чуптӑватӑп. Унтан ӑна асӑрхаса телефон ҫине вырнаҫтарса хуратӑп. Телефон трубки тин ҫеҫ мана сан сассупа: «эпӗ сана питӗ юрататӑп» терӗ.

* * *

Эй, ҫут тӗнчем, ытарлӑн чуптӑватӑп сана, вӑл ҫак ҫӗр ҫинче пурришӗн!

Эй, хаклӑ ҫӗр-аннем, тайма пуҫ сана, ӑна хӑвӑн сарлака чӗрҫӳ ҫинче сиктерсе ӳстернӗшӗн, тивӗҫлӗ ҫын тунӑшӑн!

Эй, ылтӑн хӗвелӗм, чунтан тав сана, ӑна сап-сар шевлӳсемпе ачашланӑшӑн!

Эй, кӑвак тӳпем, пин-пин ыр сӑмах сана, ун пуҫӗ ҫийӗнче яланах тап-таса пулнишӗн!

Эй, юратӑвӑм, мухтав сана, унӑн ҫӗмӗрт куҫӗсенче телей ҫутине чӗртнишӗн!

* * *

Юратӑвӑм, асамлӑ кайӑк пулса, вӗҫсе ҫит савни патне, унӑн хулпуҫҫийӗ ҫине пырса лар та шӑрантар салху сассупа чи кичем юрруна. Савнин чӗри тулса лартӑр тунсӑхпа сана итлесе. Юррунта кала эс ӑна эп кӗтни ҫинчен, пӗр уншӑн пурӑнни ҫинчен. Сӑнарӑм савни куҫӗ умне

тухса тăтăр. Аса илĕ те савни мана, килĕ курма.

Юратăвăм, часрах мерчен шăрçаллă çумăр пулса, шăпăр-шăпăр! ӳк тӳперен. Чи тунсăхлă ташшуна ташла савни умĕнче. Салху-салху кĕввӳне ĕнĕрле ташланă май. Савни чĕри пăчăртантăр тунсăхпа мана аса илсе. Чăтаймĕ уйрăлăва, килĕ вăл ман пата.

Юратăвăм, вăштăр çил пулса, ниçта чарăнса тăмасăр, вĕçсе çит хăвăртрах савни патне. Хуллен сĕртĕн савнине, çепĕççĕн тăрмала хупхура çӳçне, пин-пин шăнкăрав сассиллĕн хурлăхлăн янăра сывлăшра. Савнин чунĕнче шелсĕр хуçалантăр тунсăх. Текех чăтаймĕ савни, килĕ, килĕ ман пата.

Юратăвăм, ем-ешĕл çулçă пулса, тунсăхлăн шĕлтĕртет ман çинчен йăмра çумне таяннă савнине. Ас илтер ăна эп пурри çинчен. Чĕри чăмăртанса ыраттăр савнин. Шутлĕ вăл: «Урăх пурăнаймастăп унсăрăн, курас килет ăна». Пăрахĕ те савни пĕтĕм ĕçне, килĕ мана курма.

Юратăвăм, çĕр-анне пулса, çемçе курăк çинче выртакан савнине ил хăв ытамна. Ассăн хаш! сывласа пăшăлтат чи салху асамлă сăмахсем савнине, систер вăрттăн тунсăхăм тĕнче уçлăхĕ пысăккăш иккенне. Ыратса-ыратса тунсăхлатăр маншăн савнин чĕри. Килĕ ман пата савни, тупĕ телейне...

* * *

Телей кайăкне тытайрăн пулсан пурнăçунта, çирĕппĕн ярса тыт та ик аллупа, хытă тыт, ан вĕçерт. Вĕçертсен, текех тытаймăн. Телей кайăкĕ, пур кайăк пекех, ирĕклĕхе юратать...

* * *

Эсĕ шăнкăравласса кунран-кун чăтăмсăррăн кĕтетĕп.

Телефон шăнкăртатмассерен, эсĕ пуль тесе, кĕпçене хумханса алла илетĕп.

Çук, иккен, эсĕ мар, урăххи, ĕçпе...

Кашни çеккунта сансăр пĕр ĕмĕр евĕр пурăнса ирттеретĕп.

Сана юлашки хут курнăранпа, сассуна юлашки хут илтнĕренпе миçе ĕмĕр пурăнатăп-ши эпĕ çак çĕр çинче?

Эсĕ ман пата вăхăт тупса шăнкăравличчен тата миçе ĕмĕр пурăнса иттерĕп-ши эпĕ çак çĕр çинче?

* * *

Юрату — эс вĕлтĕр-вĕлтĕр лĕпĕшле пырса лартăн та ал тупанĕ çине, ĕлкĕрейменĕм санпа туллин киленсе, кайрăн вĕçсе.

Юрату — эс урăм-сурăм çил-тăманла çавăрттартăн та мана тĕлсĕр ташшунта, хăвартăн тăратса тăр пĕччен вĕçĕ-хĕррисĕр шап-шурă уйра.

Юрату — эс куçа шартаракан çăра тĕтреллĕ пĕркенчĕкпе витрĕн те мана, çухатрăм умăмри çула. Суккăрскер, пăрăнтăм та кăштах айккинелле, путрăм шурлăха.

Юрату — эс илĕртӳллĕ çемçе кĕвĕллĕ янăрарăн та чылайччен манра, ĕнентĕм сана, çухатрăм пуçа.

# Çу, çумăр çу!

Çу, çумăр, çу... Вĕттĕн-вĕттĕн çу, шăрçаланса-шăрçаланса çу. Пуçа йĕпетсе, çӳç пĕрчисем çийĕн шуса анса, питçămарти тăрăх куççуль тумламĕсем пулса юх. Чунри тунсăхăма куççульпе пĕрле юхтарса кăлар, тусана çĕр çумне пусарнă евĕр, урасем айне пусар. Çу, çумăр, çу! Чĕреме çăмăллатса, савнă çынна тепре тĕл пуласса е ăнсăртран та пулсан курасса шантарса çу!

Астăватăн-и, çумăрăм, еплерех эпĕ унпа каçхи хула урамĕпе юнашар васкамасăр утнине?! Мĕн тери савăкчĕ мана. Пĕр эсĕ çеç ун чухне пирĕн хушăмăрта тин çеç çуралнă черчен ачашлăха асăрхарăн. Пĕр эсĕ çеç чĕремĕрсенче вăй илме пуçланă юратăва туйрăн. Манпа ун çине шăпăр-шăпăр! тăкăнтăн, пит-куçа йĕпетсе тутасене çепĕççĕн сĕртĕнтĕн, самантлăха тута хĕрринче тытăнса тăрса калаçăва итлерĕн, малалла алăсем, урасем тăрăх чупа-чупа антăн, асфальт çинчи шыв кӳленчĕкĕсемпе пĕрлешрĕн.

Мĕн çинчен тăрăшсах сăмахланăччĕ-ши эпĕ унпа? Нимĕн те, нимĕн те астумастăп... Пĕр ун янăравлăрах сасси çеç пуçăмра çепĕç кĕвĕ евĕр çаврăнать те çаврăнать.

Тĕксĕм асфальт тĕл-тĕл юпасем çинчи хунарсенчен ӳкекен çутăпа туслă. Хула тутлă ыйăха путнă. Кӳленчĕксене асăрхамасăр утатпăр эпир: чăл-пар! вĕçеççĕ шыв тумламĕсем йĕри-таврааналла. Вăл сулахай аллăма пӳрнисемпе чавса патĕнчен асăрхаса тытнă. Ун аллин ăшшине тумтир витĕр туятăп. Мĕн тери лайăх мана. Пĕтĕмпех тĕлĕкри пек, пĕрре те ĕненес килмест çак чăнлăха. Вăл, яланах маншăн тĕпсĕр уçлăхри вĕçсе çитейми çут çăлтăр вырăнĕнче пулнăскер, халь манпа юнашар утать. Ăнсăртран такăнасран асăрхаса аллăма ачашшăн тытса пырать. Савнă çыннăм мана каçхи хула урамĕпе киле ăсатать!!! Ах, турах. Вăл нимĕн те пĕлмест-çке, нимĕн те чухламасть-çке: мана хăй тахçанах килĕшнине те, ун çинчен каççерен вăрттăн ĕмĕтленнине те, ăна, паян тусĕсем патĕнче ăнсăртран тĕлпулнăскере, çак асамлă каç чăтма çук кăмăлланине те, килĕм тĕлне çитсен, унпа пачах уйрăлас килменнине те...

Мĕншĕн çитес çулăмăр ытла та кĕске-ши? Мĕншĕн килĕм урати умĕнче çулăмăр йӳпленмелле-ши? Пуçăмри шухăшсем çĕр тĕрлĕ, анчах пĕри, уйрăлу саманчĕ çывхарнăçемĕн, çав тери канăççăрлантарать: тата хăçан ăна курăп-ши, хăçан вăл ман çумра çут çăлтăрла ялтăртатса çунĕ-ши, чунăма ăшăтĕ-ши? Паянхи пек чунăмсемпе çывăхланнă, пĕр-пĕрне ăнланнă самант тата пулĕ-ши пирĕн хушăмăрта?

Çу, çумăр, çу... Пĕр эсĕ çеç ăнланатăн халь ман тунсăхăма, ăна çав тери курас килнине. Пĕр сана çеç уçса пама пултаратăп кӳтсе çитнĕ чунăма.

Çу, çумăр, çу... Эсĕ таврана йĕпетсе çунă чух хула урамĕпе утса, иртнине аса илсе, кăштах та пулсан киленсе йăпанас килет. Çумăрăм, çак самантра санран çывăххи манăн урăх никам та çук, санпа питĕ канлĕ мана. Эсĕ манăн вăрттăнлăхăма никама та пĕлтермĕн.

Çу, çумăр, çу... Ăшă-ăшă тумламусемпе савнă çыннăм тĕкĕнме хăяйман кăпăшка хĕп-хĕрлĕ тутана çепĕççĕн сĕртĕнсе чупту...

# Асамат кĕперĕнчен ăсталанă кĕпе

Манăн савнине çуралнă кун ячĕпе никам нихçан курман, илрä тытман, асăнмаллăх савăнмаллăх парне парас килчĕ. Ăçта çеç пулмарăм эпĕ парне шыраса: çӳл тӳпене вĕçсе хăпартăм, çĕр айне антăм, вăрманпа уйра нумайччен çӳрерĕм, тинĕс тĕпĕнче ишрĕм, кăпăшка шап-шур пĕлĕтсемпе витĕннĕ çӳллĕ тусем çине улăхрăм, çавах савнин кăмăлне каяс япала тупаймарăм.

Пуçа усса, кулянса киле таврăннă вăхăтра, çӳл тӳпере хура-кăвак йывăр пĕлĕтсем карталанса пухăннине, вĕсем сарă хĕвеле хăрушшăн хупăрланине, çил тусан вĕçтерсе чупнине те асăрхаймарăм. Хӳтте тарса пытанса ĕлкĕриччен, тĕксĕм мăнтăр пĕлĕт тӳперен ман çине витри-витрипе çумăр тăкма пуçларĕ. Мана темшĕн хытах тарăхнă тейĕн вăл: çиллессĕн чашлаттарчĕ те чашлаттарчĕ шултра мăйăр пек тумламĕсемпе. Самантрах витĕр йĕпентĕм. Кĕпе арки урасем çумне çат! çыпăçса ларчĕ. Ман тăрăх шăпăртатса ташласа шыв юхрĕ те юхрĕ, йăлтăр-ялтăр! чеен куçне хĕссе, таврана çап-çут çутатса илчĕ çиçĕм. Кăра çиллĕ аслати кăлтăр-кăлтăр! хăватлă сассипе, мана хăратса, ахăлтатса кулса ячĕ. Çиçĕм пĕр вĕçĕмсĕр çак самантра хăйĕнчен никам та хитререх çуккипе хĕпĕртесе, çисрĕ те çисрĕ. Аслати те, хăйĕн хаярлăхĕпе, хăвачĕпе мухтанса, кĕмсĕртетрĕ те кĕмсĕртетрĕ. Пĕлĕтсем те пĕр шелсĕр çĕр пичĕ çине шултра тумламсем тăкрĕç. Сана часах тĕл пуласси çинчен ĕмĕтленсе кайнипе эпĕ çутçанталăкăн пăсăк кăмăлне асăрхами пултăм. Сан сăнару куç умĕнче хĕвел пек çуталса тăчĕ. Савниçĕм, çав çутă чуна ăшăтрĕ, илемлетрĕ, илĕртрĕ.

Аслатиллĕ, çумăрлă хура-кăвак пĕлĕтсем мĕнле хăвăртлăхпа сар хĕвеле хупăрласа илчĕç, çаплах кăлтăртатса, кĕмсĕртетсе чупса, вĕçсе малалла ăнтăлчĕç. Ман пуç çийĕнчи тӳпе çуталса, тасалса-тасалса, янкăрланса юлчĕ. Таса çумăрпа питне çуса илнĕ сар хĕвел мана йăлтăр! куллипе хаваслăн саламларĕ. Унтан çав çут шевлисемпе вылянса-вылянса илчĕ те, çĕр чăмăрне хитрелетсе тухăçран анăçалла асамат кĕперĕ карчĕ. Çĕр-аннем калама çук çамрăкланса, чиперленсе, çуталса кайрĕ. Кăваккăн-симĕссĕн, хĕрлĕн-саррăн вылянчĕ асамат кĕперĕ. Пуçа каçăртса, сывлама хăраса, çут çанталăк илемĕпе киленнĕ вăхăтра пуçра йăлтăр çиçĕм евĕр вăшт! çеç пĕр шухăш ялтлатса илчĕ: сана асамат кĕперĕнчен çĕленĕ кĕпе тăхăнтарас килчĕ манăн çуралнă кун ячĕпе.

— Эй, тăрисем, эй, тусăмсем,— хыттăн кăшкăрса йыхăртăм эпĕ таçта-таçта, куç курман çӳллĕшре хаваслăн юрлакан кайăксене.— Эсир сар хĕвелпе туслă, эсир вĕçĕ-хĕррисĕр кăн-кăвак тинĕс евĕр тӳпен хуçисем. Эсир, ирĕке савакансксерсем, пулăшсамăр мана, савнин кăмăлне юрама, асамат кĕперĕнчен никам, нихçан курман кĕпе çĕлеме.

Ман ыйтăва хаваспах пурнăçларĕç пĕчĕк тусăмсем. Хĕрлĕ, хĕрлĕрех сарă, сарă, симĕс, сенкер, кăвак, хĕрлĕ кăвак тĕслĕ пайăркасене асамат кĕперĕнчен сăмсисемпе асăрхаса уйăрса ман аллăмсем çине илсе килсе купаларĕç. Йăлтăртатса, куçа йăмăхтарса çуталчĕç тĕрлĕ тĕслĕ пайăркасем ытамра. Эпĕ вĕсене сыхланса йатса çитертĕм киле, вăхăта ахаль сая ямасăр, тӳрех ĕçе пикентĕм. Станок умне меллĕн вырнаçса ларса, асамат кĕперĕн пайăркисенчен пир тĕртрĕм, унтан ĕлке тăрăх кĕпе касса çĕлерĕм.

Мĕн тери тĕлĕнмелле хитре кĕпе ăсталарăм эпĕ! Пĕтĕм чунтан, кă-

мӑлтан юратса тӑрӑшрӑм. Ҫак кӗпе илемӗпе нимӗнле япала та танлашаймӗ.

Савниҫӗм, эпӗ ҫак асамат кӗпене сана ҫуралнӑ кун ячӗпе парнелетӗп. Яланах: хӗлле-и, кӗркунне-и, ҫулла-и, ҫуркунне-и, эсӗ ӑна тӑхӑнсан, мана аса илӗн. Ҫав самантра сан чуну тасалса ҫӗнелӗ, ҫуталӗ, ҫӑмӑлланӗ...

Пӗлсем, эпӗ саншӑн тӑрӑшнине хакласам, манӑн сана ҫак ҫӗр ҫинче чи телейлӗ ҫын тӑвас килет.

# Сана кӗтсе ывӑнтӑм эпӗ

* * *

Сана кӗтсе ывӑнтӑм эпӗ... Туйӑмсене-пӳлленкесене вучаха ывӑтрӑм, кӑвайт чӗртрӗм. Тавраналла ывӑҫӑн-ывӑҫӑн хӗм сапса, хӗрӳленсе, шартлата-шартлата ҫунчӗҫ туйӑмсем-пӳленкесем. Асапланса, чӗреме ҫивчӗ шухӑшсемпе тӑрмала-тӑрмала, куҫ илмесӗр сӑнарӑм эпӗ ҫулӑм ташшине. Те чунӑм ытла та кӳтсе килнипе, те ыт ахаль, чӑтаймарӑм, ӗсӗклесе йӗрсе ятӑм.

Туйӑмсенчен-пӳленкесенчен чӗртнӗ кӑвайт пӗр каҫӑхса, тепӗр хевтине ҫухатса, йӗри-тавра пӗрчӗн-пӗрчӗн хӗм сапса ҫунчӗ. Чунӑмра ӑнланмалла мар туйӑм яш! хускалса илчӗ. Хам ӑнкарса та ӗлкӗреймерӗм, хыҫалалла ҫаврӑнса пӑхрӑм. Эсӗ ҫитнӗ иккен: шӑплӑха чӑрмантарасран хӑранӑн шӑп-шӑпӑрт тӑратӑн. Ман пекех, куҫ илмесӗр кӑвайт ҫуннине сӑнатӑн. Акӑ, туйӑмӑн пӗр пӗчӗк хӗлхемӗ, кӑвайтӑм ҫунса пӗтес умӗн, сан куҫ шӑрҫинче юлашки ҫут хурлӑхлӑн ялтӑр! ҫуталса илчӗ те яланлӑхах сӳнчӗ. Кӗл пулса, ҫӗр ҫине ӳкрӗ. Ҫунса кӗленнӗ вучах умӗнче икӗ ют ҫын пулса тӑрса юлтӑмӑр ӗмӗрлӗхе...

* * *

Эй, ҫынсем! Сирӗн курас килет-и ҫак ҫӗр ҫинчи чи телейлӗ ҫынна?

Курас килет пулсан, килӗр ман пата. Сире кӑтартӑп эп ӑна.

Курӑр: ҫав ҫын вӑл эпӗ. Ҫак вӑхӑтра, ҫак самантра эпӗ чи телейлӗ ҫын сирӗн хушӑрта.

Эпӗ юрататӑп...

Ҫынсем, сирӗн телейлӗ пулас килет-и? Килет пулсан, юратӑр!!! Ан хӑрӑр!!!

Пулӑр эсир те телейлӗ.

* * *

Чул шӑтарса ӳссе ҫитӗннӗ шап-шур чечек эпӗ.

Чӑтма ҫук пурӑнас килнӗрен.

Юр кайса ӗлкӗрнӗ-ӗлкӗрмен, ҫӗр шӑтарса шӑтса тухнӑ сап-сар чечек эпӗ.

Сап-сар ҫӗр хӗвелӗ пулас килнӗрен.

Ҫут кун ачаш ытамӗнче ҫуралнӑ хӗп-хӗрлӗ чечек эпӗ.

Пӗтӗм чун-чӗререн юратас килнӗрен.

* * *

Усал сулахай хăлхамран пĕрмай пăшăлтататъ: вăл чунсăр, тет, хăйĕншĕн çеç тăрăшать. Чап пĕрремĕш вырăнта уншăн, тет. Вăл сан юратăвна тивĕçсĕр, ан çыхăнтар пурнăçна унпа, асту, пĕтерет, пĕтерет вăл сана.

Ăçтан сăмахĕсене тупать-ши усал?

Ырă итлет те усал сăмахĕсене, чăтаймасть, сылтăм хăлхамран пăшăлтататъ: вăл питĕ сăпайлă, кăмăлĕ пыл та çу. Вăл саншăн чи çывăх тус пулĕ, вăл сана яланах ăнланĕ, юрат ăна, тет. Вăл сан юратăвна тивĕçлĕ çын, тет. Юратуран тасараххи, юратуран хăватлăраххи, юратуран асамлăраххи пурнăçра çук нимĕн те, тет. Юрату телей, тет, юрату пурнăç, тет.

Икĕ вăй: ырăпа усал кĕрешеç кунĕн-çĕрĕн манра.

Икĕ вăй: ырăпа усал часах ăнтан яраç мана.

Ырăпа усал сăмахĕсене хуратăп виçе çине, хăшĕ çĕнтерĕ, итлĕп çавна.

Пĕр пысăк купа сулахай енче усал сăмахсем.

Пĕр пĕчĕкçĕ ывăç сылтăм енче ыр сăмахсем.

Пĕр пĕчĕк ывçа кĕрекен ыр сăмахсем çĕнтерчĕç çĕнтерчĕçех пĕр пысăк купа усал сăмахсене.

Усал мĕн чухлĕ хуп-хура, чыса варалакан сăмахсем хурать виçе çине, çавах туртса илеймест ыр сăмах выртакан енне.

Усала çĕнтерме ырра ман юрату пулăшать.

* * *

Юратăвăм ытла та пысăк тата вăйлă пулнăран, кăкăрăмра вырнаçайманран, ирĕклĕхе ăнтăлнăран, ăна, эсĕ аллăнта çирĕп тытасса ĕненсе тата шанса, сана патăм.

Аллуна лекрĕ çеç юратăвăм,— эпĕ ăна пĕрремĕш хут айккинчен питĕ уçăмлăн та витĕр куртăм! Мĕн тери пĕчĕкçкеррĕн курăнса кайрĕ вăл мана сан аллунта! Мĕн тери вăйсăрскер! Ман кăкăрăмра чухне вăл питĕ мăнаçлăччĕ, ирĕклĕччĕ, илемлĕччĕ!

Тинкеретĕп те айккинчен юратăвăм çине, паллаймастăп: епле вăл мĕскĕнскер, хевтесĕрскер, сăнсăрскер, айванскер...

Мĕн пулчĕ ман юратăвăма сан аллусене лексенех? Мĕншĕн-ха вăл тӳрех пĕтсе, пăчăртанса ларчĕ?

Ним тума пĕлменрен-ши е ятарласа, юратăвăма Пӳлехçе парне вырăнне пама шутларăн.

Шурă уй варринче пĕччен ларакан мăнаçлă та кĕрнеклĕ Киремет юманĕ умĕнче чӳклеме пуçларăн. Хăюсăррăн, сана ним калама пĕлмесĕр сăнаса тăтăм эп юнашар. Пӳлĕхçе мухтаса, ырлăх-сывлăх ыйтса кĕл турăн, пуç тайрăн, унтан аллуна çивĕч çĕçĕ тытса, чӳк вырăнĕнче мĕн пуласса кĕтсе, шăпланса выртнă юратăвăма, шухăшна улăштарасран хăранăн, хăвăрттăн чĕри тĕлĕнчен çĕçĕпе чикрĕн.

Мĕн пур юлашки вăйне пухса, асаплăн, ыратăва чăтаймасăр кăшкăрса ячĕ манăн юратăвăм. Унăн чуна тăрмалакан сасси тĕпсĕр сенкерлĕхре çухалса шăпланчĕ. Юлашки ырату хумĕсем умлăн-хыçлăн чупса иртрĕç мăнтарăн юратăвăмăн пичĕ тăрăх.

Унтан... ак тамаша! Юратăвăм сăнĕ каллех çуталса, хитреленсе

кайрĕ, темле ăнланмалла мар асамлă илемлĕхпе тулса ларчĕ.

Чӳк выранĕнче каллех манăн пысăк та мăнаçлă юратăвăм выртать. Шап-шурă та тап-таса сăнлă вăл. Пăхса тăранмалла мар илемлĕ.

Ват киремет юманĕ чăтаймасăр ĕмĕрлĕхе куçне хупнă юратăвăм умĕнче ытарлăн та сăваплăн пуç тайрĕ...

* * *

Пĕлетĕп сана эп кирлĕ маррине. Пĕлетĕп мана эс нихçан савас çуккине. Асăмпа питĕ лайăх çак чăнлăха эп ăнланатăп. Мĕн тусан мĕн пулассине, мĕн каласан мĕн хуравласссине пĕлетĕп. Анчах хампа нимĕн те тăваймастăп, чун-хавал хĕрӳллĕхĕ вăйлăрах манран.

Санпа пĕр сăмах çеç чĕнсе калаçас килет, тепре сассуна илтиччен, тепре тунсăхличчен. Сан куçна тинкерсе хавассăн йăл! кулас килет, тепре сана курас килекен пуличчен, тепре хыт тунсăхличчен.

Анчах сана кирлĕ маррине пĕлсе тăнине хам çинчен аса илтерме именетĕп. Çавăнпа та хутран-ситрен, ытла та чунра йывăрланса çитсен, телефона умма лартатăп та унăн çаврашкине ерипен çавăрса санăн телефон номерне пухатăп. Кăштахран сан сассу янăраса каять хăлхамра. Çăвара шыв çăтнăн тимлĕн тăнлатăп сассуна. Аллăмсем, урамсем хыт чĕтреççĕ. Чунăм, хрусталь черккесем пĕр-пĕрне сĕртĕнсен чăнкăртатнăн, асамлăн янăраса тăрать.

Мĕн тери çывăхра эсĕ çак самантра, мĕн тери инçетре...

— Алло, алло, калаçăр, итлетĕп,— хумханса чĕнетĕн эсĕ. Никам та хирĕç хуравламаннине кура кăштахран телефон трубкине телефон çине хуратăн.

Пĕр самант пач! хускалаймасăр тăратăп эпĕ тин çеç сан сассуна çывăхрах илтнĕскер. Чунăм киленӳ кӳллинче чăмпăлтатать.

Каçар мана, çапла пĕчĕк ачалла хăтланнăшăн. Ĕмĕр тăршшĕпе юратас çук эпĕ сана, туйăмсем хуллен пусăрăнĕç, лăпланĕç.

Чăтсам тата тепĕр-так кăштах. Сан чăтăмлăху юрату сĕрĕмне сирме пулăшĕ мана.

* * *

Кĕтсе илеймерĕм те сана паян, тумламăн-тумламăн, ним юлмиччен пăчăртаса кăлартăм юратăвăма куçăмран.

Пит çăмарти тăрăх ахахăн-ахахăн юхан юратăвăма сив çил сапаларĕ тĕнче тăрăх.

Ансăртран пĕр çут ахахĕ куç харшу çине ӳксен, тархасшăн, ăна шăлса пăрахма ан васка. Пĕл, ку ман юратăвăмăн чи çепĕç тумламĕ.

* * *

Паян пирĕн юрату вилчĕ. Нумай вăхăт хушши чирленĕ хыççăн унăн сăнĕ юлашки хут çуталса илчĕ, куçĕсем, инçет çăлтăрсем пек ялтăр! çиçрĕç, çут тĕнче çине тĕлĕнсе тинкерчĕç.

Юрату юлашки хут кăкăр туллин сывлăш çавăрчĕ, çăмăллăн хаш! сывласа илчĕ те, вилчĕ.

Пирĕн телее юратăвăн ачи юлчĕ. Вăл санăн тата манăн куçран ачашшăн пăхрĕ, савăнăçлăн кăлтăр! кулса ячĕ!

* * *

Инçе çула тухса эс кайрăн паян. Мана пĕлтермерĕн те. Усал хыпар юланутпа çӳрет. Систерчĕç тусусем — сансăрах вăл кайрĕ.

Усал хыпар çивĕч сăнă евĕр пырса тăрăнчĕ чĕрене, ăссăрлатрĕ мана. Куççуль мар, юн тумламĕсем юхтарчĕ куçăмран.

Çавах сана инçе çула тухса кайнăскере эп пиллетĕп: каяс çулу такăр пултăр, çитес çĕре тĕрĕс-тĕкел çитмелле пултăр, шутласа хунă ĕмĕтне пурнăçламалла пултăр, пуçу çиййĕнче кăнтăрла сар хĕвел çиçтĕр, каçхине сар уйăх çутаттăр, çăлтăрсем тусусем вырăнне пулччăр, ăш çил савни пулса ыталатăр.

Манăн пил сана инкек-синкекрен сыхлатăр, телейлĕ тутăр, каялла тĕрĕс-тĕкел çаврăнса çитме пулăштăр...

* * *

Юрату кĕрлесе юхакан шыв сикки евĕр çавăрттарса кĕрсе кайрĕ те мана хăййĕн авăрне пĕр шелсĕр, чуна йăлт пушатиччен çавăрттарнă хыççăн тин йĕпе хăйăрлă çырана кăларса пăрахрĕ.

Ни чĕрĕ, ни вилĕ хускалаймасăр выртатăп халĕ.

* * *

Мĕн тери йывăрччĕ эс кайсанах сансăр пурăнма.

Мĕн тери йӳçĕ тунсăх хуçаччĕ чунра!

Халь ак сансăр та вĕрентĕм пурăнма. Пӳлĕм те халь курăнмасть пуш-пушăн, хăратмасть каçхи шăплăх чĕмсĕрлĕхĕпе хăрушшăн. Пĕчченлĕх, çăмламас упа евĕр, тинкермест кĕтесрен шăппăн. Шур пĕркенчĕклĕ тунсăх та килмест текех хăнана. Кĕтесрен кĕтесе çӳремест мана хăратса.

Çук, çук, эп пĕччен мар, пачах та пĕччен мар. Сар уйăх ăнланать ман хуйăха. Шуса тухса сĕм пĕлĕт хыçĕнчен хуллен-хуллен шаккать вăл каçсерен ман кантăка.

— Аҥ кулян, вăл кайнипех тĕнче пĕтсе ларман-çке, йăл кулсам, эпĕ халь санпа пĕрле-çке,— тет вăл çепĕççĕн кĕмĕл çутипе мана сĕртĕнсе.

Сар уйăх та тăр-пĕччен çӳл тӳпере. Савниййĕ унăн, сар хĕвел, çĕр леш енче.

Эп те халь пĕр-пĕччен хам пӳлĕмре. Ачашланатăн эс таçта сар хĕр ытамĕнче.

Малтанласа пит йывăрччĕ чуна, арман чул евĕр хурлăхчĕ унта, цлĕртместчĕ сар кун илемĕ мана. Çут тĕнче сăрланнăччĕ хура сăрăпа. Кур-ха, кур...

— Сыв пул, каятăп,— тенĕ сăмахусем пулчĕç тăчĕç тӳпере çут çăлтăрсем. Çиçеç халь аякра тунсăхлăн çутатса каçсерен çĕре.

Сар уйăхпа иксĕмĕр халь çывăх туссем. Пĕр-пĕрне ытла та лайăх ăнланатпăр-çке.

Эп сансăр та вĕрентĕм пурăнма.

Пурнах эс аякра...

* * *

Ҫӗлен пек чееленсе йăпшăнса шуса кӗтӗн эсӗ ман ăшăма. Чӗреме умлăн-хыҫлăн ҫаврăна-ҫаврăна явса илтӗн.

Халь вăрттăн-хӗрттӗн ерипен сăхса чунăм сӗткенне ӗметӗн, чӗреме наркăмăшпа тултаратăн.

Ҫавах эсӗ янă наркăмăша пӗтерме, ҫӗнтерме хал тупăп.

Наркăмăш ман чӗрере эмел пулса тăрӗ.

* * *

Сана турă вырăнне лартрăм. Турă пулма эсӗ хăрарăн. Ман кӗллӗме эсӗ илтмерӗн, ман кӗллӗме эс йышăнмарăн. Турă пулма эс килӗшмерӗн.

Кӗл тунин усси ҫавах ҫуккине ăнланса кӗл тума эпӗ пăрахрăм.

Сана кӗл тума пăрахрăм та, илтесшӗн пултăн эсӗ кӗлӗ, пуласшăн пултăн эсӗ Турă!

Пӗр ӗненӳ вилсен, ăна чӗртеймӗ никам та!!!

* * *

«То не ветер в поле воет,
Не дубравушка шумит.
То мое сердечко ноет,
Как осенний лист дрожит...»

Ай-хай, йывăҫ ҫурт кӗтессинче такам ӳлесе макăрать, чарăнми, салхуллăн шăхăра-шăхăра, хурланса, кулянса макăрать.

Кам-ха тесе, ҫил ачи пуль тесе пырса пăхрăм та, ҫук иккен, ку ман чун иккен, кукленсе ларнă та, ҫамрăклăх таврăнми иртнишӗн хӳхлехӳхле макăрать.

Ай-хай, лапсăркка шӗшкӗ тӗмӗ айӗнче такам ӗсӗклет, чӗвӗлти сассипе ытла та тунсăхлăн ӗсӗклет, сасси пит салхуллăн илтӗнет, чӗрене пырса тивет.

Кам-ха тесе, кайăк чӗппи йăваран ӳкнӗ пуль тесе туратсене сирсе пӗшкӗнсе пăхрăм та, ҫук иккен, ку ман чун иккен, савни сив сăмахпа хыт кӳрентернӗшӗн чарăнми ӗсӗклет.

Ай-хай, шавласа юхакан юханшыв хӗрринче, ҫеремлӗ ҫыран хӗрринче такам асапланса, ассăн сывлăшне ҫавăрса илсе, хаш! хаш! сывласа кăшкăрса йӗрет, сасси таврана ян каять, шыв кӗрлевӗпе тавлашать.

Кам-ха тесе, пӗчӗк ача пуль тесе, ăна такам хыт кӳрентернӗ пулӗ тесе тарăн ҫырмана анса пăхрăм та, ҫук иккен, ача мар иккен, ку ман чунăм юрату вилнишӗн кăшкăрса йӗрет.

* * *

Эс юнашарах ларатăн, алла тăс та сана сӗртӗнме пулать. Анчах ман ҫывăхрах пулсан та, эсӗ питӗ-питӗ манран аякра ҫак самантра.

Пӗр вăхăтрах эсӗ манăн та, манăн та мар.

Пӗр сăмах та чӗнместӗн, куҫусене те ялан айккинелле тартатăн, манран именетӗн.

Сана сăнаса тинкеретӗп. Санран черчен чунăма шантаракан сивӗ ҫапать. Хумлăн-хумлăн килсе ытамлать мана ҫав сивӗ. Витӗр шăнтса лартса хускалма та памасть. Чӗре тӗпӗнчен шăтса тухса ҫеҫкисене ҫур-

ма ӗлкӗреймен шанчӑка санран тухакан сивӗ хӑйӗн пӑрлӑ хӗлхемӗпе ӗнтсе, шӑнтса илет, пуҫне пӗктерет.

Эпӗ сисиччен, хутран-ситрен вӑрттӑн, кӑшт шухӑшлӑн пӑшӑрханса сӑна-сӑна илетӗн мана.

Эпӗ санӑн та, санӑн та мар пӗр вӑхӑтрах.

Юнашар пулсан та, эпир пӗр-пӗриншӗн ют ҫынсем...

* * *

...Ҫирӗпленсе ҫитеймен ҫунатӑмсене хуҫрӑн та, халь вӗҫех тесе янкӑр тӳпенелле мӗн пур вӑйна пухса ывӑтрӑн.

Чул пек персе антӑм ҫӗр ҫине. Кӗленче пек чӑл-пар салантӑм.

Пин-пин кӗленче ванчӑкӗ тӗнчен пин-пин кӗтесӗнче!

Пухса пӗтер халь вӗсене...

...Ҫӗрте тарӑн тымар ярайман вуллӑма тӑпраран туртса кӑлартӑн та, халь ӳсех тесе ҫул хӗрринче пӑрахса хӑвартӑн.

Вуллӑма хӗвел хӗртсе типӗтрӗ, ҫеҫкемсене ҫил тӗнче тӑрӑх сапаларӗ.

Тупса пӗтер халь вӗсене...

* * *

Сан пурнӑҫӑнти чи ҫывӑх ҫын пуласшӑнччӗ эпӗ. Санӑн иккӗмӗш «эпӗ». Сӑмахсӑрах ӑнланаканни, сӑмахсӑрах пулӑшаканни...

Пуласшӑнчӗ те, ирӗк памарӑн.

Сан пурнӑҫӑнтан шӑппӑн-шӑппӑн утса тухса кайрӑм...

Эсӗ асӑрхамарӑн та эп ҫуккине.

Эсӗ нихӑҫан та мана хӑвпа юнашар асӑрхаман та...

Е асӑрхасшӑн пулман?

* * *

Тӗнче эсӗ манпа юнашар марришӗн пач та хурланмасть. Тӗнче шав хӑй пурнӑҫӗпе пурӑнать. Каҫ пулать те ир ҫитет, ир иртет те кун ҫитет. Ҫӗр чӑмӑрӗ пӗр чарӑнми ҫаврӑнать. Сар хӗвел пӗр ҫӗр чӑмӑрӗ патне ҫывхарать, тепӗр ҫӗр чӑмӑрӗ патӗнчен тарать. Тӗнче пӗр вӑхӑт шур кӗрӗк тӑхӑнать, унтан ӑна симӗс кӗпепе улӑштарать, хӑй ҫине пӑхса савӑнать. Ку та йӑлӑхтарсан, саррине кӑмӑллать.

Тӗнче капӑрлансах, тумне улӑштарсах вӑхӑтне ирттерет. Тӗнчен хӑйӗн киленӗвӗ, хӑйӗн кун-ҫулӗ, хӑйӗн шӑпийӗ.

Тӗнчене ҫавах: те пур эсӗ, те ҫук. Те санпа эп, те сансӑр. Те телейлӗ эп, те телейсӗр, те кулатӑп эп, те йӗретӗп.

Тӗнчен хӑйӗн хуйхи-суйхи: кайӑксене ӑшӑ енне ӑсатмалла, юханшывсене шӑнтса лартмалла, ҫулҫӑсене ҫурӑлтармалла, шур юра ирӗлтермелле, шӑн пӑрсенчен тумла тумлаттармалла, ҫеҫенхирсенче чечексем ӳстермелле, сар хӗвелне илӗртме те ӗлкӗрмелле, сар уйӑхне те куҫ хӗссе илмелле.

Тӗнче сансӑр пурӑнать, сансӑр та ӗмӗр-ӗмӗр пурӑнӗ.

Эпӗ вара?

Манӑн епле-ха сансӑр пурӑнас?

* * *

Чун-чӗререн юратакан ҫын хӑй савакан, хӑй кӑмӑллакан ҫын валли хӑть мӗнле пушӑ мар пулсан та, вилме выртсан та, пӗр чӗптӗм самант та пулсан тупатех.

Юратман ҫын вара, енчен те унӑн чӗри юрату ҫулӑмӗпе хӗмленсе ҫунмасть пулсан, кунӗн-ҫӗрӗн нимӗн те тумасть пулсан та, кӗрӗк арки йӑвалать пулсан та, хӑйне савакан ҫын валли пӗр чӗптӗм вӑхӑт та тупаймасть.

* * *

Паянхи кун ҫулталӑкӑн ытти кунӗсенчен нимӗнпе те уйрӑлса тӑмасть. Паянхи кун та хӗллен ытти нумай-нумай кунӗсем евӗрех сивӗ.

Тӗрлӗ-тӗрлӗ йӗрсемпе эрешленнӗ кантӑк витӗр пӳлӗме кун ҫути сӑрхӑнать. Тӳпери сар хӗвеле сивӗ хӗл тӗксӗм пӗлӗтсен чаршавне карса пытарнӑ. Ҫӗрпе пӗлӗт пӗрлешессӗнех туйӑнать. Ҫут ҫанталӑкӑн пусӑрӑнчӑк кӑмӑлӗ мана та куҫать. Чунра тунсӑх, тунсӑх, тунсӑх...

Паянхи кун та, ҫутҫанталӑкӑн ытти ҫӗршер кунӗсем пекех эсӗ манпа мар. Ӑҫта ҫӳретӗн-ши эсӗ? Мӗнле пурӑнатӑн-ши? Темле пӗлес тесен те пӗлеймӗн, ҫулӑмӑрсем йӳпленчӗҫ ҫав пирӗн. Вунӑ ҫул ҫитрӗ сана курманни. Вунӑ ҫул — паллӑ кун.

Паянхи кун яланхилле эпӗ сунтӑкран чӗнтӗрлӗ шап-шурӑ сӗтел ҫитти туртса кӑларатӑп, ӑна сӗтел ҫине саратӑп, хрусталь вазӑна виҫӗ хӗп-хӗрлӗ розӑсем лартатӑп.

Виҫӗ пӗчӗкҫӗ хӗвел пек ҫутатчӑр вӗсем тӗксӗм пӳлӗме, тунсӑхӑма сирччӗр, эпӗ пӗччен маррине пӗлтерччӗр.

Паянхи кун нумай-нумай ҫул каялла пӗр-пӗчӗк пулӑм пулнӑ: ҫӗнӗ чун ҫуралнӑ — ҫак ҫӗр ҫине эсӗ килнӗ. Пиншер, миллионшар ҫыншӑн ку ниме пӗлтермен пулӑм. Кашни вӗсем хӑй-хӑй пурнӑҫӗпе, шухӑшӗ-ӗҫӗпе пурӑнаççӗ.

Кашнин хӑйӗн савӑнӑҫӗ, хӑйӗн хуйхи-суйхи.

Маншӑн вара паянхи кун пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Пире пӗр асамлӑ сӑмах куҫа курӑнман ҫиппе ҫыхӑнтарать — юрату. Эсӗ нихҫан та ман асӑмран тухман, кашни сан ҫуралнӑ кунна эпӗ хам ҫуралнӑ куна кӗтнӗ пек кӗтетӗп, палӑртатӑп.

Телейлӗ пул, хӑть ӑҫта пулсан та, хӑть кампа пулсан та...

* * *

Шанчӑк чечекне алла тыттартӑн та, шанса пурӑн, терӗн. Тухса каяс умӗн ӑна мӗнле сыхламаллине калама мантӑн. Шанчӑк чечекне хам пӗлнӗ пек, куҫ шӑрҫине сыхланӑ пек сыхларӑм. Кунсерен шӑвартӑм, хӗвел шелсӗр шевлисемпе шантарасран шикленсе, сулхӑна пытартӑм. Тем пек тӑрӑшсан та шанчӑк чечекне сыхлаймарӑм. Шанчӑк чечекӗ шанчӗ. Ӑна упрайманшӑн хама хам ятларӑм. Эсӗ таврӑнсан сан куҫсене епле хӑйса тинкерӗп тесе кулянтӑм. Темӗн те шутларӑм.

Шутласан, шутласан ӑнлантӑм: шанчӑк чечекне сыхлама, темле асӑрханса-асӑрханса сыхлансан та, шанса пурӑн тени ҫеҫ ҫителӗксӗр мӗн...

* * *

Санран тухакан усал сăмахсем яп-яка çĕлен евĕр чĕреме пырса явăнаççĕ, сывлăша пӳлеççĕ, мăйран пăваççĕ, пуçа минретеççĕ. Çĕленĕн наркăмăшлă сăнни евĕр чĕреме вĕлермелле сăхаççĕ. Пĕр тăхлан пек хытса ларатăп. Тепĕр шурса, кăвакарса каятăп. Хускалаймасăр, хирĕç хуравлаймасăр сан умăнта мĕскĕнленсе тăратăп.

Анчах умăнта эпĕ мар тăратăп, сан умăнта кĕлеткем тăрать.

Чунăм вара çич тинĕс енче, çичĕ ту енче, çич утрав енче... Сар кун çĕршывĕнче.

Курмасть та, илтмест те сана, пĕлмест те...

* * *

Эс мĕскĕн çын, калама çук мĕскĕн. Сана «эсĕ мĕскĕн çын», тесе пин хут каласан та, нихăçан та йышăнас çук эс çак пĕчĕк чăнлăха.

Эсĕ хăвна патвар, маттур, пурне те пултаракан арçын тесе шутлатăн. Эсĕ хăвна пĕр вĕçĕм мухтатăн.

Эпĕ вара сана пачах урăхла куратăп. Эсĕ капайчăк, хăравçă, пĕр май иккĕленекен арçын. Эпĕ сана хĕрарăм куçĕпе витĕр куратăп. Хĕрарăм куçĕ алмаз пек, веçех асăрхать, сăнать, пĕтĕмлетӳ тума пулăшать.

Хĕрарăм пулнă май, эпĕ сана пĕчĕк ачана шелленĕ пек, шеллетĕп. Хĕрхенсе пусăнтан ачашшăн шăлатăп. Яланах (мĕн тери чуна хĕскĕчпе хĕснĕн, хĕрӳ тимĕрпе пĕçертнĕн ыраттаратăн пулсан та) каçарма хал çитеретĕп.

Эпĕ сана, мĕскĕне, шеллетĕп.

Эсĕ вара те курмăша персе, те чăнах та ăнланаймасăр, шеллеве юрату вырăнне йышăнатăн. Сана çапла тума çăмăлрах, сана капла пурăнма канлĕрех.

Пĕл. Шеллев нихăçан та юратăва куçаймасть. Шеллев хăть хăçан та, хăть ăçта та шеллев çеç пулса юлать. Шеллев нихăçан та юрату шайне çитеймест.

Эсĕ мĕскĕн çын, çавăнпа та эпĕ сана шеллетĕп.

* * *

Чун ыратать манăн, чун ыратать...

Ӳтĕн кашни кĕлеткине ырату тымар ячĕ. Манри пурнăç сĕткенне шелсĕр ĕмсе вăй илет ырату. Эпĕ вара çавна пула вăйсăрланнăçем вăйсăрланатăп, халтан кайнăçем халтан каятăп.

Чун ыратать манăн, чун ыратать...

Чунăм, мĕн пур юлашки вăйне пухса пĕр чăмăра, пулăшу ыйтса кăшкăрать: «пулăшсамăр!!!» Анчах ун сассине пĕр çын та илтмест, чунăм сасси манран тухаймасть, чунăм сасси манра çеç янăрать.

Ал сулам чун ыратăвĕ çине, ал сулам...

Ара, ыраттăрах, ыратать пулсан, чăтма çук ыратать пулсан та, ыраттăрах...

Ыратни те, тепĕр тесен, калама çук пысăк телей!

Ырату — пурăнатăп-ха тенине пĕлтерет.

* * *

«Эпӗ сана текех юратмастӑп». Ҫак сӑмахсене сасӑпа калатӑп, унтан хама хам итлесе пӑхатӑп. Тӗлӗнмелле! Нумай пулмасть ҫеҫ саншӑн хыпса ҫунакансскр, сансӑр пӗр самант та пурӑнма пултараймансскер, эпӗ сана текех юратмастӑп. Те пур эс, те ҫук! Мана ҫавах! Санӑн сӑнӳкерчӗкӳ те, санӑн яту та мана текех хумхантармаҫҫӗ. Теприне ыталатӑн-и, ҫепӗҫ сӑмахсем пӑшӑлтататӑн-и, тути хӗррине чуптӑватӑн-и, куҫӗнчен ӑшшӑн тинкерсе кулатӑн-и, мана ҫавах...

Нумай пулмасть ҫеҫ ҫак пурнӑҫра пӗтӗм тӗллевӗмсем, ӑнтӑлӑвӑм, ӗмӗтӗм, шухӑшӑм эсӗччӗ! Тӗнче савӑлӗ санраччӗ! Халӗ вара эсӗ маншӑн пушӑ вырӑн. Шӑтарасла тинкерсен те нимӗн те кураймӑн. Пуш-пушӑ.

Анчах темшӗн-ҫке, хама «сана юратмастӑп», тетӗп те, чунӑм хурланса-хурланса каять...

* * *

Пурнӑҫланайман ӗмӗтӗм, ывӑнтӑм эп сан ҫинчен шутла-шутла. Сана, тин ҫуралнӑ ҫап-ҫутӑ сӑнлӑ пӗчӗк пепкене алла илнӗ пек, шухӑшӑмра шухӑшӑмпа тытатӑп та, илемлӗ чӗнтӗрлӗ шап-шур ҫивӗттипе асӑрханса чӗркетӗп.

Шухӑшӑмран кантра яватӑп, шухӑш кашти ҫине ҫакса яратӑп хупран ерешлесе тунӑ сӑпкана. Ерипен сӑпка юрри ӗнерле-ӗнӗрле сӑпкама ярӑнтара-ярӑнтара сана, пурнӑҫланайман ӗмӗтӗм, ҫывӑрттаратӑп. Ҫӑлтӑр куҫусене мӑчлаттара-мӑчлаттара хуп куҫ хурпанкисене, ҫывӑрса каях тутлӑ тӗлӗксем курса, пурнӑҫланайман ӗмӗтӗм. Ан ыраттар чунӑма шӑппӑн ӗсӗклесе. Ҫывӑрса кайсам нихӑҫан вӑранми, ан аса илтер пулма пултарайманнине, ан суранлат чӗрене...

Пӗчӗкҫӗ пепке пек, тутлӑ тӗлӗкӳнте йӑл-йӑл кулса ил, тутуна мӑчмӑч тутар. Пурнӑҫланайман ӗмӗтӗм, эпӗ санӑн тутлӑ ыйхуна сӑпка умӗнчен пӑрӑнми сыхлӑп.

Ҫывӑр, пурнӑҫланайман ӗмӗтӗм, ҫывӑр. Лӑпкӑ чунпа пурӑнма ҫӑмӑлтарах ҫак ҫӗр ҫинче...

* * *

Хам акҫа ӳстернӗ йӗплӗ шӑлансемпе киленес тесе эпӗ ир-ирех, ҫӗрӗпе ҫывӑраймасӑр асапланнӑскер, пахчана тухрӑм. Тухӑҫран шуралса килекен шуҫӑм шупка-кӗрен чечексен вӑрттӑнлӑхне ерипен сирет. Каҫхи сӗмлӗхрен сиксе тухнӑ хӗп-хӗрлӗ панулми пек хӗвел шевлисем йӗплӗ шӑлан ҫеҫкисем ҫинчи сывлӑм пӗрчисем ҫийӗнче мерченнӗн йӑлтӑртатаҫҫӗ. Ҫак илемлӗхе курсан, чунра темӗн пылаккӑн вылянса илчӗ, питӗ-питӗ сана курас килсе кайрӗ. Ах, тур, сана курманни пӗр ӗмӗр! Тунсӑх кукӑр аллисемпе чунӑма пӑчӑртаса илчӗ. Тен, эсӗ те маншӑн тунсӑхлатӑн пуль, анчах вӑхӑт тупайманнипе, ни тӗлпулу шырамастӑн, ни шӑнкӑравламастӑн. Сана хирӗҫ хамах утӑм тӑвӑп, именсе тӑмӑп. Камӑн та пулсан сӑмах ҫӑмхине сӳтме пуҫламаллах!

Чи хитре те черчен йӗплӗ шӑлана куҫ хыврӑм, ахах-мерченлӗ ҫутӑ сывлӑм пӗрчисене ҫӗре ӳкересрен хӑраса, чечеке асӑрханса татрӑм. Васкамасӑр утса чип-чиперех йӑтса ҫитерме тӑрӑшрӑм сан пата сывлӑм пӗрчиллӗ илемлӗ чечеке, анчах, темле тӑрӑшсан та, шӑлан ҫинче

пěр пěчěк сывлăм пěрчийě çеç тăрса юлчě. Сар хěвел чăтаймарě, тăлăхскерне хăйěн чи çепěç шевлипе шеллесе сěртěнчě. Хуллен ачашларě. Пěчěк çăлтăр евěр ялтăр! çуталса илчě сывлăм пěрчийě.

Кăнтăр кунěнче укăлча алăкě умěнче тěлпултăмăр иксěмěр. Йěплě шăлана аллуна тыттартăм: те кăтăркас йěппи пӳрнӳне ыраттарнăран, те уçă çил вăшш! вěрнěрен, сывлăм пěрчийě чечек çеçки çинчен йӳçě кусçуль тумламě евěр кăлтăр! кусса анса сан ал тупанě çине ӳкрě. Ăна тем вăхăт куç илмесěр сăнарăн эсě. Мерчен евěр тěрлě тěслěн вылянчě вăл хěвел çинче. Савниçěм, ăнланайăн-ши эсě çак çутă та тап-таса сывлăм пěрчийě манăн чăтăмлăхăн юлашки тумламě пулнине?

* * *

Те эсě ман юратăва тивěçлě мар, те эпě санăнне?
Кам пěлет ăна?
Юрату тивěçлипе тивěçсěррине пăхать-ши?
Пăхать пулсан, эсě те, эпě те пěр-пěрин юратăвне тивěçлě мар...

## Юратупа курайманлăх хушшинче пěр утăм...

Юрату вăйлă туйăм.

Курайманлăх та вăйлă туйăм.

Юрату, пěр чун-чěрене кěрсе вырнаçсан, çынна пач ăссăрлатать. Енчен те юрату телейлě пулмасан, çынна çак пурнăçпа та сывпуллаштарма пултарать.

Курайманлăх та юратуран пěрре те кая юлмасть, çынна хăй çулě çинче тěл пулсан, пуçне минретет, ухмахлантарать. Курайманлăх — йӳçек туйăм.

Юратупа курайманлăх хире-хирěçле туйăмсем, тен, çавăнпа иккěшěн хушшинче пěр утăм теççě. Çав утăм асамлă карлăк евěр çыхăнтарать юратупа курайманлăха: ни унталла, ни кунталла каймаççě ик туйăм уйрăлса. Ăçта юрату, унта курайманлăх. Ăçта курайманлăх, унта юрату. Ни тус мар вěсем, ни тăшман, ěмěр-ěмěр юнашар утан туйăмсем — юратупа курайманлăх.

Эсě юратăвăма сутсан, манăн сана курайми пулма юратупа курайманлăх хушшинчи утăма çеç тумаллаччě! Мěн вăл пěр утăм! Куçа хуп та, ярса пус! Çав утăма тăвасран хама хам тытса чарайрăм. Эпě курайманлăхран вăйлăрах пултăм. Эпě юратупа курайманлăх хушшине каçарăва кěртсе лартма пултарайрăм...

* * *

Курайманлăхпа кěвěçӳ, сирěн валли манăн пысăк та анлă чěремре пěр пěчěкçě вырăн та çук.

Чěремре пур вырăн ăнлану валли, туслăхпа ыр сăмах валли тата чи илемлě те чи вăйлă туйăм валли — юрату валли.

* * *

Курайманлăх симпылĕ тултарнă çăлтăр алтăра тыттартăн мана. Пĕр тумлам юлмиччен, тĕппипе ĕçсе ятăм эпĕ курайманлăх симпылне.

Ĕçсе ятăм та тӳрех курайманлăх турри пулса тăтăм.

Кам-ши мана ыркăмăллăх симпылĕ тултарнă çăлтăр алтăра алла тыттарĕ?

Ыркăмăллăх турри пулас килет манăн...

* * *

Эс шелсĕр варланă чунăма чĕремĕн чи таса та чи сăваплă куççулĕпе çуса тасатрăм.

Кур, еплерех тап-таса халь ман чун.

Тин ӳкнĕ юр пек, шап-шур çеçкеллĕ улмуççи пек.

Пĕл.

Эпĕ урăх нихăçан та чунăма, тепĕр хут варалама сана ирĕк памăп.

* * *

Сана мĕнле вăйпа юратнă, çавăн пек вăйпа çеç мар, пин те пин хут вăйлăрах вăйпа кураймастăп.

Сана курас тесе мĕнле вăйпа сан пата ăнтăлнă, çавăн пек вăйпа çеç мар, пин те пин хут вăйлăрах вăйпа санран таратăп.

Сан сассуна мĕнле вăйпа илтес килнĕ, çавăн пек вăйпа çеç мар, пин те пин хут вăйлăрах вăйпа сассуна илтес килмест.

Санпа пулас тесе мĕнле вăйпа ĕмĕтленнĕ, çавăн пек вăйпа çеç мар, пин те пин хут вăйлăрах вăйпа манас килет.

* * *

Паянтан ман çырла тутама тепри антăхса кайса чуптăвĕ, эсĕ мар.

Паянтан ман шур ӳтĕме тепри пĕр чарăнми ачашлĕ, эсĕ мар.

Паянтан ман çепĕç ытамра тепри çĕрĕпе тутлăн çывăрĕ, эсĕ мар.

* * *

Ман чĕре питĕ пысăк та анлă, çавах пĕр сан валли унта урăх нихçан та вырăн тупăнмĕ.

Ман чун питĕ ырă та çепĕç, çавах пĕр эсĕ урăх нихăçан та унăн ырлăхне те, çепĕçлĕхне те кураймăн.

* * *

Ылханатăп.  
Сана пĕрремĕш хут  
Курнă куна,  
Санпа калаçнă куна  
Ылханатăп.

Ылханатăп.
Сана чуптунă куна,
Санăн пулнă куна
Ылханатăп.

Ылханатăп.
Эс чуна сурнă куна,
Туйăмсене мăшкăланă куна
Ылханатăп.

* * *

Кураймастăп сана,
Кураймастăп.
Мĕн пур чĕререн,
Мĕн пур чунран
Кураймастăп.
Епле-ха эп çĕр çывăрмасăр
Пĕр сан çинчен шутлама
Пултарнă,
Ăнланмастăп.
Кураймастăп сана,
Кураймастăп.
Епле-ха эп пĕртен-пĕр пурнăçа
Санпа çыхăнтарма
Ĕмĕтленме пултарнă.
Ăнланмастăп.
Кураймастăп сана,
Кураймастăп.
Тусусем умĕнче
Манăн мăнаçлăха,
Манри хĕрарăмлăха,
Манăн тасаран та таса,
Сăваплăран та сăваплă
Юратăвăма
Шелсĕр сăмахсемпе
Мăшкăларăн.
Кураймастăп сана,
Кураймастăп.
Мĕнле хăватпа сана
Юратнă.
Çавăн пек хăватпа сана
Кураймастăп.

# Каçар мана, çут тĕнче илемне курайман ачам!

Эпĕ — çын вĕлерекен. Эпĕ — калама çук чунсăр çын вĕлерекен. Пĕлсе тăрсах хам мĕн тăвасса, пĕр шелсĕр çын вĕлерекен.

Эпĕ паян манра тĕвĕленсе вăй илме пуçланă çĕнĕ пурнăçа, чуна чул пек хытарса, чĕреме пăр пек шăнтса, шăлăмсене шăтăр çыртса вĕлертĕм. Пӳтсĕртен те пӳтсĕр çылăхлă ĕç турăм.

Епле-ши мана çĕр-анне чăтать, епле-ха вăл мана, çын вĕлерене, хăрушшăн икĕ пая уйрăлса тĕпсĕрлĕхе туртса анса каймасть? Мĕншĕн-ха çут тĕнчем мана çутăлтарса ямасть? Мĕншĕн-ха ман çине сар хĕвел лачлаттарса сурса хумасть? Ăнланмастăп.

Хамăн аллăмсенчен хăратăп: вĕсем юнлă. Тинкеретĕп те, пӳрнесем вĕçĕнчен çылăхлă çĕр çине юн тумламĕсем пĕчĕкçĕ кăвар пĕрчисем евĕр ӳкнĕн туйăнать. Куçа йăмăхтарса шартаракан хĕп-хĕрлĕ çутă евĕр шухăшăмсем, ăçта тарса пытанас-ши сирĕнтен? Мĕнле пирпе витĕнсе манас-ши сире? Эсир те юнлă.

Каçар мана, каçарма пултараятăн пулсан, çут тĕнче илемне курайман ачам. Сана кĕтменччĕ çав эпĕ. Ытла та ăнсăртран тĕвĕлентĕн эсĕ манра, манран ирĕк ыйтмасăр, мана систермесĕр. Çухалса кайнипе, ним тума пĕлмен енне вĕлертĕм эпĕ сана.

Кам пултăн-ши эсĕ? Ывăл-ши, хĕр-ши? Пĕлес килет-çке! Анчах халь тин çак вăрттăнлăхăн тупсăмне мана никам та калаймĕ. Хăвпа пĕрле илсе кайрăн вăрттăнлăхна эсĕ, ачам.

Сана манран хурçă хĕскĕчпе татăкăн-татăкăн тăпăлтарса кăларчĕç. Пĕр шелсĕр, пĕр хумханусăр, хăйсем хушшинче шӳтлĕн калаçса, çак çут тĕнчере нимĕн те пулса иртмен пекех турĕç хăнăхнă ĕçне çын вĕлерме вĕреннĕ аласем. Епле чăтрăн-ши эсĕ, ачам? Санăн чĕрĕ ӳтне пайăн-пайăн пайларĕç-çке вĕсем. Урусене, аллусене, чĕрӳне, пуçна ӳтĕм çумĕнчен каса-каса илсе, пĕчĕк юнлă татăксем туса, ятарлă савăта пăрахрĕç. Ыратăва чăтаймасăр еплерех асаплăн кăшкăртăн пуль эсĕ ман ăшăмра, турткаланса, çăткăн хурçă хĕскĕчсенчен пытанма тăрăшрăн пуль. Чуну çурăлса тухасла кăшкăртăн пуль. Сана çавах никам та илтмерĕ, санăн сассăр ĕсĕклекен сассуна, сан чĕтренсе турткаланакан ӳтне никам та курмарĕ. Эпĕ те, çав шур халатлă çынсемпе пĕрле, илтесшĕн те, курасшăн та пулмарăм сана. Пĕчĕк-пĕчĕк кĕвĕлнĕ юнлă татăксем пулса выртрăн эсĕ тарăн савăта. Çав шур савăт санăн тупăку пулчĕ.

Ачам, сана миçемĕш хут тĕлĕкĕмсенче куратăп-ши эпĕ вĕлернĕрен-пе? Тата миçе хут хăрушă та хуп-хура тĕлĕкрен шарт! сиксе вăранса кайса, сип-сивĕ тар пĕрчисемпе витĕнсе, чылайччен, ним çинчен шутлама пĕлмесĕр, умăмра ним курмасăр, пушă куçсемпе тĕттĕмлĕхе тинкерсе выртăп-ши? Пĕлетĕн-и, ачам, сана тĕлĕкĕмре пĕр ывăл, пĕр хĕрача туса çурататăп. Манран çуралса тухатăн та эсĕ, хăв çак çут тĕнчене килни çинчен хаваслăн пĕлтерсе, пурте илтмелле шари! кăшкăрса яратăн. «Аннем, эпĕ килтĕм, йышăнсам мана, тытсам хăв аллуна мана»,— илтетĕп эп кашнинчех сан сассунта чуна çурмалла çуракан сăмахусене. «Аннем, кур-ха, кур, епле илемлĕ кун çути, еплерех сар хĕвел мана ачаш шевлисемпе сĕртĕнме васкать, янкăр сенкер тӳпе кăпăшка шур пĕлĕтсенчен сăпка ăсталать, шухă çил ачисем çепĕç сăпка юрри кĕвĕ-

леççĕ. Аннем, илтсем мана. Мĕн тери лайăх вăл пурнăç тени! Манăн та, сан пекех, пурăнас килет, ахăлтатса кулас, сарă кун илемĕпе киленес, кăкăр тулли сывлас килет! Ан вĕлер мана, аннеçĕм, умăнта чĕркуçленсе ларса ыйтма хатĕр санран, ан вĕлер. Эпĕ сана питĕ-питĕ юратăп, сума сăвăп, ватлăхра саншăн туя вырăнне пулăп, юлашки çула тивĕçлĕ ăсатăп...

Кур-ха, кур, аннеçĕм, мĕнлерех черчен ман тин çуралнă ӳтĕм, еплерех вăйсăр эпĕ, пĕчĕкçĕ аллăмсемпе, урамсемпе сывлăшра ют çын аллисенче тапкаланатăп. Хăв çумна ыталасам мана, çепĕççĕн-çепĕççĕн чуптусам, кăкăрунтан юхакан шап-шур сĕткенлĕ сĕтне мана ĕçтерсем. Эпĕ санăн-çке, сан ӳтӳнтен, сан юнунтан тĕвĕленсе ӳт илнĕскер. Хӳтĕле мана, аннеçĕм, пĕтĕм инкек-синкекрен. Кам-ха мана шеллĕ, кам-ха мана хӳтĕлĕ, эсĕ те хӳтĕлемесен, эсĕ те шеллемесен...»

Ик аллăмпа хăлхамсене хуплатăп, сан сассуна илтес мар тесе. Ик куçăма çăтăр хупатăп, сана, мĕскĕнскерне, курас мар тесе. Çавах нимĕн те пулăшмасть. Çылăхлă сан умăнта эпĕ, ачам. Кам каçарĕ ман çылăха? Каçарсан та, чунăм çăмăлланмĕ. Тĕлĕкĕмсенче те ман пата киле-киле аса илтерсех тăрăн эсĕ хăв çинчен. Эсĕ ман çĕкленми чуллă хĕресĕм, çуралайман ачам. Çĕр çумне пусарса лартакан хĕресĕм. Мĕн виличчен чĕрем çинче хурçă пичет пек выртĕ çав хĕрес.

Каçар мана, çут тĕнче илемне курайман ачам. Санăн та пурăнассу килчĕ пуль çав, çавна пулах тĕвĕленнĕ эсĕ ман ăшра. Пурăнма памарăм эпĕ сана. Сар кун илемне кăтартмарăм. Сар хĕвеле сана ачашлаттармарăм, таса сывлăшпа чун туличчен сывлаттармарăм. Ешĕл курăк çийĕпе, пĕчĕк путек пек, çар уран тăррăс-тăррăс савăнăçлăн сиктермерĕм. Ик пĕчĕк аллусене ман еннелле тăсса, пĕтĕм тĕнче илтмелле, шăпчăк кĕввиллĕ сассупа ахăлтатса кулса, хам паталла чуптармарăм. Вĕлертĕм. Çутçанталăк панă сăваплă тивĕçĕме пурнăçламарăм. Каçар...

* * *

Сӳнес пулсан та çак тĕнчере мĕн пур çутă, ан сӳнтĕрччĕ ман валли пĕри — атте-анне килĕн çутти. Çĕнтерсе сĕм-тĕттĕмлĕхе, çинçе хăю пек тăсăлтăр вăл инçе-инçе. Эп тĕттĕмлĕхре пĕччен маррине систерсе, вăл турттăр кăчăк! хăй патне. Тинĕс хумĕсем çийĕнче пĕр çухалса, пĕр тупăнса, пайăркан-пайăркан вылянакан сар хĕвел йĕрĕ евĕр çуталса чĕнекен çутă йĕрĕпе эп чупăп çăмăллăн тăван килĕм енне. Хăвăртрах! хăвăртрах! лекесчĕ атте-анне ытамне.

Хакли çук тăван кил çуттинчен нимĕн те, ан сӳнтĕрччĕ вăл ĕмĕрне...

* * *

Çулçăсем, çулçăсем ура айĕнче: симĕссисем, хĕрлисем, саррисем...

Кĕрхи сивĕ çил шелсĕр лăскаса антарнă та çулçăсене йывăç турачĕсем çинчен, тĕлли-паллисĕр сапаласа пăрахнă çĕр пичĕ çийĕн.

Ура айĕнчи тĕрлĕ тĕслĕ çулçăсем, йĕпе-сапана пула пылчăкпа вараланнăскерсем, çурăла-çурăла пĕтнĕскерсем, шыв кӳленчĕкĕсем ăшĕнче, хура тăпрапа типсе кушăхнă курăк çийĕнче пĕрерĕн, тата ушкăнăн-ушкăнăн выртаççĕ. Ялан таçта васкакан çынсем çулçăсене асăрхамаççĕ, вĕсен ахаль те хыт суранланнă ӳчĕсене тата та ытларах тапта-тапта çураççĕ, пылчăк ăшне путарса хăвараççĕ. Çулçăсем, нумай пулмасть

çеç хитрескерсем, сăнсăрланнăçемĕн сăнсăрланаççĕ. Çулçăсем чăтаççĕ, ӳчĕсем епле ыратсан та, пичĕсем епле пĕркеленсен те, чăтаççĕ, мĕншĕн тесен, çулçăсем чĕлхесĕр...

...Эп шеллетĕп çулçăсене.

Пĕр вĕçĕмсĕр таçта васкакан çынсем мана çĕр çинче сапаланса выртакан хĕрлĕ, симĕс, сарă çулçăсем пекех туйăнаççĕ. Кĕрхи сивĕ çил çулçăсене шелсĕр лăсканă евĕр, пурнăç çынсен шăписене хаяррăн тустарать, пăтраштарать, арпаштарать. Мĕн тăвас тет çынсемпе пурнăç, çавна тăвать: макăрттарать, култарать, уйăрттарать, туслаштарать, юраттарать, вĕлерттерет...

Çынсен чунĕсем чăтма çук ыратаççĕ. Пурнăç йывăртан ыратаççĕ. Çынсем чĕлхеллĕ, çавах чĕнмеççĕ. Çынсем хăнăхнă чăтма. Пурнăç вĕрентнĕ вĕсене чăтма. Шăлĕсене çăтăр! çыртаççĕ те çынсем, шав таçталла васкаççĕ...

...Эп шеллетĕп çынсене.

* * *

Кашни çын хăйне уйрăм пĕчĕк тĕнче, çав тĕнче, çыннине кура, хупă та пулма пултарать, яр уçă та.

Хăш-пĕрин тĕнчине уçса кĕме питĕ йывăр, тепĕр чухне, темле тăрăшсан та часах кĕреймĕн. Тата тепĕр çын тĕнчине нумайăшĕ уçса кĕме пĕлмеççĕ, çитменнине пултараймаççĕ те.

Çавăнпа та, чылай чухне çынсем пĕр-пĕрне ăнланмаççĕ, пĕр-пĕринчен ютшăнаççĕ, пĕр-пĕрне кураймаççĕ.

Кашни çын тĕнчин вăрттăн çăрине уçса кĕме пулать. Пĕртен-пĕр уçă вăл — юрату. Çав асамлă уçăпа пĕлсе усă курсан, тепĕр çын хăй тĕнчине сана хаваспах кĕртĕ, хăй тĕнчин илемне кăтартĕ.

Ан ӳркен, ил аллуна асамлă уçça — юратăва — илемлет тепĕр çын тĕнчипе хăв тĕнчӳне.

* * *

Паянхи куна та ĕнерхи пекех, ытахальтен тенĕ пек, пурăнас килмесĕрех пурăнса ирттеретĕп.

Мĕн тăвас тетĕн, пурăнма çуратса янă та, ирĕксĕрех пурăнас пулать кунсем вĕçлениччен, сывлăш тухми пуличчен...

Пĕр çутнă çурта пек, мĕлтлетсе çунас пулать мĕн çунса пĕтиччен, юлашки тумламччен...

* * *

Пĕчченлĕхрен хăратăп эпĕ, пĕчченлĕхрен таратăп эпĕ çынсем патне. Çынсемпе тĕл пулса эп тултаратăп кăмăл савăтне тумлам-тумлам тăкăниччен. Çынсемпе хутшăнса ывăнса çитсен, эп каллех шыратăп пĕчченлĕхе.

Пĕчченлĕхпе эп киленетĕп, пĕчченлĕхпе реххетленетĕп кăмăл савăтне пушатиччен, пĕчченлĕхрен хăракан пуличчен.

Унтан каллех тухса утатăп çынсем патне...

* * *

Пурнăç иртет, пурнăç иртет тесе кулянатпăр, ай-яй-яй, пурнăç иртнине сисмесĕрех юлатпăр тесе хурланатпăр. Ик аллăмăрпа пуçсене тытса, унталла-кунталла сулкалатпăр. Пурнăç иртет тесе тарăхиччен, шутласчĕ пĕрре пурăнни çинчен. Çак тĕнчене килнишĕн савăнса, ĕçлесчĕ кăмăл туличчен, ташласчĕ, юрласчĕ тăраниччен, юратасчĕ пуçа çухатиччен.

Ун чух чăнласах вăхăт тупăнмĕ, пурнăç иртет, ай, турах! пурнăç иртет тесе кулянма.

* * *

Çынсен сăмахĕнчен пĕр шит эп çӳлерех. Калаччăр кураймасăр ман çинчен ытла та чăрсăр вăл тесе, утма та пач пĕлмест, каçăрăлса, курнăçланса утать. Ялан кун пек каппайлансан вăл тăрăнĕ пĕррехинче. Кулли тата, кулли... Пĕр антăхса, пĕр каçăхса кайса ахăлтатса кулать. Ытла нумай вăл калаçать. Мăнкăмăллăхĕ хăйĕнчен виç утăмра пырать. Хăйне мухтанине пит юрататать. Курăр-ха, курăр, мĕнлерех тыткалать хăйне арçынсемпе. Çук тейĕн унран чаплăрах хĕрарăм çĕр çинче. Пачах тытма пĕлмест хăйне çынсем çинче. Тен, вăл, чăнах та, катăкрах.

Калаччăр темĕн те, мана çавах. Эп илмĕп сив сăмахсене чĕре патне. Пĕр чăнлăха ăнлантăм эп: юраса пĕтереймĕн пурин кăмăлне. Паян калаç пĕр тĕрлĕ, ыран тупĕç тата та çивчĕ сăмахсем. Калаççăр, çын чĕлхи вăл шăмăсăр, Кашнин çăварне питĕреймĕн çăрапа, витеймĕн тутăрпа.

Итлес пулсан сан çинчен мĕн-мĕн калаçнине, кирлех-ши пурăнма çак çĕр çинче? Çын сăмахĕ хыççăн кайсан, çын мар, çын мĕлки çеç тăрса юлан.

* * *

Чӳрече кусĕнче кĕркунне. Куçне мăчлаттарса хурлăхлăн йĕрет чӳрече иртсе кайнă çуллашăн. Йĕр хыççăн йĕр хăварса сивĕ кусçуль тумламĕсем юхаççĕ чӳрече куçĕнчен. Ĕнер çеç сар хĕвел ачашлатчĕ шевлисемпе ăна. Паян вара чӳрече куçĕнче кĕркунне. Сар хĕвеле пĕлĕтсем хупăрланă.

Тӳпери пусăрăнчăк кăмăллă пĕлĕтсем çĕр çумнелле йăпшăнаççĕ. Мăнтаррăнсем, шеллеттересшĕн хăйсене. Пĕлĕтсем те чăтаймасăр, иртсе кайнă кунсемшĕн тунсăхласа, вĕтĕ-вĕтĕ куççуль тăкса макăрма пуслаççĕ. Вĕсене кура, чӳрече çумĕнче яштакаланса ларакан шур вулăллă хурăн та сап-сар çулçисене пĕрерĕн-пĕрерĕн куççуль евĕр, çĕр пичĕ çине ӳкерет. Пĕтĕм тĕнче татăлса йĕрет паян иртсе кайнă çуллахи кунсемшĕн.

Мĕн тери лайăхчĕ çулла! Хĕртсе хĕвел пăхатчĕ. Пулăсем выляса сиккелетчĕç шыв пичĕ çийĕн, хĕп-хĕрлĕ пăнчăн-пăнчăн çĕр çырлисем симĕс курăк ăшĕнчен вăтанчăклăн тинкеретчĕç. Çак илеме курса киленнĕ пĕлĕтсем, иртнине аса илсе, татах та хурланса йĕреççĕ.

Çурт кĕтессинче хӳтлĕх тупнă пĕчĕкçĕ çил ачийĕ урăх чăтаймасть йӳçĕ тунсăха, юнашар выртан мăнă шăпăрне алла илет те, шапăртатса çăвакан çумăртан пĕрре те хăрамасăр, вĕçтерет çӳл тӳпене тунсăхлă-

тунсăхлă ăмăр пĕлĕтсенчен тасатма. Пĕррех çеç сулса ярать çил ачи шăпăрĕпе — чăл-пар! вĕçеççĕ айккинелле пĕлĕт таткисем. Йăл! кулса ытамлать çĕре тулли питлĕ, çап-çамрăк сар хĕвел. Кулли вара хăйĕн чуна тыткăнлать! Пур-ши ун куллинчен хитререхххи тата мĕн те пулсан çак тĕнчере? Çук пулĕ.

Çепĕççĕн чуптăва-чуптăва типĕтет хĕвел чӳрече куçне сивĕ куççульсенчен.

Хăйне савнишĕн тав туса хĕвеле йăл та йăл çиçет чӳрече.

Чӳречепе пĕрле эпĕ те сар кун илемĕшĕн савăнатăп...

# Юратусăр çын телейсĕр

Чун тасалăхĕн пĕр енĕ вăл — çынсем пĕр-пĕрне юратни. Атьăр-ха, кăштах юрату çинчен калаçар. Мĕншĕн тесен, пирĕн пĕтĕм пурнăç юратупа çыхăннă, ун çинче тытăнса тăрать. Çутçанталăк пире, çынсене, çак асамлă та черчен туйăма паман пулсан, кун-çулăмăр мĕн тери тĕссĕр, илемсĕр, кичем пулнă пулĕччĕ. Мĕнрен тата хăш самантра çуралать çынсен чĕрисенче, ăс-тăнĕнче çак туртăм? Ман шутпа юрату хамăра пурнăç панă чи çывăх çынна, аннене, юратнинчен пуçланать.

Пĕчĕк чун, тин çеç çут тĕнчене килнĕскер, амăшне сассинчен, аллисем сĕртĕнĕвĕнчен тепĕр хĕрарăмран çăмăллăн уйăрать. Курма вĕренсен вăл амăшĕн ачаш куçĕсенче ăнлану шырать. Хĕрарăмран тапса тăракан иксĕлми амăш юратăвĕ пĕчĕк ача чунне, ăшне куçа курăнман вăйпа сăрхăнса кĕрет. Çакă асаплă, тертлĕ тĕнчере пурнăçне çăмăллатать. Амăш юратăвне туйса ӳснĕ пĕчĕк чуна пурнăç терчĕ те тӳрех çапса хуçаймасть. Амăш юратăвне пĕлсе ӳснĕ ачасен тĕнчекурăмĕ те, чунĕ те пуянрах, туллирех. Хитрелĕх туйăмне те пачах урăхла ăнланаççĕ вĕсем. Пĕчĕк чун мĕн ачаран ырă ĕç курса ӳссен, кайран пысăк çын картне ларсан та, çак тĕнчере ытларах ырă тума тăрăшать. Çемьере ашшĕпе амăшĕ пĕр-пĕрне хисепленине, юратнине курса ӳсекен ача хăй те, ӳссе çитсен, телейлĕ çемье йăвине çавăрать.

Анчах та эпир, çынсем, идеаллă обществăра пурăнмастпăр. Ытларах чухне ача-пăча анне юратăвĕ мĕн иккенне пĕлмесĕр ӳсет. Ашшĕ-амăшĕсĕр çитĕнекен ачасен психики те çавăнпа урăхла. Ун пек ачасен чунĕсене манăн, темшĕн-çке, аманнă, юн юхтаракан, çунаттисене çатлаттаракан кайăкпа танлаштарас килет. Юнашар ăс вĕрентсе тăракан çын çуккипе, тин çеç пурнăç çулĕ çине тăнă çамрăксем, хăвăртрах пурнăç тутине астивсе курма васкаса, нумай йăнăш тăваççĕ. Кайран — чавса çывăх та çыртма çук. Хĕрупраçсенчен хăшĕ-пĕри качча каймасăрах ача çуратать. Унтан тăван-пĕлĕшĕсенчен, ялйышран намăсланса, пепкисене ача çураттаракан çуртрах пăрахса хăвараççĕ. Енчен те мĕн пĕчĕкрен хĕрсемпе каччăсене юратса пурăнма вĕрентнĕ пулсан, çавăн йышши йăнăш туман пулĕччĕç вĕсем.

Амăшĕ пулнă май, ачисене пăрахакан хĕрарăмсене ăнланмастăп эпĕ. Мана анне тăван килтен тухса кайнă чухне çапла каласа ăсатса ячĕ: «Хĕрĕм, пурнăçра мĕнле йывăр пулсан та, темле асап килсе çапсан та, хăвăн çине алă ан хур, çак тĕнчере аçупа аннӳ пурри çинчен ан ман. Тĕрĕс-тĕкел çаврăнса çит тăван киле. Эпир сана яланах хаваспа кĕтсе илĕпĕр, сан асапна çурмалла пайлăпăр». Анне сăмахĕсене эпĕ паян кунччченех асра тытатăп. Хам хĕре те, ӳссе çитĕнсен, çав сăмахсенех калăп.

Аннен ырă, чунран каланă сăмахĕсем эпĕ аякра пурăннă вăхăтра ман чуна ăшăтса, çутатса тăчĕç. Халĕ те çапла. Пире, хăйсен ачисене, аттепе анне юратса пăхса ӳстерчĕç, пурăнма, ырăна усалтан уйăрма вĕрентрĕç.

Мĕн тери илемлĕ вăл юрату туйăмĕ! Кашни çын, паллах, юратăва хăйне евĕрлĕ ăнланать. Хăйне евĕрлĕ туять те. Юрату туйăмĕ вăл тата хăй тĕрлĕрен: анне-атте патне, аппасемпе пиччесем патне, ача-пăча патне. Анчах та юрату вăл, хăть кам патне пулсан та, çак тĕнчере чи лайăх туйăм. Юратăва ăна сăмахпа каласа кăтартма çук. Тата кирлех-ши? Юратăва чунпа туйса илме, унпа киленме çеç пулать. Юратакан çын вăл çак çут тĕнчере хăйшĕн çеç пурăнмасть. Вăл хăй юратакан çыннăн пурнăçне пуянлатма, хитрелетме тăрăшать. Вăл хăй юратакан çынпа пĕр пулма, пĕр тĕллевпе пурăнма ĕмĕтленет.

Арçынпа хĕрарăм хушшинче çуралнă таса туйăм çинчен те пĕр-ик сăмах каласа хăварас килет манăн. Арçынпа хĕрарăм пĕр-пĕрне юратма пуçласан, пĕр-пĕрин патне ăнтăлаççĕ, пĕр-пĕрне ăнланма тăрăшаççĕ. Тата çакна та асăрхама пулать. Вĕсем пĕр-пĕрне епле çилленсен те, яланах пĕр-пĕрне каçараççĕ. Юнашар чухне хĕрарăмпа арçын телейлĕ, уйрăлсан — тунсăх.

Юрату вăл пирте, çынсенче, темле интуици те çуратать. Эпир тепĕр çыннăн туйăмне сисме пуçлатпăр: кăмăллă-и вăл, е кăмăлсăр. Çынсем вĕсем ытларах чухне эгоистсем. Хăйсен канлĕхĕшĕн, хăйсен ырлăхĕшĕн тăрăшаççĕ. Анчах та юратун пĕр вăрттăнлăх, асамлăх пур. Вăл çынсенче альтуризм туйăмне вăратать, тепĕр çынна хăйне юратнă пек юратма хистет.

Юратса курман çынсем чăн та телейсĕр. Кашни çын çак çут тĕнчене юратма çуралнă. Анчах та юрату мĕн иккенне тата юратма та кашни пĕлмест. Çавăнпа та, ман шутпа, ачасене мĕн пĕчĕкрен пурнăçа, тăван çĕршыва, атте-аннене, пĕр-пĕрне юратма ятарласа вĕрентмелле, çынсем пĕр-пĕрне юратса пурăнсан — усал вăй хăех тĕп пулать.

## Халь çĕмьере кам хуçа?

Кам-ха вăл хальхи хĕрарăм? Мĕнлерех-ши вăл? Мĕнле тĕллевсемпе тата ĕмĕтсемпе пурăнать? Çакăн çинчен шухăшласа пăхас килет. Хам та хĕрарăм пулнă май, çак ыйтусем çине хуравлама мана çăмăлрах пулĕ тетĕп.

Тахçан, темиçе пин çул каялла çĕр çинче матриархат пулнă, теççĕ ученăйсем. Тибет тăвĕсем çинче пурăнакан хăшпĕр йăхсенче хальхи вăхăтра та хĕрарăм пуç пулса тăрать имĕш. Пирĕн çĕршывра çитмĕл тăватă çул хĕрарăма арçынпа пĕр тан тунă, ăна нумай правасем панă. Хĕрарăм халь арçынпа пĕр тан ĕçлеме пултарать, ытларах чухне ĕç укçине те арçынран нумайрах илет. Пуçпа, ăспа ĕçлемелли çĕрте арçынпа хĕрарăм пĕр шайра тăрса, ăмăртса ĕçленине ăнланма пултаратăп-ха эпĕ. Анчах çав самантрах тепĕрне ăнланаймастăп. Ытларах чухне чи йывăр вырăнта, алăпа мĕн те пулин йăтмалла çĕрте вăйпитти арçын мар, хĕрарăм ĕçлет. Сывлăхшăн хăрушă ĕçре те хĕрарăмах тăрмашать. Мĕнле-ха капла? Хĕрарăмăн унăн çемье хуралçи пулмалла, ача-пăча пăхмалла, вĕсене кирлĕ воспитани памалла.

Çемьере те ытларах чухне хĕрарăм пĕтĕм ĕç-пуçа хăй хулпуççийĕ çине тиет. Апат пĕçермелле-и, кĕпе-тумтир çумалла-и, ачи-пăчине пăхмалла-и, кил-çурта тирпейлемелле-и — пĕтĕмпех хĕрарăм тăвать. Эпĕ арçынсене ӳпкелешсе каласшăн мар. Паллах, пур арçын та пĕр пек мар. Нумайăшĕ цĕтĕм ĕçе арăмĕсемпе çурмалла пайлаççĕ: ку хĕрарăм ĕçĕ, ку вара арçыннăн тесе тăмаççĕ. Урай çумалла-и, пĕчĕк ачисене чăпăл тумалла-и, яшка пĕçерме улма шуратмалла-и — веçех тăваççĕ. Арçын çемьере пĕтĕм ĕçе тунине эпĕ çапла ăнланатăп. Арçын ачана амăшĕ мĕн пĕчĕкрен ĕçлеме вĕрентнĕ. Пулас арçынна çемье пурнăçне хăнăхтарса пынă. Хăйне хисеплеме вĕрентнĕ. Паллах, каччă çемьеллĕ пулсан амăшне мĕнле хисепленĕ, ăна пулăшнă, кайран арăмне те çаплах хаклать, унăн çăмăлах мар пурнăçне улăштарма, илемлетме тăрăшать. Амăшпе ашшĕне мĕн ачаран хакласа ӳснĕ çынсем ватлăхра та вĕсене пĕчченлĕхре хăвармаççĕ, инвалидсен çуртне кайса хупмаççĕ, патшалăх майĕ çине ватăсене хăпартса лартмаççĕ. Ватлăха епле пурăнса ирттересси хĕрарăмран пĕтĕмпех хăйĕнчен килет.

Халь çемьере кам хуçа-ши? Хĕрарăм е арçын? Паллах, хĕрарăм. Хальхи вăхăтра арçынсем ĕлĕкхисем мар çав. Вĕсем хаваспах хăйсен мĕнпур проблемисене хĕрарăм çине тиеççĕ. Ытларах чухне çири тумтире те вĕсене хĕрарăм илсе парать.

Арçынсем çапла пулнишĕн эпĕ хĕрарăмсене хăйсене айăпласшăн. Эпир хамăрах арçынсене иртĕхтерсе яратпăр. Вĕсене юрас тесе, вĕсен кăмăлне каяс тесе, вĕсене хамăра качча илтерес тесе тем тума та хатĕр вĕсемшĕн. Арçынсем вара ырăпа таврăнччĕ хăть. Çук çав, вĕсем пуç тăрринех хăпарса лараççĕ. Арçынпа пĕр тан ĕçре ĕçлетĕн, унтан магазинсем тăрăх чупса хăшкăлатăн, кайран вара тата газ е электроплита умĕнче ташлатăн. Ăçта ĕнтĕ унта хăв çинчен кăштах та пулсан шутлама, пĕр пилĕк минут та пулсан куçкĕски умĕнче ларса хăвна йĕркене кĕртме. Качча кайман хĕрарăмпа çемьеллĕ пулнă хĕрарăма пĕрре пăхсах уйăрса илме пулать. Пĕччен пурăнакан хĕрарăм яланах илемлĕ тумлă, пит-куçа сăрласа илемлетме те манмасть, пуç çинче килĕшӳллĕ прическа. Пĕччен пурăнакан хĕрарăм патне хăть хăш вăхăтра пырса кĕрсен те, ăна лăпăс-лăпăс çӳренине асăрхамастăн. Качча кайнă хĕрарăм вара упăшки умĕнче çĕтĕк-çурăк халатпах, тураса якатман çӳçпуçпах çӳреме вăтанмасть. Нумайăшĕ хăйсем çине ала сулаççĕ. «Килте апла та юрĕ-ха»,— теççĕ.

Мĕнпе улшăнса тăрать-ха хальхи хĕрарăм ĕлĕкхинчен? Кĕнекесенче вуласа çакна пĕлме пулать: ĕлĕк хĕрарăмсем сăпайлăрах, вăтанчăклăрах пулнă. Хальхи хĕрарăмсем ытларах чухне намăс-симĕс мĕн иккенне те маннă, пĕлмеççĕ те. Нумайăшĕ арçынпа пĕр тан эрех ĕçет, усал сăмахсемпе вăрçать, пирус туртать. Ку темех мар-ха. Чи малтан кашни хĕрарăм хăйне сиен кӳрет. Хальхи вăхăтри хĕрарăмсем ним те мар тепĕр çемьене аркатаççĕ, ачасене самантрах ашшĕсĕр тăратса хăвараççĕ. Кăна та ăнланма пулать. Юрату вăл хăрушă япала. Пĕр-пĕрне юратакан арçынпа хĕрарăм темле май шыраса тупса та пĕрле пулма тăрăшаççĕ. Анчах та, ман шутпа, арçын тепĕр хĕрарăма килĕштернĕшĕн хĕрарăм хăй çеç айăплă. Хамăра кăштах хаклама пĕлес пулать. Чи хăрушши вăл хĕрарăмшăн — вăл хăйĕн çутçанталăк панă тивлечĕсене манни. Хĕрарăма çутçанталăк çак çĕр çине амăш пулма çуратнă. Чăнах та ĕнтĕ, амăшĕ пулаççĕ-ха хĕрсем. Анчах вĕсенчен хăшпĕрисем хăйсем пурнăç панă, кун çути кăтартнă пепкисене е вĕлереççĕ, е ача çуртне

кайса параççĕ, патшалăх пăхса çитĕнтерессе шанаççĕ. Çак çĕр çине килнĕ ачасене чи малтан амăш кулли, амăш ачашлăхĕ, черченлĕхĕ, ăнланăвĕ кирлĕ, кайран вара пĕтĕмпех ытти. Хальхи вăхăтри хĕрарăмăн тата шарм тени çукка. Шарм сăмах вăл — пĕр хĕрарăм тепĕр хĕрарăмран хăйнеевĕрлĕхпе уйрăлса тăнине, хăйне ыттисенчен урăхларах тыткаланине, сăмахланине, тумланнине пĕлтерет. Анчах сехечĕ-сехечĕпе магазинсенче черетре тăнă хыççăн е фермăсенче тислĕк кăларнă хыççăн унта шарм çинчен çеç мар, тем çинчен те манса каятăн.

Урам тăрăх пилĕк е вунă пачкă вермишель мекеçленсе йатнă чухне нимĕн те интереслентермест. Пуçра пĕр шухăш çеç: хăвăртрах киле çитсе ӳкесчĕ. Тата çитменнине санран кашни тĕл пулакан: вермишель ăçтан туянтăр тесе ыйтсан, çынна хирĕç йăл кулса, ырă сăмах хушас вырăнне, ăна ăçта та пулсан аяккарах кай-ха тесе калас килнĕ самантра ăçта ĕнтĕ шарм çинчен шутлама.

Хĕрарăм çавăн чухне çеç чăн-чăн хĕрарăм пулать, хăçан магазинта хăйне килĕшекен япалана черетсĕр, çапăçмасăр, харкашмасăр туянать. Хăçан унăн мĕнпур проблемисене арçын хăй çине илет, унăн пурнăçне сăмахпа çеç мар, хут çине çырса хунă саккунсемпе те мар, чăн-чăн ĕçĕпе çăмăллатать, хĕрарăма хăйĕнчен те çӳлĕрех хаклама пуçлать.

## Вăл вулкан пек...

Кĕвĕçӳ арçынпа арçын хушшинче, хĕрарăмпа хĕрарăм, хĕрарăмпа арçын тата ачапа ача хушшинче çуралма пултарать. Пĕрисенче çак туйăм вăйлăрах, теприсенче вара вăйсăртарах. Хăшпĕрисенче вăл çуллахи ачаш çумăр пек. Çуса иртет те, лăпланать, нумайăшĕшĕн вара кĕвĕçӳ чăн-чăн инкек пулса тăрать. Вăл вулкан пек, тапса тăракан вĕри лава йĕри-таврана веçех мĕнле çунтарса анать, кĕвĕçӳ те çыннăн чунне çапла çунтарать.

...Студенткăччĕ эпĕ ун чухне, историпе филологи факультетĕнче вĕренеттĕм. Общежитири пӳлĕмсенче вырăн пулманнипе пире, темиçе хĕре, çемьеллисене уйăрса панă пĕр пӳлĕме вырнаçтарчĕç. Çав этажрах университетра вĕрентекен çамрăк преподавательсем те пурччĕ. Калаçма юратнăран-ши, часах эпĕ вĕсемпе паллашрăм, унтан туслашрăм. Пуринчен ытла мана пĕр хĕр-преподавательница кăмăла каятчĕ. Яштака пӳллĕ, сăнĕ-пичĕ хӳхĕм. «Пĕр кашăк шывпа çăтса ямалла»,— теççĕ ун пекки çинчен. Тата çитменнине питĕ ăслăччĕ хăй, нумай вулатчĕ. Алли-ури çыпăçуллăччĕ. Çăм çиппинчен кофтăсем, кĕпесем, джемперсем çыхатчĕ. Хам каччă пулнă пулсан, пĕр сăмахсăрах юратса пăрахмалла. Пирĕнпе пĕр этажрах пурăнакан каччă-преподавателе килĕштерсе пăрахрĕ çакскер. Лешĕ те хĕр патне туртăнчĕ, часах иккĕшĕн хушшинче чи таса туйăм, юрату, çуралчĕ. Хĕмленнĕçемĕн хĕмленсе пычĕ вăл. Хĕрпе каччă яланах пĕрлеччĕ. Еплерех асăрханса, çепĕççĕн сыватчĕ каччă хĕре. Ăмсанаттăм вĕсене.

Çапла каччăпа хĕр пĕрлешсе çемье йăвине çавăрас патнех çитрĕç. Анчах та хĕре куç çинчех улăштарчĕç тейĕн. Вăл тăрук каччăна урăх хĕрсемпе хĕрарăмсем çумне хушса кĕвĕçме пуçларĕ. Ку анчах çитместчĕ. Ăна пирĕн умра пĕр вăтанмасăр намăслантаратчĕ. «Эсĕ унта пулнă, çав-çав тĕлте çав хĕрпе калаçнă, тепĕр çĕрте тепринпе сана куртăм»,— тетчĕ. Тен, лешĕ хăй паллакан хĕрсемпе курса калаçнă пулĕ. Эпир, мĕн

тăвас тетĕн, тепĕр çынсемпе хутшăнмасăр пултараймастпăр вĕт-ха. Çынсем хушшинче пурăнатпăр. Тепĕр чухне кун-каçа кампа анчах курса калаçма тивмест пулĕ.

Хĕр вара намăслантарнипе çеç çырлахмарĕ, уҥ хыççăн сыхласа çӳреме пуçларĕ. Каччăна пĕр канăç та памастчĕ. Сисеттĕм: çамрăк арçын хĕртен писе пуçларĕ, унран тарса çӳретчĕ. Каярахпа пачах ятарласа тĕл пулма та пăрахрĕç. Ăнсăртран коридорта курса калаçни çеç... Анчах та вĕсен хутшăнăвĕсем ытла шала кайнăччĕ çав. Хĕр часах амăшĕ пулчĕ, ывăл ача çуратрĕ. Каччи хăй ача ашшĕ пулнине йышăнчĕ. Ачан çуралнă кĕнеки çине хăйĕн хушаматне çырма килĕшрĕ, алимент тӳлерĕ. Хуçалăхра кирлĕ япаласем туянса паратчĕ ывăлĕпе унăн амăшне. Анчах çамрăк хĕрарăма çавах качча илмерĕ.

Пĕр-ик çул каялла ăнсăртран эпĕ çамрăк арçынна урамра куртăм. Калаçса кайрăмăр. Вăл авланнине пĕлтĕм. Арăмĕпе иккĕшĕ ывăл ача çитĕнтереççĕ, иккен. Хăнана чĕнсен, хапăл тусах кĕрсе тухрăм, унăн арăмĕпе паллашрăм. Паллах, сăнĕнчен пăхсан, вăл мана ытлашшипех килĕшсе каймарĕ. Анчах кăмăлĕ вара — пыл та çу. Хăйĕн ачаш сăмахĕсемпех çамрăк арçыннăн пуçне çавăрнă,— вĕçсе иртрĕ шухăш пуçра.

— Эпĕ питĕ телейлĕ,— терĕ сывпуллашнă чухне мана çамрăк арçын. Енчен те леш хĕр-преподавательница хăй вăхăтĕнче кĕвĕçсе пурнăçне хăех аркатман пулсан, тен, çамрăк арçынпа вăл та телейлĕ пурăнĕччĕ. Анчах та чавса çывăх та çыртма çук.

Эпир упăшкапа иксĕмĕр икĕ ача: хĕрпе ывăл çитĕнтеретпĕр. Хĕрĕм пысăк ĕнтĕ, шкулта вĕренет. Ывăлăм вара кăçал çуркунне виçĕ çул тултарать. Çапла пĕррехинче ывăла чĕркуççи çинче сиктерсе, унпа выляса ларattăм. Мĕн тăвас тетĕн, пĕчĕкскерне эпир, хĕрарăмсем, аслисенчен хытăрах юрататпăр çав. Хĕрĕм, диван çинче лараканскер, пирĕн çине пăхрĕ-пăхрĕ те, чăтаймарĕ, персе ячĕ: «Анне, эсĕ мана пĕрре те юратмастăн. Эсĕ Костьăна çеç ялан ачашлатăн». Пуçран çапнă пекех туйăнчĕç мана хĕрĕн сăмахĕсем. «Çук, çук, ун пек ан кала, эпĕ сана та питĕ-питĕ саватăп. Эсир маншăн иксĕр те пĕр тан, мĕншĕн тесен эсир манăн ачасем, маншăн чи хаклă чунсем»,— терĕм эпĕ. Чăнах та, хĕрĕм пирĕн пата пырса сĕртĕнчĕ, пире хăйĕн аллисемпе ыталаса илчĕ. Еплерех савăнăçпа çиçрĕç унăн куçĕсем. Тин çеç шăллĕне ман çумма кĕвĕçнĕскер, вăл самантрах улшăнчĕ.

Тепĕр чухне эпир, аслисем, хамăр сисмесĕрех ачасенче кĕвĕçӳ туйăмĕ амалантаратпăр. Пĕрне ытларах юрататпăр, ытларах пăхатпăр, хитререх тумлантаратпăр, тутлăрах çитерме тăрăшатпăр, теприн çинчен çавăнтах манатпăр. Сисмесĕрех ачасене пĕр-пĕринчен сивĕнтеретпĕр, ăмсану туйăмĕ, курайманлăх çуратаtпăр пĕчĕк чунсенче. Кайран, ӳссе çитсен, вĕсен пурнăçĕ ăнманнинчен мĕн тĕлĕнмелли пултăр. Пĕр çын теприне кĕвĕçнине хамăр ачасене мĕн пĕчĕкрен тĕрĕс воспитани паманнипе çыхăнтарас килет манăн. Кĕвĕçĕве пула мĕн чухлĕ çемье арканать, мĕн чухлĕ çын пурнăçĕ хуçăлать. Хăшпĕр арçынсем арăмĕсем çине кĕвĕçсе алă хураççĕ, вĕсене кун çути кăтартмаççĕ. Çавах нумайрах чухне кĕвĕçĕве пĕтерме пулать. Çыннăн хăйне алла çеç илмелле. Хăв кĕвĕçекен çынпа юнашар ларса уççăн калаçма тăрăшмалла, чун çинче усрамалла мар йывăр шухăшсене. Уçăмлăх, ман шутпа, çынсене пĕр-пĕрне ăнланма пулăшать, кĕвĕçĕве те пĕтерет.

# Хытă чунлă ан пулăр

Эпир, чăвашсем, пире ытти халăхсемпе, хамăрăн Чăвашьене вĕсем пурăнакан çĕршывсемпе танлаштарас пулсан, калама çук илемлĕ тавралăхра пурăнатпăр. Ытарайми Чăваш çĕршывĕ. Куçпа виçсе илейми вĕçĕ-хĕррисĕр уйсем, куçпа пăхса тăранайми мăнаçлă вăрмансем, çĕр тĕпĕнчен тапса тăракан тăрна куçĕ пек тăрă çăлкуçсем, пĕчĕк тата пысăк юханшывсем—пĕтĕмпех пур пирĕн. Çак иксĕлми пуянлăха чăннипех те мухтама пулать. Анчах та çутçанталăк панă пуянлăха эпир сыхлама, упрама пĕлетпĕр-и-ха? Пуянлăхăмăр иксĕлми тетпĕр те, пĕр шелсĕр тăкаклатпăр, салататпăр, пĕтеретпĕр. Йывăççене касатпăр, çĕнĕрен çамрăк хунавсем ĕрчетме ӳркенетпĕр, юханшывсене тислĕк шывĕпе, каяшсемпе варалатпăр, çăлкуçсене тасатмастпăр, уй-хирсене удобренисемпе чыхăнтаратпăр. Çапла хамăра-хамăр ирсĕрле хăтланнипе пирĕн чун та хуралнăçем хуралса, усалланнăçем усалланса пырать. Ара, пирĕн чун епле хăйĕн тасалăхне ан çухаттăр-ха, енчен те эпир, çынсем, хамăра хӳтлĕх паракан çутçанталăка, ырă-сывă пурăнма, кирлĕ чухлĕ апатçимĕç туса илме май паракан çутçанталăка пачах хисеплеместпĕр пулсан, нимĕн вырăнне те хумастпăр пулсан. Тепĕр тесен, çутçанталăк пирĕн анне-çке! Вăл пире, çынсене, çак çĕр-планетăмăр çинче пурăнма çуратса янă. Çутçанталăк вăл анне çеç мар, вăл пирĕн тăван кил те! Пире вара çутçанталăк мĕн чухлĕ ырă тăвать, эпир ун çине çавăн чухлĕ, тен, ытларах та, суратпăр анчах. Ăна хамăр алăпа хамăрах тĕп туса пыратпăр. Мĕншĕн-ха ваттисем каланă ăслă сăмаха манатпăр? «Çăла ан сур, хăвăнах унтан шыв ĕçмелле пулĕ»,— тенĕ вĕсем. Эпир вара пире çутçанталăк хирĕç тавăрасси çинчен пачах манатпăр. Енчен те паян тăван тавралăха пĕр шелсĕр варалама пăрахмасан, тепĕр 50 çултан, тен, маларах та, çĕр çинче этем йăхĕшĕн хăрушлăх сиксе тухма пултарать, сывламалли сывлăш, ĕçмелли шыв тата çимелли апат-çимĕç пĕтет. Пулма пултараймасть тетĕр-и? Ĕненместĕр-и? Сирĕнпе тавлашасшăн мар эпĕ. Пĕр-икĕ тĕслĕх анчах илсе кăтартатăп. Паян кун Атăла юхтарса кăларакан тĕрлĕ шывсен 80 процентне çителĕклĕ таран тасатмаççĕ. Атăлта Менделеев таблицинчи мĕнпур хими элеменчĕсем тенĕ пекех тĕл пулаççĕ. Мĕн калăн, енчен те хуласенчи çăлкуçсенчен юхса тухакан шыва та тухтăрсем вĕретмесĕр ĕçме хушмаççĕ пулсан. Хула тата ял урамĕсенче ӳсекен йывăççене, вĕсене сыхласа хăварма май пур пулсан та, касатпăр. Хулара сывлăш ăçтан таса пултăр ĕнтĕ, енчен те сывлăша тĕрлĕ сĕрĕмрен тасатакан йывăççене тĕп тăватпăр пулсан? Ытларах чухне хурăнсене, çăкасене, йăмрасене тап-таса чунлă ача-пăча куçĕсем умĕнчех касатпăр. Акă, яштака хурăн тин çеç тавралăха илем кӳретчĕ. Темиçе хут пуртăпа сулса ятăмăр та, чунлă пекех ахлатса, хурăн çĕр çине йăванчĕ. Çак чунсăрлăха курса тăракан ача чунĕ епле ан хыттăр, ан çынсăрлантăр. Ача йывăça каснине пĕрре курать, унтан тепре, чунĕ те кашнийĕнчех хытнăçем хытса пырать, усалланнăçем усалланать. Хăй те вара тавралăха савăнтарса ӳсекен йывăç тураттисене пĕр шелсĕр хуçать, ватать, таптать.

Е тепĕр тĕслĕх илер-и? Эпĕ пурăнакан нумай хутлă çурт çырмапа юнашарах вырнаçнă. Çулла хĕвелпе хĕртĕнме кӳршĕ-аршăсемпе çырмана кӳлĕ хĕрне çӳретпĕр. Эх, мăнтарăн, ача-пăчасем, еплерех симĕс

çерем çинче пĕр-пĕринпе тармалла-тытмалла выляççĕ, телейне пытараймасăр, кăмăлĕсене йӳле ярса чупкалаççĕ. Вĕсен савăнăçне курса, ашшĕ-амăшĕ те телейлĕ. Анчах та юлашки вăхăтра çав çырма тимĕр гаражсемпе тулса ларчĕ. Вĕсен йĕри-тавра тимĕр татăксем, кирпĕч ванчăкĕсем, бензин кӳлленчĕкĕсем... Сип-симĕс курăка таптаса пĕтерчĕç. Унта канма çӳрекен ачасен чунĕсем анчах мар, aслисен чунĕсем те улшăнчĕç. Хамăр хушăра тепĕр чухне тарăхса калаçатпăр. Калаçма калаçатпăр та-ха, анчах та калаçнипех нимĕн те улăштараймастпăр. Ют çĕр-шывсенче гаражсене çын курман çĕре, çурт айĕсене, вырнаçтарнă. Кун пек туни пур енчен те илемлĕрех, тăван тавралăх илемлĕхне те сыхласа хăварма пулать. Мĕншĕн-ха эпир, чăвашсем, ют çĕршыв çыннисенчен хамăра-хамăр урăхларах тытма тăрăшатпăр. Эпир вĕсенчен пĕрре те кая мар-çке! Пирĕн чун та вĕсенчен нимĕнпех те уйрăлса тăмасть вĕт-ха.

## Тискерлĕх. Мĕнрен килет вăл?

Манăн чуна хумхатакан ыйтăва хускатас килет. Чун тасалăхĕн тепĕр енĕ çинчен — тискерлĕх çинчен — пулĕ сăмахăм. Эпир пурăнакан саманара çак сăмаха пирĕн хамăрăн лексикăран кăларса пăрахмалла та-ха, анчах та халлĕхе ниепле те тискерлĕх сăмаха манăçа кăлараймастпăр çав.

...Тăван яла, аттепе аннене курма кайрăм. Тахçанах пулманччĕ килте. Мĕн тăвас тетĕн, халь хамăн çемье, ĕçрен те пушанса часах каяймăн хуларан.

Хавaслă пулчĕ тĕлпулу: аттепе анне кăмăл тусах кĕтсе илчĕç. Килти хыпарсемпе паллашнă хыççăн, ял пурнăçĕ çине куçрăмăр. Кӳршĕ-аршăсем, пĕлĕшсем, тăвансем, тантăшсем, еплерех пурăнни те интереслĕ. Çич ют мар-çке. Ача чухне пĕрле выляса ӳснĕ, хăнана çӳренĕ пĕр-пĕрин патне. Çапла. Пурнăçăмри чи лайăх таса пулăмсем халĕ те асрах. Пĕр класра вĕреннĕ тантăшăмсенчен чылайăшĕ ялта юлнă, çемьеллĕ пулнă, ача-пăча çитĕнтереççĕ. Вĕсем çинчен пĕлнĕ пĕр-икĕ сăмах чуна ăшăтать. Анчах калаçу хальхинче пачах урăхла пуçланчĕ, чи усал хыпартан. Аннен кашни сăмахĕ чуна çӳçентерчĕ. Акă мĕн пĕлтерчĕ вăл мана.

Темиçе кун каялла çеç манпа пĕр класра вĕреннĕ каччӑн асламăшне тискеррĕн вĕлернĕ. Эп астăвасса, çирĕп карчăкчĕ-ха вăл. Малти касра пĕчченех пурăнатчĕ. Юнашар ялта пурăнакан хĕрĕпе мăнукĕсем ăна хуçалăхне тытса пыма пулăшатчĕç, час-часах килсе çӳретчĕç. Самаях пурăнатчĕ пуль-ха ачисемпе, мăнукĕсене савăнтарса, сарăмсăррăн вилмен пулсан.

Çурçĕр çитеспе, ял тутлă ыйха путсан, карчăк пурăнакан çуртăн чӳречинчен çамрăк арçын пырса шакканă. Лешĕ, пĕр хăрамасăрах уçса кĕртнĕ касхи хăнана. Ялта пурте пĕр-пĕрне пĕлеççĕ, паллаççĕ. Паллах, пĕлекен çынран хăрамастăн ĕнтĕ. Вăл усал шухăшсемпе çӳремест тет-пĕр-çке.

Ватă çынпа çамрăк арçын хушшинче мĕнлерех калаçу пулса иртнĕ — пĕлместпĕр. Тен, лешĕ эрех ыйтнă-ши е укçа? Анчах икĕ çын чиперех калаçса татăлайман пулмалла. Вара çамрăк арçын хăйĕн тискер ĕçне тунă та килне тухса шăваннă.

Ирхине карчăк патне кӳршĕ хĕрарăмĕ пынă. Ун куçĕ умне калама çук хăрушă ӳкерчĕк тухса тăнă. Пӳртре, урайĕнче, çурри таран çунса

кайнă карчăк выртнă. Çурт темле майпа çунса кайман, пушар тухман.

Медэкспертиза результачĕсем çынсен çӳç-пуçне вирелле тăратнă, чĕрисене çĕçĕпе каснă пек ыраттарнă: çамрăк арçын карчăка малтан мăшкăлланă, унтан ӳпкерен, сулахай енчен, çĕçĕпе чиксе амантнă, юлашкинчен, вăл вилменнине кура, мăйĕнчен кантăрапа пăвса вĕлернĕ. Çамрăк арçын, преступлени йĕрĕсем ан юлччĕр тесе, карчăка çунтарса яма шут тытнă. Краççын сапнă та чĕртсе янă.

Районтан килнĕ следовательсем тĕплĕн ĕçленĕ хыççăн преступника тупнă. Халь вăл суд пуласса кĕтет. Вăл тĕрмере 10 е 15 çул ларса тухĕ-ха, анчах карчăкăн пурнăçне каялла тавăраймăн.

Вунвиçĕ çул каялла шкулта пĕр класра вĕреннĕ Юра асăма килчĕ — аннерен çак хыпара илтнĕ хыççăн.

Хитре, яштака пӳллĕ каччăччĕ вăл. Шкул пĕтернĕ хыççăн вăл ялтах пурăнчĕ пĕр вăхăт. Пĕррехинче пĕр ушкăн çамрăк каччă — вĕсен хушшинче Юра та пулнă — усал шухăш тытнă, пĕччен пурăнакан ватă кинемей патне çĕмĕрсе кĕрсе ăна мăшкăлланă, пурлăхне вăрланă, юлашкинчен вĕлерсе хăварнă. Çамрăксене пурне те тытрĕç, тĕрмене хупрĕç. Юра тĕрмере ларнă вăхăтра ялта ăнсăртран унăн йăмăкĕпе тĕл пултăм, калаçса кайрăмăр. Хĕр мана пиччĕшĕ хăй ухмахланнишĕн ӳкĕннине пĕлтерчĕ, ирĕке тухсан пурнăçне пачах çĕнĕлле йĕркелесе ярасси çинчен ĕмĕтленет терĕ.

Эпĕ сире икĕ тĕслĕх çеç илсе кăтартрăм. Пĕтĕм республикипе илес пулсан, çак тискер ĕçĕн шучĕ самаях чылай.

Юлашки çулсенче, çамрăксем ĕç шыраса хуласене тухса кайнине пула, ялта пĕччен пурăнакан ватă çынсем нумайланчĕç. Хăнăхнă ĕнтĕ вĕсем пĕчченлĕхе. Юрать, пахчисем пур. Хăйсене валли çĕрулми, кишĕр, купăста, сухан туса илеççĕ. Ăста ĕнтĕ çав ватă çынсен ытлашши укçатенкĕ. Тен, пур пулсан та, 200—300 тенкĕрен ытларах мар, вĕсем те — вилсен пытарма хатĕрлесе хунисем.

Анчах темшĕн-çке халăхра халап çӳрет: эй, вăл хыт кукарăн укçи пинĕ-пинĕпе. Çакна, паллах, çамрăксем те илтеççĕ. Пуçĕсене картса хураççĕ. Хальхи çамрăксем ытлашши ĕçлесшĕн мар çав. Çитменнине, çамрăклах эрех тутине пĕлеççĕ. Эрех ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ çын вара тем тума та пултарать. Кам патне кайма пулать? Паллах, ватă кинеми патне. Вăйпитти арçынна вăл хирĕç тăраймасть. Ăна пӳрнепе тĕкĕн, кайса та ӳкет.

Çамрăк каччăсен пуçĕнче ытларах чухне çил вылять, çавăнпа та хăйсене вĕсем ытла та çăмăлттайла, шухă тытаççĕ. Пĕр-пĕрин умĕнче каппайланаççĕ, пĕр-пĕрине хĕтĕртеççĕ.

Паллах, çамрăксем хăйсем те айăплă-ха ĕнтĕ. Анчах та шухăшласа пăхар-ха? Вĕсем çеç-ши? Ялта пурнăç чăнах та питĕ кичем. Киносăр пуçне тата мĕн пур-ши ялти çамрăксем валли. Тата пур ялта та клубсенче кино кăтартмаççĕ. Клубсем хупă.

Ачасене мĕн пĕчĕкрен тĕрĕс мар воспитани параççĕ. Хамах калама пултаратăп; пире шкулта пĕр тĕрлĕ вĕрентетчĕç, пурнăçра вара пачах урăхла килсе тухрĕ. Апла пулсан, кирлех-ши ачасен çирĕпленсе çитмен чунĕсене амантма? Тĕрĕссине каласа вĕрентсен, вĕсем чылай йăнăша туман пулĕччĕç, пурăнма та çăмăлрах пулĕччĕ.

Ман шутпа, шкулсенче ятарласа ачасене пĕр-пĕрне хисеплеме, юратма, ваттисене пулăшма, çине тăрсах вĕрентмелле. Кашни кун, уроксем пуçланас умĕн, кĕлĕ вуланă евĕр, çыннăн çак тĕнчере пурнăçран хакли

урăх нимĕн те çук тесе калаттармалла. Тепĕр çыннăн пурнăçне хаклама вĕрентмелле. Тен, ун чухне çамрăк арçынсем хĕрачасене, хĕрарăмсене тата ватă карчăксене пусмăрлама пăрахĕç. Эпир те вара усал, чуна çӳçентерекен хыпарсем илтме пăрахăпăр. Атьăр-ха, пурте пĕрле шухăшласа пăхар çакăн çинчен?

## Ан пул эс мĕскĕн

Чун тасалăхĕ çинчен пыракан калаçăва малалла тăсăпăр. Калаçу çын кăмăлĕн пĕр енĕ çинчен пырĕ. Мĕн-ши вăл мĕскĕнлĕх тата юлашки вăхăтра эпир, çынсем, ытлашши мĕскĕнленсе кайрăмăр-ши? Кама тата мĕнле çынна мĕскĕн теççĕ-ха? Мĕскĕн çын вăл хăюсăр, тепĕр çынна пăхăнакан, унпа хирĕçеймен, ăна итлекен çын. Мĕскĕн çын вăл — яланах хуйхăллă, хурлăхлă, телейсĕр, ответлăха туйман çын. Унăн, ман шутпа, пĕр чĕптĕм мăнаçлăх та çук. Пирĕн хушăра мĕскĕн çынсен шучĕ ӳснĕçем ӳссе пырать. Пирте, кашнийĕшĕнчех мĕскĕнлĕх пур. Çакна эпĕ пĕрре анчах мар асăрханă. Тĕслĕхсемпе çирĕплетсе парас тетĕп.

Эпĕ ялта çитĕнсе ӳснĕ, çавăнпа та ял пурнăçне самаях лайăх пĕлетĕп. Ялта пурăнакан çынсен пурнăçне ал тупанĕ çинче выртакан пĕрпĕр япалапа танлаштарма пулать: пĕтĕмпех куç умĕнче. Кампа-кампа пĕрле ларса ĕçнĕ, кама-кама ĕçре пулăшнă, кам-кама хĕнесе пĕтернĕ.

Кун каçа темле хыпар та илтме тата тĕпчеме пулать. Тĕлĕнсе çеç ĕлкĕр. Пирĕнпе юнашар пурăнакан кӳршĕ-аршăсем ытларах пĕр-пĕринпе тӳпелешме, хирĕçме, çапăçма юрататчĕç. Пĕр урам çуйхашу, кăшкăрашу, ылхану тăратчĕ вара пĕр хушă вĕсем лăпланиччен. Хуппа-хушша кĕме юратсах кайманран-ши, кӳршĕсен хушшине никам та кĕместчĕ. Упăшки ал айне мĕн лекнĕ çавăнпа хĕнетчĕ арăмне. Леш, мăнтарăн, кайран çынсен куçĕ умне курăнма вăтанса тата кăвакартса пĕтернĕ пичĕ-куçĕ сипленессе кĕтсе, эрни-эрнипе урама тухмастчĕ. Мĕскĕн çынсем теес килет ман вĕсене. Мĕскĕн чунлă çын анчах хăйĕн çине алă çĕклеме ирĕк парать, хăйне çын тĕсĕнчен тухиччен хĕнеттерет. Ăçта-ши вăл мăнаçлăх тени? Чăн та, хăвна хисеплеместĕн пулсан, тепĕр çын ăçтан хисеплетĕр ĕнтĕ сана. Хăвна ху ватма ирĕк паратăн пулсан, ăçтан ан хĕнетчĕр сана. Хăçан, хăш вăхăтра çухатать-ши çын хăйĕнчи çынлăха? Пĕлместĕп çав эпĕ. Пĕлнĕ пулсан, тухтăр пек, рецепт çеç çырса панă пулăттăм. Çынсене вĕсен çынлăхне тупма пулăшаттăм. Хĕнеттерекенни мĕскĕн терĕм. Хĕнекенни вара? Вăл тата та мĕскĕнрех пулĕ. Çиллине ниçта шăнăçтараймасăр тепĕр çын çине тăкать. Хĕнесе чунне лăплантарать.

Çак тарана çитсе те эпĕ ниепле те арçын хĕрарăм çине мĕншĕн алă çĕкленине ăнланаймастăп. Арçынна ăна çутçанталăк вăй панă. Анчах та çав вăя ăна хĕрарăма çапма мар, хĕрарăма хӳтĕлеме, сыхлама панă вĕт-ха. Хĕрарăма вара çутçанталăк черченлĕх, ачашлăх, çепĕçлĕх панă. Хĕрарăм вăл арçын умĕнче хăйĕн вăйсăрлăхĕпе илемлĕ те. Анчах çакна нумай чухне арçынсем ăнланмаççĕ тата ăнланма та тăрăшмаççĕ те. Мĕн тăвайăн, енчен те пирĕн обществăра, хĕрарăма арçынпа пĕр тан туса хурса, ун çине мĕнпур йывăрлăха тиерĕç пулсан. Арçын ачасене мĕн пĕчĕкрен хĕрачана хисеплеме çителĕклĕ вĕрентместпĕр çав эпир. Çавăнпа та вĕсенче чунсăрлăх аталанать.

Таса чуна эпир хамăр алăпа хамăрах мĕскĕнлĕх вăррипе акатпăр.

Кайран, арçын ачасем ӳссе çитĕнсен, вĕсем хĕрачасене мăшкăлласси те çакăнпа çыхăнман-ши? Ачасем вĕсем ытларах чухне пиртен, аслисенчен, тĕслĕх илсе аталанаççĕ. Енчен те пĕчĕкскерсем ашшĕ-амăшĕ харкашса пурăннине курса ӳсеççĕ пулсан, вĕсен психикинче «çапла пурăнни тĕрĕс» текен суя ăнлану тăрса юлать. Ача вăл аслисенчен элеклеме, улталама, кĕвĕçме, усал сăмах сарма вĕренет. Çын тепĕр çынна улталани, элек сарни, кĕвĕçни, ман шутпа, каллех мĕскĕнлĕх. Мĕскĕн чунлă çын çеç тепĕр çынна йăпăлтатма, тепĕр çынна куç кĕрет мухтама пултарать. Вăл пăрăнса утсанах, ун çинчен усал сăмахсем калама вăтанмасть. Мĕскĕн чунлă çын çеç, пĕр çăвартан тенĕ пек сурса пурăнакансен хушшине кĕрсе, вĕсене вăрçтарса ярать, çапăçтарать.

Мĕскĕн чунлă çын çеç пĕр-пĕрне килĕштерекен çынсене кураймасть, телейлĕ пурăнакан çынсене кĕвĕçет. Мĕскĕн чунлă çын çеç пĕр тĕрлĕ шухăшлать, ĕçпе вара тепĕр тĕрлĕ тăвать. Хăйĕнчен хăй мĕнле йĕрĕнмест-ши мĕскĕн чунлă çын? Мĕскĕн чунлă çын вăл тепĕр çынна ыр тăвасшăн тăрăшмасть, вăл тепĕр çынна усал тăвассишĕн çеç çунса, ĕмĕтленсе çӳрет.

Мĕскĕн чунлă çын пуçлăха ларсан вара — пĕтрĕ пуç! Хăйĕнчен те, влаçпа аслăрах çынсем умĕнче чаплă пулас тесе, вăл тем тума та хатĕр, темле çынсăрлăха кĕрет. Хăйĕнчен ăслăрах çынсене элек сарса варалать, темле май тупса ĕçрен кăларса ярать. Мĕскĕн чунлă çынсем ертсе пыракан коллективсенче харкашу, хирĕçӳ, пĕр-пĕрне ура хуни, такăнтарни. Пĕр-пĕрне хисеплесси асра та çук.

Тепĕр чухне манра çакăн йышши шухăш-кăмăл та çуралать: мĕскĕн чунлă çынсем тăрăшнипех начар пурнăç патне пырса çитмерĕмĕр-ши эпир? Тен, эпĕ йăнăшатăп. Эсир тата хăвăр мĕнле шухăшлатăр, тăвансем? Килĕшетĕр-и е килĕшместĕр- манпа?

## Чун тасалăхĕ çинчен

Манăн сирĕнпе, тăвансем, чун тасалăхĕ çинчен калаçас килет. Мĕн-ха вăл чун? Мĕнле виçепе виçме пулать-ши ăна? Тата мĕнпе танлаштарма пулать-ши таса чуна? Вĕсен кайăкпа-ши? Е шурă-шурă тап-таса юрпа витĕннĕ вĕçĕ-хĕррисĕр уйпа-ши? Тен, чун тасалăхĕ ирпе ӳкнĕ çап-çутă сывлăм пĕрчипе тан?

Тата мĕнпе уйрăлса тăрать-ха чăваш çыннин чунĕ ытти халăх çыннин чунĕнчен? Пысăкрах-ши вăл е пĕчĕкрех? Мĕн тĕслĕ-ши вăл пирĕн чун? Кăваккăн-симĕссĕн ялтăраса çиçет-ши, е пирĕн ăшра юхакан юн пек хĕп-хĕрлĕ-ши, пăхсан — куçа йăмăхтарать-ши?

Пирĕн çĕр-планетăмăр çинче этем йăхĕ пуçланса кайнăранпа çак çăмăлах мар ыйтусен тупсăмĕ çине пин-пин çын хурав шыранă. Шыраççĕ те. Тĕнчере тĕрлĕ-тĕрлĕ тĕн юхăмĕсем çуралнă, аталаннă. Кашни чуна хăйнеевĕрлĕ ăнлантарса пама тăрăшать.

Индуссен тĕнĕ вĕрентнĕ тăрăх, çыннăн чунĕ пĕр япаларан тепĕрне куçать иккен: малтан вăл чечекре пурăннă пулсан, кайран чечек шансан, кайăка куçать, кайăкран — çынна, çынран каллех йывăçа. Çапла ĕмĕр-ĕмĕр пырать.

Христиансен тĕнĕ вара çапла вĕрентет: вилсен этемĕн ӳт-пĕвĕ çĕрсе тăпра пулать, чунĕ унăн нихçан та пĕтмест, чунĕ ку тĕнчерен леш тĕнчене çеç куçса каять, унта вăл ĕмĕр-ĕмĕр пурăнать, тет.

Эпĕ чуна хам куçпа курман. Анчах чун тасалăхĕ çинчен сăмах-юмах пуçарсан, çапла калама пултаратăп. Чун тасалăхĕ вăл — çын тепĕр çынна хăйне юратнă пек юратни, ăна йывăрлăхра пулăшни, атте-аннене хисеплени, ваттисене сума суни. Тата ытти те.

Çут тĕнчери мĕн пур тĕн те тепĕр çынна юратма, ырă ĕçсем тума анчах вĕрентет. Хăть мĕнле кĕлле илсен те, çакна асăрхама пулать: çын çинчен усал, ирсĕр сăмахсем ан калаçăр, çын çинчен элек ан сарăр, ан суйăр, ан ӳркенĕр, ан кахалланăр, ан вăрлăр, çынна йывăр килсен — пулăшăр, нушипе усă ан курăр, çын япалине ан хапсăнăр, мăнкăмăлланса, чапланса, мухтанса ан çӳрĕр, çынна ан ылханăр, çынна ан вĕлерĕр.

Çынна ан вĕлерĕр, тенĕрен ман çавăн пек шухăш çуралчĕ. Чăн та, мĕнле çын тепĕр çын пурнăçĕ çине алă çĕклеме пултарать-ха? Эсĕ тепĕр çынна пурнăç паман вĕт-ха. Апла пулсан, эсĕ каялла илме пултараймастăн. Тепĕр çын та сан пекех çак тĕнчере пурăнса курасшăн. Мĕнле йывăр пулсан та. Çавах пурнăçран хакли çыннăн урăх нимĕн те çук. Мĕн чухлĕ пурăнма пӳрнĕ çынна, çавăн чухлĕ вăл пурăнĕ.

Хăçан, хăш самантра çын чунĕ вараланма, çылăха кĕме пуçлать-ши? Пĕчĕк ача чунĕ çылăхсăр тенине пĕрре анчах мар илтнĕ-ха эпĕ.

Тин çуралнă ача чунĕ чăнах та тап-таса-ши? Вăл тин çеç çут тĕнчене килнĕ, çак тĕнчен саккунĕсемпе пурăнса курман, апла пулсан, ача чунĕ тап-таса теме те пултаратпăр эпир. Пирĕн çĕршывра тухса тăракан «Америка» ятлă журналăн пĕр номерне вулама лекрĕ мана. Ученăйтухтăрсем, тĕпчесе, акă мĕн пĕлнĕ: ача амăшĕн варĕнче аталаннă вăхăтрах çут тĕнчере мĕн пулса иртнине амăшĕн куçĕпе курать иккен. Амăшĕ мĕн туять, ача та çавнах туять. Амăшĕ улталанă вăхăтра, çын çинчен усал каланă вăхăтра ача пуçĕнче амăш паракан информаци çыранса юлать, амăшпе пĕрле ачи те улталать, усал калаçать, имĕш.

Пирĕн çĕршывра çитмĕл тăватă çул каялла революци пулса иртрĕ. Чухăнсем влаçа алла илчĕç, пуянсене тĕп турĕç. Пирĕн патшалăх чиркĕве хирĕç, тĕне хирĕç кĕрешме пуçларĕ: мăн асатттесемпе асаннесем çĕнĕлле пурăнма пуçларĕç. Анчах та вĕсем тунă çĕнĕ тĕнчере те усалли ырринчен нумайрах. Çак çĕнĕ тĕнчере те чун тасалăхне сыхласа хăвараймарĕç.

Революциччен шкулсенче уроксем пуçланиччен пачăшкăсем турă законĕсене вĕрентнĕ, ачасене ырăпа усал пĕр-пĕринчен мĕнпе уйрăлса тăни çинчен каласа панă. Эпĕ сире турра ĕненĕр тесе чĕнсе каласшăн мар. Çакна çеç палăртасшăн: пин-пин çул хушши этемлĕх шыраса тупнă, туптанă, закона кĕртнĕ йăласене тĕп тунипе кăна лайăх пурнăç патне пырса çитеймĕн. Библие те, тĕне вĕрентекен кĕнеке тесе, шута хума пăрахрăмăр. Анчах та Библире турă çинчен анчах çырнă-и-ха? Библи вăл — халăх ăсĕн пуххи. Библи çынна ятлă-сумлă, чыслă, хиселлĕ пулма вĕрентет. Хамăрăн ăс çитмесен, тен, Библире пухнă ăслă шухăшсемпе усă курса, уроксем пуçланас умĕн ачасене пĕр-пĕрне хисеплеме, пĕр-пĕрне юратма чĕнсе каламалла. Кашни кун чун темипе пĕр пилĕк минутлăх та пулсан урок ирттерсен, ачасен пуçĕсенче, ăс-тăнĕнче пĕр чĕптĕм те пулсан çĕнĕ вĕрентӳ юлатех. Çакă вăл чун тасалăхĕ патне тунă пĕрремĕш утăм пулĕччĕ.

Çутă тĕнчере пурăнакан чĕрчунсенчен пĕр çын анчах чун тасалăхĕ, чыс, йĕркелĕх мĕн иккенне пĕлет. Çав пĕлӳпе вăл ытти чĕрчунсенчен уйрăлса тăрать те. Çын вăл — усал-и, ырă-и — чунлă. Пĕр-пĕр ĕç тусан

яланах хăйне-хăй ăшра итлесе пăхатех: тĕрĕс турăм-ши? тесе. Чунра кăштах та пулсан намăс туйăмĕ, айăп çуралсан, хăй йăнăш тунине ăнланатех. Çын мĕнле хура, усал чунлă пулсан та, вăл çынах вĕт-ха.

# Мĕн вăл телей?..

Пĕчĕк чух аннерен ваттисен ăслă сăмахне пĕрре анчах мар илтнĕччĕ эпĕ. Аннене çав сăмаха амăшĕ каланă: «Хитре пулса çураличчен — телейлĕ пулса çурал». Пĕчĕк чухне çак ваттисен ăсларан та ăслă сăмахне чĕрем патне ытлах илмерĕм. Ăшăмра килĕшместĕмччĕ те. Хĕрача тенин хитре пулас килнĕ пуль çав. Халĕ вара, пурнăç тутине активсе курнă хыççăн, пурнăçăмра хурапа шурра, ырăпа усала пĕрре çеç мар тĕл пулнă хыççăн, çав сăмахсен хакне ăнланса илтĕм.

«Хитре пулса çураличчен — телейлĕ пулса çурал». Мĕн тери вăйлă каланă. Хитрелĕх — вăхăтлăх япала. Çулсем иртнĕ май, вăл пĕтет. Çыннăн ӳчĕ, сăн-пичĕ пĕркеленет, ватăлать. Хитрелĕх вăл — черчен чечек пек. Сивĕ çил вĕрсенех чечек шанать, пуçне пĕкет. Хитрелĕхе çынна çутçанталăк парать. Телее вара кашни çын хăй аллипе хăй тупать. Хитре пулса çуралайманшăн пĕр çутçанталăк анчах айăплă. Телейлĕ пулайманшăн вара — çын ытларах чухне хăй айăплă. Паллах, хитрелĕх çинчен таранрах тата тĕплĕнрех калаçас пулсан, çакна калас килет манăн: лайăхрах сăнаса, тинкерсе пăхсан, кирек мĕнле хитресĕрлĕхре те хăйне евĕрлĕ хитрелĕх тупма пулать. Çутçанталăкăн хăйĕн законĕсем, гармонийĕ пур.

Ман шутпа, телей вăл — калама çук ырă туйăм. Ăна пĕр юратупа çеç танлаштарма пулать пулĕ. Çын телее пĕтĕм чунĕпе, юратăва мĕнле туять, çавăн пек туйса ăнкартать. Пĕр çын çеç хăйне хăй ăшра «эпĕ питĕ телейлĕ» теме пултарать.

Çакă çутă тĕнчере ырă-сывă, тĕреклĕ, ăслă-тăнлă çуралтăн пулсан, хăвна телейлĕ теме пултаратăн. Санпа юнашар сана ăнланакан, йывăр самантра хавхалантарса тăракан çын пур пулсан — эсĕ каллех телейлĕ, тăванăм. Мĕншĕн тесен эсĕ пĕччен мар. Хăть мĕн кала та, пĕчченлĕхрен хăрушă япала çук пулĕ. Пĕччен çын — тăлăх турат пек. Ватă аттеанне чиперех пурăнни, тăван килте сана хапăл туса йышăнни — каллех телей. Мĕншĕн тесен тĕнчере мĕн чухлĕ çын атте-анне юратăвĕсĕр, тăван кил мĕн иккенне пĕлмесĕр çуралса çитĕнеççĕ. Ача-пăчашăн телей вăл — лайăх паллă илни те. Еплерех савăнăçпа çиççе пĕлтерет вăл амăшне е ашшĕне «пиллĕк» паллă илни çинчен. Ачан çак самантра татах та лайăхрах вĕренес хавхалану туйăмĕ вăйланать.

Çемьере савнă мăшăрпа килĕштерсе пурăнни те телей. Ку вăл, ман шутпа, чи пысăк телей пулĕ. «Çав çын телейлĕ, кам килте телейлĕ»,— тенĕ вырăссен классикĕ Л. Н. Толстой. Питĕ тĕрĕс. Çемьере йĕркеллĕ пулсан, ĕçре те пĕтĕмпех ăнать. Çын ĕçре те пĕтĕм вăйне парса тăрăшать. Мĕн тăвас тетĕн, пурте çемье çавăраймаççĕ. Савăнпа та çыннăн чуна парса ĕçлемелли ĕç пулсан та, вăл питĕ телейлĕ. Çын ĕç урлă хăйĕн тĕллевĕсене, ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртет. Мĕн тери савăнать ун чухне вăл. Калатпăр, поэтшăн чаплă сăвă çырни пысăк телей. Телейлĕ

çын яланах ырă кăмăллă, хаваслă пит-куçлă, савăнăçлă. Çав çын хăйпе юнашар пурăнакансене те телейлĕ тума тăрăшать.

Телее кашни çын хăйне евĕр ăнланать, терĕм. Ырă, таса чунлă çынпа хура, усал чунлă çын пĕр пек ăнланаççĕ теме çук пулĕ. Таса чунлă çын вăл ырă ĕç тусан хăйне телейлĕ тесе шутлать. Хура чунлă çын вара усал ĕç тусан хăйне телейлĕ, тет. Пĕр-пĕр вăрра илер-и? Вăрă янтине хапсăнать, ĕçлемесĕрех лайăх пурăнасшăн. Пĕр-пĕр çыннăн укçине кĕсйинчен е сумкинчен кăларса илсен тата вăрланă укçан хисепĕ пысăк пулсан, мĕн тери савăнать вăл. Тепĕр çын çав вăхăтра калама çук пысăк хуйха ӳкни уншăн ним те мар. Нумай укçа вăрланăскер, вăл çак самантра телейлĕ.

Çын тени ялан, кашни кун е кашни сехетре хăйне телейлĕ тесе шутлама пултарать-ши? Хăшĕ-пĕрисем, тен, пултараççĕ те пулĕ. Анчах та яланах телейлĕ çын телей хакне çухатать. Телей мĕн иккенне ăнланма пăрахать. Çын телее хаклама пĕлтĕр тесе, çутçанталăк çын валли хуйхă та шыраса тупнă. Енчен те санăн паян ытлах ăнмарĕ пулсан, ытлашши ан кулян, тăванăм. Пурнăçра яланах эпир тăвас тенĕ пек пулмасть çав. Пуçна çеç ан ус, саншăн та телейлĕ самант çитетех. Ĕнен. Ĕненӳсĕр — çын малашлăхсăр.

## Пурнăçпа вилĕм...

Пурнăçпа вилĕм... Çак икĕ ăнлав ĕмĕр-ĕмĕр алла-аллăн тытăнса утаççĕ. Ăçта пурнăç — унта вилĕм, ăçта вилĕм — унта пурнăç. Çак вĕçĕхĕррисĕр çут уçлăхра мĕн пур япала: чĕрĕ-и вăл, е чĕрĕ мар, хăçан та пулсан ĕмĕрне вĕçлет те, пĕр формăран тепĕр формăна куçать.

Çын пурнăçĕ çĕр çинче — хăналăх. Мĕн вăл 70 е 150 çул ĕмĕрлĕхпе танлаштарсан, çут çăлтăр пек мĕлтлетсе илетпĕр те тĕпсĕр уçлăхра — таврăнайми сӳнетпĕр, яланлăхах çухалатпăр. Пĕр шутласан, ытла та хăрушă! Эпĕ халь пурăнатăп-ха, ĕмĕтленетĕп, çемье йăвине çавăрнă, ачамсене çын тăвас тесе тăрăшатăп, кӳрентерсен — хурланатăп, сив сăмахпа вăрçсан — макăратăп, тус-тантăшсене курсан — савăнатăп, юрату чĕремре хĕмленнĕ чух — юрататăп. Эпĕ хама çак çĕр çинче пурăннине кашни самантра туйса тăратăп, чунăм кашни çеккунтра тенĕ пек вылянса, улшăнса тăрать. Пурăннăçем пурăнас килет, малашлăхра — мĕн чухлĕ пурнăçламалли ĕмĕт-шухăш, тĕллев, тĕрлĕ плансем. Ăна та туйса ĕлкĕрес килет, кăна та. Пурнăç сĕткенĕ ӳтĕмре юхнине туйса тăнлатăп.

Эпĕ халлĕхе пур-ха, анчах та хăçан та пулсан, вăхăтăм çитсен, эпĕ урăх пулмастăп, нихăçан та пулмастăп. Атте-аннепе чуна пусарса калаçаймăп, тус-тантăшсемпе пĕр сĕтел хушшинче ларса пурнăç çинчен шăкăлтатса калаçса лараймăп, ачамсене ыталаса чуптăваймăп, тĕнче илемĕпе киленеймĕп. Нимĕн те тăваймăн; пурнăçăн хăйĕн саккунĕсем, пĕр çын та ăна халлĕхе улăштарайман, улăштараймĕ те...

Çут тĕнчере пĕрре пурăннине ытла та лайăх пĕлетпĕр пулсан та, чылай чухне пĕртен-пĕр пурнăçăмăра çынла пурăнса иртерме хал çитерейместпĕр. Пĕртен-пĕр пурнăçа кирлĕ пек хаклаймастпăр. Ним çукран, кăмăл япăх тесе, тепĕр çынна кӳрентеретпĕр, намăс-симĕсе çухатса ĕçке еретпĕр, тепĕр çын пурнăçне тататпăр, кӳршĕ-аршăсемпе харкашатпăр, усал сăмахсемпе пĕр-пĕрне вăрçатпăр, сивлетпĕр. Курайман-

лăха чĕремĕрсенче хуçаланма ирĕк паратпăр. Эпĕ кам тесе, тепĕрне, вăл пиртен пин хут чаплăрах пулсан та, хурлатпăр. Ытларах чух хамăра çеç юрататпăр, хамăра çеç çын вырăнне хуратпăр. Мухтанине тата еплерех юрататпăр. Кашни пурăнакан çыннăн хăйĕн шайĕ пур. Ăс кĕнĕçем, пурнăç иртнĕçем, çав шай улшăнать, анлăланать, пĕр шит çӳлерех хăпарать. Çутçанталăкĕ çавнашкал туса янă пире: хăшне-пĕрне ытла та ăслă тунă, хăшне вара катăкрах çуратса янă. Ăслисем хăйсем хыççăн пĕтĕм çынлăх усă куракан ăс хăвараççĕ, катăккисем вара — нимĕн те.

Çын пурăнать пурăнать те — вилет. Пĕр енчен шутласан, вилĕм хăрушă. Ку вăл, эсĕ хăв çут тĕнчене паян-ыран уйрăлассине пĕлсе тăнă чухне, асаплă чир шăм-шакка хуçнă вăхăтра, юрату тимĕр шăлĕсемпе чуна, ӳт-пĕве чăмланă самантра. Тепĕр енчен пăхсан — пĕрре те хăрушă мар вилме. Ку вăл — вилĕм ăнсăртран килсен, хăв вилнине ăнланса та ĕлкĕрейместĕн пулсан. Тăруках вилме. чăнах та питĕ лайăх пуль. Пĕр-пĕр чĕрĕлейми чирпе çулталăкĕ-çулталăкĕпе асапланса выртсан, çăмăлах мар пуль çав. Çын чунĕ еплерех чăтать-ши çав вăхăтра. Пин-пин тĕрлĕ хăрушă шухăш явăнать пуль çын пуçĕнче. Кашни кун вилĕме кĕтетĕн: паянхи кун юлашки, кун иртсен, тепĕр кун çинчен кулянатăн. Вилĕм çинчен, хăçан килесси çинчен пĕлменни пин хут, миллион хут лайăхрах. Пурăнан ун çинчен шутламасăр, вăл хăйех килет вăхăт çитсен, хăйпе пĕрле ĕмĕрлĕхе илсе каять.

Çĕр çинче кашни кун тенĕ пек пиншер çын вилет. Палламан çын вилĕмĕ пирĕншĕн темех мар, усал хыпара ытлах чун патне илместпĕр. Тата кашниййĕншĕн хурланса та пĕтерейменĕ — пурăннин тĕллевĕ те пĕтет. Юрать, пире çутçанталăк кашни япаланах манмалла туса янă. Унсăрăн пирĕн пурнăç чĕр тамăк пулса тăнă пулĕччĕ. Туйăмсем арканаççĕ-и, самолетсем ӳксе ванаççĕ-и, пăрахутсем путаççĕ-и, ах, ах, текелетпĕр, пĕр вăхăтрах миçе çын пĕр харăс вилĕмне тупнă тесе хаш! сывлатпăр та, кăштахран манатпăр та. Мĕншĕн тесен çак асап пирĕн асап мар, мĕншĕн тесен ют çын вилĕмĕ пире нихăш енчен те пырса çапмасть.

Енчен те çывăх çыннăмăрсем, тусăмăрсем, кӳршĕ-аршăсем вилнине пĕлсен, чăнласах хыт хурланатпăр. Атте-аннепе, хамăр çуратса янă ачамăрсемпе, ачаран выляса ӳснĕ тусăмăрсемпе, савнă мăшăрăмăрсемпе ĕмĕрлĕхе уйрăлма питĕ хăрушă! Чи юратнă çынсем-çке вĕсем пирĕншĕн — атте-анне пурнăç панă, хăйсем çиес çăкăрне пире çитернĕ, ватăла пуçланă атте-аннемĕр кун çулĕ паян-ыранах ан татăлтăрччĕ тесе, ăшăмăрта, турра ĕненместпĕр пулсан та, кĕл тăватпăр. Вĕсене хамăрпа юнашар ытларах пурăнтарас килет-çке. Кил ăшши, кил çути — пирĕн аттеанне. Вĕсем пурăннă чухне — чун яланах тулса тăрать, темĕнле асамлă çутă шалтан ăшăтать чун-чĕрене. Тата кам çавăн пек йăпатать, ăнланать пире çак пурнăçра. Никам та.

Ачамăрсене хамăр пурнăç панă та. паллах, вĕсен эпир пурнăçлайман, тăвайман ĕçсене, малалла тăсмалла. Ку вăл — çутçанталăкăн тĕп законĕ. Анчах та пурнăçра яланах эпир тăвас тенĕ пек пулмасть çав. нумай япала пирĕнтен килмест. Тĕрлĕ майсем пĕрле килсе тухнине пула ачамăрсене те хамăр алăпа пытарма тӳр килет.

Пĕлекен, паллакан çывăх çынна юлашки хут инçе çула, леш тĕнчене ăсатма, калама çук йывăр. Тăванпа туспа яланлăхах уйрăлнă чухне чĕре çинче арман чулĕ пысăккăш хурлăх выртать. Масар çинче. шурă тирпе витĕннĕ вилнĕ çын тупăкĕ умĕнче тăнă чухне çак пулса иртекен самант-

сăр пуçне пире урăх нимĕн те интереслентермест, хумхантармасть. Куçăмăрсенчен шăпăртатса юхакан куççуль те чуна пусăнтармасть, çăмăллатаймасть. Ăнланса илетĕн: ху çак тĕнчере никам та мар иккенне, эсĕ кунта часах, çак шăтăкра ĕмĕрлĕхе канăçна тупатăн.

Пурăннă вăхăтра пурнăçа хаклама пĕлместпĕр çав. Таврăнайми самантсене усăсăр пурăнса ирттеретпĕр: ĕçке еретпĕр, çапкаланса çӳретпĕр, ăшă вырăн ăшĕнче рехетленетпĕр, юлхавланатпăр, ӳркенетпĕр.

Тупăк умĕнче тăнă чух яланах шутлатăн: мĕншĕн çын сывă, чĕрĕ чух унпа кăмăллăрах пулман-ши тесе. Час-часах тĕл пулса калаçма вăхăт тупайманшăн хăвна вăрçатăн, çын пурăннă чух мĕншĕн-ха ăна ытларах ырă тума тăрăшман тесе. Вилнĕ çынна пуриншĕн те каçаратăн, вăл сана темле кӳрентернĕ, темле усал тунă пулсан та. Юлашки хут сăмахсем каланă чухне чи лайăххисене, чи кăмăллисене тупатăн. Те йăли çавнашкал, те вилĕм хăй веçех каçарттарма, çырлахтарма хушать. Çапла, вилĕм веçех хăй картне лартать. Вилĕм умĕнче эпир пурте пĕр тан: пуян-и, хытă-и, хыт кукар-и, нишлĕ чунлă-и, юлашки кĕпӳне хывса пама хатĕр чунлă-и. Вилĕм никамран та ыйтса тăмасть: санăн çак тĕнче илемĕпе кăштах киленсе юлас килет-и тесе. Вăл хăйĕн ĕçне тăвать, пурнăçа татать.

Эпир пурăннă чухне тăрăшсах мул пухатпăр, сунтăхсене хупайми тултаратпăр. Пĕри-тепĕрне пуянрах пурăннишĕн кĕвĕçетпĕр, ăмсанатпăр, сивлетпĕр. Ылтăншăн, укçашăн хапсăнатпăр, кĕтесĕмĕрсене мул сĕтĕретпĕр. Пĕтĕм пурнăç тĕллевĕ те — япала пухасси. Чи интереслĕ кĕнеке те, кинофильм та, апат-çимĕç те кирлĕ мар, хамăр çине ылтăн çакса пултăр, укçа шучĕ куçа илĕрттĕр. Шутласа пăхăр-ха, леш тĕнчене хăвăрпа пĕрле нимĕн те илсе каяймăр, веçех ку тĕнчере юлать. Паллах, ачамăрсем валли юлать-ха. Çавах пĕтĕм пурнăçа пустуй çунтарни хăрушă.

Çĕр планета çинче пирĕн умĕн миçе пин, миллион çын пурăнман пуль. Нумайăшĕ, паллах, хăйсен ĕçĕсемпе ячĕсене ĕмĕрлĕхе хăварнă, ытларахăшĕ вара — те пулнă, те çук. Пурăннă пурăннă та — вилнĕ. Анчах çав çынсем те çĕр çинче йĕр хăварнах. Эпир çак самантра мĕнле пурăннине, çак тĕнчене мĕнле ăнланнинче, курнинче, тупнинче вĕсен тӳпи те пур. Наукăпа прогресс ăнлавĕ çӳлти шайра, чунпа улшăннă-ши эпир. Ытлашшипех мар пуль çав. Çав-çавах пĕр-пĕрне ăнланмастпăр, ăнланасшăн та мар. Пурне те пĕр виçепе виçме кирлĕ мар: çĕр çын — çĕр тĕрлĕ шухăш. Анчах çавă вăл тепĕр çынна вĕлерме хушмасть вĕт-ха. Темĕнле лару-тăрура та пĕр чĕлхе тупма пулать.

Питĕ сахал пурăнатпăр вĕт-ха çак çĕр çинче. Пурнăçа çынла пурăнса ирттересчĕ. Эпир вилсен, пирĕн хыççăн çутă йĕр юлтăр, пире усалпа мар, ырăпа çеç асăнса илччĕр.

## Пирĕн пуласлăх — хамăр алăра

Пирĕн пуласлăх çинчен шухăшласа каятăп та тепĕр чухне, ума хăрушă ӳкерчĕк тухса тăрать: заводсемпе фабрикăсен мăрйисенчен мăкăрланса тухакан хуп-хура тĕтĕм кăвак тӳпене карса илнĕ, сарă хĕвел пайăркисем вĕсен витĕр аран-аран çĕре ачашлаççĕ; пĕчĕк юханшывсем типсе ларнă, пысăккисем вара йăм-симĕс тĕслĕ шыв куракĕпе утиял евĕр витĕннĕ — усал шăршă таврана саралать; çынсем, таса сывлăш

çитменнипе, противогазсем тăхăннă, ĕçмелли шыва ăçтан илмеллине пĕлменнипе аптăраса çитнĕ; ӳсентăрансем хăрса пĕтнĕ, çĕр пичĕ çуркаланса, типсе кайнă; ăçта пăхан, унта — чăлах, сусăр, нĕрсĕр сăнлă ача-пăча чупса çӳрет. Сире хăрушă-и? Мана хăрушă! Кун пекки нихăçан та пулма пултараймасть тетĕр-и? Эпĕ вара сире пулма пултарать, тесе калама хăятăп. Эпĕ сăнласа кăтартнă тискер ӳкерчĕкĕн пĕчĕк паллисемпе пайĕсене паянах кашни утăмра тенĕ пекех тĕл пулма, асăрхама пулать. Эпир вара, çак ӳкерчĕке курма хăнăхса çитнĕскерсем, ун çине алă сулатпăр çеç. Çакăн пек тимсĕрлĕхрен хăрушши тата мĕн пур-ши?

Ытараймн чăваш çĕршывĕ, тăван енĕм, тăван тавралăхăм! Куçпа висçе илейми уйсем, вăрмансем, юханшывсем! Мĕн тăватпăр-ха эпир, çынсем, сирĕнпе! Пĕрре те шеллеместпĕр-çке сире. Çак пуянлăх иксĕлми тесе, ирсĕрле, путсĕрле хăтланатпăр. Хуласенчи промышленность предприятийĕсем, производство пĕрлешĕвĕсем сывлăша таса мар каяшсемпе вараласçĕ, сывлăш тĕрлĕ сиеплĕ хутшăнусемпе йывăрланса ырать, сĕрĕм пăчлантарать: ӳсентăрана йĕркеллĕ ӳсме памасть.

Мăрьесенчен тухакан тĕтĕм вăрмана та чылай сиен кӳрет. Йывăçсем, тĕмсем чирлеççĕ. Кайăксем те сивĕнеççĕ унран. Вăрмана уçăлма е кăмпа-мăйăр, çырла татма кайсан шăпчăксен, кукуксен, улатаккасен илемлĕ сассисене кам анчах итлесе савăнмасть-ши? Кăлтăр-кăлтăр, ку-ку, чи-чи, тăк-тăк — йĕри-тавра чуна илĕртекен сасăсем янăраççĕ, вулăсем хушшине вĕçсе, çулçăсем айне тарса пытанаççĕ; пĕр самантлăха та шăпланмасть вăрман — хăйĕн юррипе вăл хăпартланса юрлать. «Эй, кукук, тата миçе çул çак çут тĕнчере пурăнмалла манăн, каласам?» — хавхаланса кăшкăрнă сасă ăпланса çеç ĕлкĕрет, кукук нумай кĕттермест, хăйĕн хуравне часах парать.

Юханшывсемпе мĕн тăватпăр тата? Вĕсем те типсе, ăшăхлансах пыраççĕ, вĕсенче пулăсем вилсе пĕте пуçларĕç. Юратнă Пăла тăрăхĕ халь — чунăм тăвăллăхĕ. Тахçан тăрна куçĕ пек тăп-тăрăччĕ унăн шывĕ, пăхсан, тĕпĕнче выртакан чул татăкĕсем курăнатчĕç, шăнкăр-шăнкăр юхăмĕ асăмрах, пулăсем вĕлт! вĕлт! шыв çийĕн сикетчĕç. Çыран хĕррипе, хумсем çийĕн ача чухне çара уран ушкăнпа таса шывра чăлтăр-чăлтăр!, чĕппĕр! чĕппĕр! сирпĕтсе чупаттăмăр. Халĕ вара, тăван енĕме атте-аннене курма таврăнсан, Пăла çумĕпе иртсе кайнă чухне, кăмăл пăтранса килет, чун хĕссе ыратма пуçлать. Мĕскĕнленсе юлчĕ вăл. Çĕр хăйĕн хуп-хура куççулĕпе, хăйне хăй шеллесе, йĕрсе выртнăн туйăнать мана.

Атăл çумĕнче вырнаçнă Шурă Шупашкар хулинче пурăнатăп халĕ. Эй, хăватлă Атăл-атте, ăçта сан мăнаçлăху, илемлĕхӳ?!

Ăçта сан чапу?! Сана мухтаса, ырласа чăваш поэчĕсем çеç мар, ирçе, тутар, мари, вырăс поэчĕсем те темĕн тĕрлĕ сăвă çырнă, композиторсем юрă хывнă. Темиçе ĕмĕр каяллах сан яту пĕтĕм тĕнчипе янăрама пуçланă. Халĕ вара сана бетон плитасемпе тыткăнланă, юхăмна, ГЭСсем туса чарса лартнă, хăвпа ху тасалса ĕлкĕрейместĕн. Минераллă тата органикăллă удобренисене, промышленноçра усă курнă таса мар шĕвексене Атăла тĕлсĕр юхтараççĕ, çыран хĕррисене çӳп-çап куписем тăкса тултарнă. Заводсемпе фабрикăсенчи тасатакан сооруженисем юсавсăр пулнă пирки пулса иртет çакă. Кун пек ирсĕрле хăтлансан ĕçмелли шыва ăçтан илме пуçлăпăр-ши? Атăла юхса кĕрекен пĕчĕк юханшывсене тислĕк шывĕпе вараласа пĕтернĕ.

Паянхи пекех астăватăп-ха: темиçе çул каялла, Атăл çинче ГЭС тума пуçласан, кăшкăрашнине... Шупашкарăн хăйĕн тинĕс пулать, Шу-

пашкара çĕр çинче иккĕмĕш Венеци тăватпăр, имĕш. Шупашкар тинĕсĕнче паян вар-хырăм чирне ертекен мĕн тĕрлĕ микроб анчах çук пулĕ— кĕшĕлтетеççĕ çеç. Шыва кĕме те чарчĕç-вĕт пĕр вăхăтра. Пулă тытнинете мана пуçларăмăр.

Уйсем тата еплерех пурăнаççĕ, сывлаççĕ? Республикăри колхозсемпе совхозсенче хими промышленноçĕ туса кăларакан удобренисемпе, гербицидпа — тĕрлĕ имçамсемпе анлăн усă кураççĕ, вĕсене уйсене хăрушсăрлăха пăхăнмасăр, чуххăм салатаççĕ, тирпейсĕр упраççĕ. Çĕр пичĕ çурхи шывпа тулса ларсан, çӳл тӳпере самолетсем вĕçме пуçлаççĕ, вĕсем хирсем çине удобренисем сапаççĕ. Удобренисен пысăк пайĕ вара шывпа ирĕлсе, çĕр айне лекет, унта юхакан шывсене ĕçме юрăхсăр туса хурать. Çырмасем çуллен ишĕлсе, пулăхлă çĕре гектарĕ-гектарĕпе пĕтереççĕ. Наркăмăшлă удобренисемпе тĕрĕс мар усă курнипе çăлсемпе юханшывсене сиен кӳретпĕр. Кайран вара çав шыва ĕçсе эпир хамăр сывлăха пăсатпăр. Мĕнле-ха пĕр пĕчĕк чăнлăха ниепле те ăнланасшăн мар эпир, çынсем, çутçанталăк тасалăхĕшĕн кĕрешни — хамăр сывлăхшăн, хамăр пуласлăхшăн тăрăшни пулать-çке-ха.

Тĕштырă тата çимĕçсен тухăçлăхне ӳстерессишĕн вăй хураççĕ колхозсемпе совхозсен пуçлăхĕсем. Уй-хирте хими наркăмăшĕпе тулăхлă туса илнĕ çимĕçе хамăрах çиетпĕр, хамăр организма сиенлетпĕр. Халлĕхе удобрени сапнă вăхăтра çимĕçсен тата тĕштырăсен тухăçне ӳстерессине кăна пăхаççĕ. Пирĕн мăн асаттесемпе асаннесем хими удобренийĕ мĕн иккенне те пĕлмен вĕт-ха, çапах та тулăх тырпул туса илнĕ, çирĕп сывлăхлă пулнă. Кислотлă çумăрсем çуни, тăван тавралăха наркăмăшлă хими шĕвекĕсемпе варалани пирĕн ума хăрушлăхсем çеç кăларса тăратаççĕ.

Юлашки çулсенче экологи ыйтăвне çивĕчрен те çивĕчрех хускатма тытăнчĕç. Кая юлмарăмăр-ши эпир? 40—50 çул каяллах çутçанталăка тимлĕрех сыхлама пуçламалла пулнă. Çук çав, тавралăха упрассишĕн ун чухне никам та тăрăшман. Тăрăшнисем тупăнсан та вĕсен çăварĕсене хупласа лартнă.

Республикăра ертсе пыракансем экологи ыйтăвĕсене шута илсех кайман. Çавăнпа та министерствăсемпе ведомствăсем сывлăхшăн сиенлĕ предприятисем уçса тултарни çине куç айĕн çеç пăхнă.

Мĕнех тăвайăн халĕ, ун чухне самани урăх пулнă. Паян вара экологи сăмах пирĕн лексикăра час-часах тĕл пулма пуçларĕ. Анчах çутçанталăк калаçнипе лайăхланмасть çав. Тавралăх тасалăхĕшĕн вăхăта, вăй-хала шеллемесĕр, кунран-кун кĕрешмелле. Кашни çыннăн, тăван тавралăх илемлĕ те пуян пултăр, йывăç-курăкпа ешертĕр тесе, ӳркенмесĕр, хастар ĕçлемелле. Пирĕн, чăвашсен, ырă йăласем сахал мар. Пĕрне кăна илер. Кашни çемье ывăл çуралсан — юман, хĕр çуралсан — хурăн лартсан, çĕр пичĕ илемленсе кайĕччĕ. Çутçанталăк илемне упрасси, унăн пуянлăхне сыхласа хăварасси — кашни çыннăн тивĕçĕ.

Кая юлтăмăр пулсан та, республикăра çутçанталăка сыхлас енĕпе ĕçлекен государство комитетне йĕркелерĕç. Наукăпа техника информацийĕ тата экологи пропаганди пайĕнче ĕçлетĕп эпĕ. Тинех пăр тапранчĕ, тинех чĕресенче шанчăк хĕлхемĕ чĕрĕлчĕ. Тинех эпир хамăр çутçанталăкăн пĕр пайĕ пулнине ăнланса илтĕмĕр, хамăр пурнăç Çĕр-планета сывлăхлă пулнинчен килнине туйса илтĕмĕр.

Хăшĕ-пĕрисем мана ӳпкелеме хăтланаççĕ: «Мĕн тума кирлĕ вăл сирĕн комитет? Сиртен пĕр пуслăх усă та çук. Çутçанталăк мĕнле пулнă,

çавăн пекех япăхланса пырать»,— теççĕ.

Мĕнех хуравлам-ши эпĕ çак ўпкев çине?

Тавралăха варалакан предприятисемпе производство пĕрлешĕвĕсене, вĕсем çутçанталăка ытларах сиен кўме пуçласанах, вăхăтлăха чарса лартмалли, уйрăм руководительсене штраф тўлеттермелли йĕркесем пур пирĕн Комитетăн. Анчах законсем çинчен çакна та каласа хăварас килет. Вĕсен хăшпĕр параграфĕсем ытла та çемçе-çке. Пĕр-пĕр руководительшăн хăй кĕсйинчен 100 тенкĕ кăларса тўлесси ним те мар. Тепĕр куннех ĕç укçи ведомоçĕнче ун хушамачĕ умне 200, 300 тенкĕ премиукçи çыранса ларĕ.

Ют çĕршывсенче тахçанах кирлĕ мар хутсене, кĕленче савăт-сапасене, çĕтĕк-çурăксене, пластмасса пухмалли контейнерсене хуласенче кашни çурт умне лартса тухнă. Усă курнă япаласен каяшĕсене иккĕмĕш пурнăç параççĕ. Çак ыйтăва татса парасси пирки пирĕн комитет пуçлăхĕсем те çанă тавăрсах тăрăшаççĕ. Хула йĕри-тавра, çырма-çатрасенче купаланса выртакан çўп-çапсем çутçанталăка ан варалаччăр тесе те нумай вăй хуратпăр. Çак каяшсене ятарлă вырăнта пуçтарасси пирки те çивĕч ыйту хускататпăр. Анчах та пирĕн алăра юмахри асамлă патак çук-çке. Кашни кун, пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн туса пыратпăр эпир хамăр ĕçсене. Вĕсен çитĕнĕвĕ каярахпа уççăн курăнĕ.

Çĕр-планетăмăр — пирĕн тăван кил. Ун çинче пурăнма çутçанталăк пире, çынсене, пĕтĕм майсем туса панă. Ку чăнлăха пĕлмен çын та çук пулĕ.

Арçынсене çутçанталăк вăй панă, вĕсен ытларах аркатас туйăм, пире — хĕрарăмсене çепĕçлĕх, ачашлăх. Эпир, хĕрарăмсем, ăрăва тăсакансем, эпир, хĕрарăмсем — аннесем. Эпир, хĕрарăмсем, çак çут тĕнчене ача-пăча çуратма килнĕскерсем, çемье кăвайтне сыхлакансем. Апла пулсан, хамăр хĕрарăм пулнине асра тытса, çутçанталăка ачамăрсем валли упраса хăварар, паянхи пуянлăха перекетлер. Ыран кая юлăпăр.

Эпĕ — икĕ ача амăшĕ. Вĕсене телейлĕ çитĕнтерес килет манăн. Пепкемсен пуласлăхĕшĕн, вĕсем валли çутçанталăк илемĕпе тасалăхне сыхласа хăварассишĕн ырми-канми вăй хурса ĕçлĕп. Пирĕн пуласлăх — хамăр алăра иккенне манмăп.

1280